24-7

Ванеркке.

ЙУТ ҪӖЛХЕСЕНҪЕН ХУТШӐННӐ СӐМАХСЕН ПӖҪӖК

# СЛОВАРӖ

ҪӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ

Шупашкар 1924

Ванеркке.

ЙУТ ЂĔЛХЕСЕНЂЕН ХУТШĂННĂ СĂМАХСЕН ПĔЂĔК

# СЛОВАРĔ

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

Шупашкар 1924

Чувашоблит № 406 Печ. 6 000 эк.

г. Чебоксары, Типография Чувашиздата.

# УМӐНХИ САМАХ.

Словар историйӗ акӑ мӗлле: 1922 ҫул ҫуркунне Опӗҫтӑвком пур уҫрештенисенҫе те хутсене ҫӑвашла ҫырмалла тесе текрет кӑларнӑҫҫӗ. Вӑл текрета ӗҫе кӳртсе пымашкӑн Тытӑм Пайӗ ҫумӗнҫе, Олҫутпайӗнҫе, тата ҫӑваш писсаттӗлӗсен ушкӑнӗнҫе Комиҫҫисем тунӑҫҫӗ. Ҫав Комиҫҫисенҫе виҫҫӗшӗнҫе те епӗ ӗҫлекелерӗм. Ӗҫлеме пуҫласанах Комиҫҫисем пур те ҫӑваш ҫӗлхинҫе кӗнҫелер терминӗсем ҫукки ҫине такӑнса ӳкрӗҫ, кайран-кайран ним тӑваймасӑрах саланса кайрӗҫ. Ҫав вӑхӑтра епӗ, кӗнҫелер ӗҫне пӑртак пӗлекенскер, кӗнҫелерте кирлӗ терминсене ҫырса тӯхрӑм. Вӗсенҫен хӑшне ҫӑвашла куҫарма май килҫӗ, куҫарма май килменнисене алхвавит тӑрӑх ҫырса тухрӑм: манӑн 600 сӑмаха йахӑн пухӑнҫӗ. Анҫах кайарах, ҫӑваш ҫӗлхине реалисатсилес ӗҫ сӳнсе ларсан, манӑн терминсем никама та кирлӗ пулмарӗҫ. Йут ҫӗлхесенҫен хутшӑннӑ сӑмахсен словарӗ кунран-кунах кирлӗрех пулса пынине курса, „Канаш“ хаҫат ҫинҫе те йут сӑмахсем нумайланса пынине кура, епӗ, пуҫлавӑ ӗҫрен мӗн те пулин тухӗ тесе, словар ҫырма тытӑнтӑм. Словарсем ҫырас ӗҫ—манӑн ӗҫ мар вӑл, ку таранҫҫен епӗ унпек ӗҫпе ҫыхланман ҫавӑнпа ҫак словарӑн айӑпӗсене нумайах шырама кирлӗ мар пулӗ тетӗп: вӗсем вӗреннӗ ҫынсепе ахалех нумайӑн курӑнса тӑраҫҫӗ пулӗ. Кирлӗ сӑмахсем кӗмесӗр йулни, кирлӗмаррисем кӗрсе выртни те пури тен; мушӗт хӑшне-хӑшне ытла та йумӑш ӑнлантарса панӑ пулӗ—пӗлместӗп.

Хам ĕçре епĕ пуринҫен ытла икĕ словарпа усă куртăм: пĕри „Популярный политический словарь" Волина, Кривцова и др., тепĕри— „новый карманный словарь иностранных слов" Майданова и Рыбакова. Ытти словарсем (Гавкина, Ефремова, Павленкова) сайра хутра анҫах кирлĕ пулкаларĕç.

Малтан епĕ словар çине политтиккă сăмахĕсене анҫах мар, аваллтанпах халăх хушшинҫе çӳрекен сăмахсене те кӳртме шутланăҫҫĕ, кайран вĕсене, ЧУС хушнипе кăларса пăрахмалла пулҫĕ.

Словарăн орхвокрахви" айăпĕсене пĕрне те хам çине илместĕп: епĕ мĕлле çырма хушнă—çавăн пек çырнă.

Ман шугпа çак словар йалти шкултан вĕренсе тухнă çынна хаçатсем, йе урăх кĕнекесем вуланă ҫух питĕ кирлĕ йапала. Малашне çакăн йышши словарсем татах та кăлармалла пулĕ тетĕп, çавăнпа çак словарпа усă куракансене словарăн айăпĕсем çинҫен мана, йе ҫăваш Кĕнеке Уйрăмне (Чувашиздата) пĕлтерме ыйтатăп.

**Ванеркке.**

Шупашкар, Опполитçут.
1924 ç.

## Словар ҫинђи кӗскен кӑтартнӑ сӑмахсем.

| | |
|---|---|
| Анк. | Анкли сӑмахӗ. |
| Ар. Арап | Арап ђӗлхи сӑмахӗ. |
| Крек. | Крек „ „ |
| Кол. | Колланҭи. „ „ |
| Хран. | Хрантсус. „ „ |
| Ит. | Иттаљи. „ „ |
| Кр-лат. | Крекпе Латтин. „ |
| Исп. | Испаљи. „ „ |
| Лат. | Латтин. „ „ |
| Норв. | Норвеки. „ „ |
| Выр. | Вырӑс. „ „ |
| Тур. | Туркӑ. „ „ |
| Тут. | Тутар. „ „ |
| Перс. | Перссен. „ „ |
| Ним. | Нимӗђ. „ „ |
| Йевр. | Йеврей. „ „ |
| Пољ. | Пољак. „ „ |
| Шв. | Шветсен. „ „ |

# АЛХВАВИТ.

**А, У, Ы, Ӑ, Е, Ӳ, И, Ӗ, К, Х, П, Т, Ť, Ђ, Ш, С, Ҫ, Л, Љ, М, Н, Њ, Р, В, Й, О.**

---

## А.

**Аутиттори**—лат.—1) Лексисем вуламалли пӳлӗм; 2) лекси итлекен ҫынсем.

**Акиттаттӑр**—лат.—Акиттатсилекен ҫын.

**Акиттатси**—лат.—Халӑха кирлӗ ӗҫшӗн тӑрӑшша, ҫынсене ҫав ӗҫ май ҫавӑрни; пӗр-пӗр ӗҫе тумашкӑн пур те кар тӑрӑр тесе ђӗнни.

**Акӗнт**—лат.—Кам та пулин хушнипе, йе шаннипе ӗҫлекен ҫын.

**Аккатеми**—крек.— 1) Пӗр-пӗр наукӑ ҫинђен ӑрасна вӗрентекен ђӑн аслӑ шкул (искусствӑсен аккатемийӗ, вӑрҫӑ ӗҫне вӗрентекен аккатеми); 2) науккӑна тӗплӗрех пӗлес тесе тунӑ нумай вӗреннӗ ҫынсен ушкӑнӗ.

**Аккатси**—Пахђасене илемлетме лартакан, тӗмӗллӗ ӳсекен йывӑҫ; вӑррисем—вӗтӗ пӑрҫа, ҫулҫисем—пилеш ҫулҫи майлӑ.

**Аккулӑ**—норв.—1) Тинӗсре пурӑнакан, питӗ каскӑн пысӑк пулӑ; 2) ҫын ӗҫӗпе тӑранса пурӑнакан каскӑн пуйансем, пуршуйсем.

**Актă**—лат.—1) Ĕç пулни; 2) пĕр-пĕр ĕç çинђен, куракансем ђăнахта çапла пулђĕ тесе çырнă хут; 3) сут таврашĕнђе—сакконсем, ĕçе кăтартакан хутсем; 4) театтăрта—пйессăн татăклă пайĕ, сыпăкĕ.

**Актси**—лат —Темиçе çын услам курмашкăн пĕрлешшен, пайа кĕнĕ çынсене паракан хут. Алра актси пур çынна ушкăн пухăвĕнђе сасă параççĕ, усламран та пай параççĕ: актси çине миçе пай çырнă çавăнђул. Актсине сутма та, илме те йураŤ.

**Актсис**—лат.—Йутран илсе килмен, хамăр патшалăхрах тăвакан таварсем çине хуракан налок (тапак, спиђкă т. ы.).

**Актсионерлă компањи**—Ĕçе вăйлăлатса йамашкăн темиçе пуйан пĕрле укçа хывса, актсисем кăларса ĕçлекен ушкăн.

**Актŏр**—Театтăрта выљакан; арŤŤис.

**Акçиомă**—крек—Каласа ĕнентермесĕрех тĕрĕсси курăнса тăракан ђăнлăх (пример: пĕр йалтан тепĕр йала тӳртен кайни кирек хăçанта çавраран кайнинђен сывăх).

**Ахтăр**—Мĕн те пулин хăй шухăщласа кăларакан, тăвакан; кĕнекесем çыракан.

**Ахтопиокрахви**—крек— Кам та пулин хăй пурăнăçĕ çинђен тĕпĕйĕрĕпе хăй çырса пани.

**Ахтомат**—крек—1) Никам пулăшмасăр, хăйне-хăйех ĕçлесе тăракан аппарат; 2) шухăшламасăр, çынсем мĕн тунине машшин пек туса тăракан-çын.

**Ахтомопиљ**—кр-лат.—Пенçинлă, йе електриђлă машшинпа (лашасăр) ђупакан урапа.

**Ахтономи**—крек.—Кама та пулин хăш-хăш ĕççене хăй сакконĕпе туса татма панă ирĕк. Р.Х.С.К.Р. вак халăхсен

Оплӑҫӗсене пурне те ҫавӑн пек ирӗк панӑ. Ђӑваш Оплӑҫӗ те ҫавӑн пекех.

**Ахтономлӑ**—Ахтономи панӑ Оплӑҫ, хула, йе уђрештени.

**Ахториттет**—Пӗр-пӗр ӗҫе лайӑх пӗлнипе, йе лайӑх тунипе ђапа тухнӑ ҫыннӑн, йе уђрештенин ђапӗ.

**Ахториттетлӑ**—1) Ӗҫе лайӑх пӗлсе тунипе ђапа тухнӑ ҫын, йе уђрештени; 2) хӑйӗн сӑмахне ыттисене итлеттерсе, вӗсемпе килӗштерме пултаракан; мухтавлӑ.

**Ахрикка**—Ҫӗр-варри типӗсӗн кӑнтӑрла йенђе, Атланттик оккеанӗпе Ивӑи оккеанӗ хушшинђе выртакан маттерик.

**Ахвиш**—хран.—Театтӑрта мӗн кӑтарту пулассине пӗлтерекен хут; урамсенђе ҫынсене курӑнмалла ҫӗре ҫыпӑҫтарассӗ.

**Аппарат**—лат.—Ӗҫе кирлӗ хатӗр, машшин; п а т ш а л ӑ х, й е у ђ р е ш т е н и а п п а р а ђ ӗ—патшалӑх, йе уђрештени ӗҫӗсене туса тӑма кирлӗ ҫынсем, уђрештенисем, йапаласем.

**Аппеттит**—лат.—Апат ҫийес килни, апат лайӑх анни.

**Аппељатси**—лат. Кӗҫӗн уђрештени йышӑннӑ ӗҫе тепӗр хут пӑхса тухас тесе аслӑрах уђрештенине ҫырса пани; пуринђен ытла сут йышӑнӑҫӗсене (постановленисене) аппељатсилессӗ.

**Аппељҫин**—колл.—Ӑшӑ йенђе ҫитӗнекен йӑвӑҫӑн ҫимӗҫӗ: пан улминђен пысӑкрах, арпус йеверлӗ, сар хупӑллӑ, тути—уҫӑ йӳҫенкӗ.

**Аптекка**—крек.—Тӗрлӗ емелсем хатӗрлесе сутакан ҫурт; п у љ н и т с ӑ с е н ђ е—тухтӑр хушнипе емел паракан пӳлӗм.

**Апсурт**—лат.—Тулӑксӑр, пуҫсӗр, никам та ӗненес ҫук сӑмах.

**Апсоҗуттисăм**—лат. Патша аллине ним ҫарусăр ирĕк панă патшалăх йĕрки. Революци пуҫланиҫҫен Раҫҫей ҫавăн пек пулнă.

**Апсоҗутлă**—Ҫарусăр, нимĕнпе танлаштармалла мар.

**Апрел**—лат. Ҫулталăкăн 4-мĕш уйăхĕ—а к а  у й ă х ĕ.

**Апонемент**—хран.—Кĕнеке-хаҫат, йе урăх йапала илсе тăма вăхăтлăха ҫырăнни.

**Апонент**—хран —Кăҫтан та пулин кĕнекесем, хаҫатсем йе урăх йапала вăхăтлăха илсе тăракан ҫын.

**Аттакă**—хран.--Ҫапăҫуна кĕрсе кайни; тăрăнса тăшмансемпе ҫапăҫни.

**Аттаман**—1) Тон Оплăҫĕнҫи касаксен суйласа лартнă пуҫлăхĕсем; 2) вăрă-хурахсен пуҫлăхĕ; 3) пĕр-пĕр ĕҫре, ушкăнра, ертелре пуҫлăх пулса тăракан.

**Аттăм**—крек.—Калама ҫук пĕҫĕккĕ вакланман тĕпренҫĕк. Пур йапала та аттăмсен пухăвĕ пулса тăрать; кашни елементăн хăйĕн ăрасна тĕрлĕ аттăм.

**Аттеис**—крек.—Турра ĕненмен ҫын, аттеисăма хапăл тăвакан.

**Аттеисăм**—крек.—Турра ĕненменни, нимле турă та ҫук тени.

**Атминистраттăр**—лат-—1) Уҫрештени пуҫлăхĕ; 2) правиттĕлствă ĕҫĕсене тытса тăма влаҫ панă ҫын.

**Атминистраттси**—лат.— Уҫрештенисене пăхса тытса тăракан пуҫлăхсем.

**Атмирал**—арап.—1) Тинĕс ҫинҫи ҫарсене пăхса тăракан пуҫлăх; 2) хлотри йанрал.

**Атмосверă**—крек.—Ҫĕре йĕри тавра хупласа тăракан, пур ҫĕрĕ йапала та сывлакан сывлăш: темиҫе тĕрлĕ касран пулса тăрать (кислорот, асот, воторот т. ыт.).

**Атрĕс**—хран.—1) Çырусем çине вĕсем кăçта, кам патне каймаллине çырни; 2) кам та пулин кăçта пурăннине кăтартакан çыру; 3) кама та пулин ђаплă ĕççемшĕн, йе пĕр-пĕр праçнăк йађĕпе ырă сунса паракан хут.

**Атваккат** (ваккат)—лат.—Сутра айăплă çынсене хăтарма тăрăшакан; камшăн та пулин хытă тăрăшакан.

**Асхваљт**—крек— Çĕр смали, çĕртен ђавса кăларакан смала йевĕрлĕ йапала. Асхваљта урамсене йака пулма сараççĕ, пысăк çуртсенђе асхваљтран урайсем те тăваççĕ.

**Астрољӓпи**—крек.—Астрономинђе, йе çĕр виçнĕ çĕрте кĕтессен виçине пăхса пĕлмелли аппарат.

**Астроном**—крек.— Астрономине ăста пĕлекен çын.

**Астрономи**—крек.—Пĕлĕт çинђи йапаласем (çăлтăрсем, планетсем т. ыт.) çинђен вĕрентекен науккӑ.

**Ассотсиатси**—лат.—Пĕрлешӳ; пĕр ĕç тума шухăшласа темиçе çын ирĕккĕн пĕрлешни. Ĕçлĕх ассотсиатси— ĕçлекенсен каппитталпа кĕрешме тупă сойусĕ.

**Асот**—крек.—Тĕссĕр, тутăсăр, шăршăсăр кас—хамăр сывлакан сывлăшăн пайĕсенђен пĕри. Асот çунмасть, йапалана та çунма памасть. Сывлăшăн $^{3}/_{4}$ ытла асот.

**Аçпирин**—Çын вĕриленсен вĕрине лăплантаракан çăнăх майлă шурă емел.

**Аçи**—Çĕр çинђи пуринђен пысăк маттерик. Аçин ђиккисем: çурçĕрте—Пăрлă оккеан, хĕвелтухĕçĕнђе—Америккă, Аслă лăпкă оккеан, кăнтăрлара—Австраљи, Инђи оккеанĕ, хĕвеланăçĕнђе—хĕрлĕ тинĕс, Ахриккă, Хура тинĕс, Капкас сăрђĕсем, Урал шывĕ, Урал сăрђĕсем.

**Аççенисатси**—лат.—Пĕр-пĕр вырăна таса мар йапаласенђен тасатни.

**Аҫҫикнатси**—лат.—Хут укҫа. Раҫҫейре 1769 ҫ. II-мӗш Кӗтерин майра патша ҭухне тухма пуҫланӑ.

**Аҫҫикновкӑ**—Пӗр-пӗр уҭрештени каснаҭҭейрен укҫа илмешкӗн ҫырса паракан хут.

**Аҫмухха**—выр.— 1) Кӗрепенкӗн саккӑрӑмӗш пайӗ; 2) кирек мӗнӗн те саккӑрӑмӗш пайӗ.

**Алепастӑр**—крек.—Ҫуртсене шкатурт тумалли ҫунтарнӑ шурӑ ҭул.

**Алкепрӑ**—арап.—Маттематтиккӑ пайӗ: ҭисласемсӗрех пысӑккӗш-ӗҭӗккӗш ҫинҭен вӗрентекен наукӑ.

**Алххими**—арап.—Вӑтам ӗмӗрсенҭе пур йапаларан та ылттӑн тумалли, пур ҭиртен те тӳрлетекен „хилосох ҭулӗ“ тупас тийекен наукӑ. Хаљхи хими алххиминҭен пуҫланса кайнӑ.

**Алхвавит**—крек.—Сас палли йӗрки.

**Аллекори**—крек.— 1) Йуптарса калани; 2) курӑнми йапаласене курӑнакан йапаласен кӗлеткипе туса кӑтартни, сӑмахран: вилӗм курӑнмасӑ, ӑна ҫын шӑммисем, ҫын ҫкелеҭӗ ҫава тытса тӑнӑ пек туса пӗлтереҫҫӗ.

**Алмас**—арап.—1) Хаклӑ йышши ҭулсенҭен пуринҭен те хытти, пуринҭен те ҫутти. Кӗтеслӗ-кӗтеслӗ йакатнӑ алмаса приљљиант теҫҫӗ; 2) кантӑк касмалли пӗҭӗкҫӗ алмас кӳртсе лартнӑ йапала.

**Аљпом**—лат.—1) Тӗрлӗ сӑвӑсем ҫырмалли, йе картӑӑинсем хумалли кӗнеке; 2) пӗр хутошникӗн карттинӗсене пӗр ҫӗре пухнӑ кӗнеке.

**Аљљумини**—Кӗмӗл майлӑ тутӑхман ҫӑмӑл меттал: йарапалансем тата тӗрлӗ вак-тӗвек йапаласем тума кайаӑ.

**Алъманах**—арап.—Темиçе ахтăрăн происветенисене пĕр кĕнеке туса çаптарнă, вăхăтран-вăхăтран тухса тăракан кĕнеке.

**Амунитси**—лат.—Салтаксен тумтирĕпе вăрçа каймалли хатĕрсем.

**Америккă**—1) Атланттик оккеанĕпе Аслă лăпкă оккеан хушшинђе выртакан маттерик. XV мĕш ĕмĕрте Христохвор Колумп Америккăна тĕл пулађђен Америккă çинђен Йевроппăри çынсем нимĕн те пĕлмен. Америккă çĕрĕ Панам мăйĕпе икĕ пайа уйрăлса тăрат: Çурçĕр Америкĕ, Кăнтăр Америкĕ. 2) ђас-ђасах Америккă тесе кĕскен Çурçĕр Америкĕнђи Штатсен Респупликне калаççĕ.

**Америккански**—1) Америкрен тухнă йапала; 2) Америккă çынĕсем пек тунă ĕç; 3) хитре, ђеђен йапала.

**Ампулаттори**—лат.—1) Пуљнитсана выртма кирлĕ мар çăмăл ђирлĕ çынсене пăхса тӳрлетекен çурт; 2) пуљнитсасен ђе—пуљнитсана пыракан çынсене малтан пăхакан пӳлĕм.

**Амниçти**— крек.—Правиттĕлствă хушнипе сутпа айăплавă çынсене ирĕке кăларни. Пур патшалăхри халăхсемшĕн те аслă праçнăк йађĕпе политтиккă тĕлĕшĕнђен айăпланă çынсене ђас-ђасах амниçтилеççĕ. Р. Х. С. К. Р. Октăпĕрти Револђутси праçнăкĕпе, Çу уй. 1-мĕш кунĕ йађĕпе тунă амниçтисем пур.

**Анаттом**—крек.—Анаттомине ăста пĕлекен çын.

**Анаттоми**—крек. Ђĕрĕ йапаласен (оркависăмсен) пайĕсем çинђен, вĕсем орканисăмра мĕлле выранта тăни çинђен вĕрентекен наукка.

**Аналиттиккă**— крек.—1) Аналис теорийĕ; 2)шухăшланин елеменђĕсемпе условисем çинђен пĕлтерекен вĕрентӳ.

**Анализ— крек.**— 1) Тĕпĕ йĕрĕпе тĕрĕслесе пăхса тухни, пĕр-пĕр йапалана пайăн-пайăн уйăрса, йĕркипе пăхса тухни; 2) Çингтĕспа хире-хирĕç тăракан шухăшламалли меттăт: пайне пăхса ушкăнне, ĕçне пăхса сăлтавне шырани.

**Анарххи**—крек.—1) Йĕркесĕрлĕх, пуçлăх çукки, хаос, пăтранçăк; 2) Анарххисăмăн пулас опçĕствă итеалĕ.

**Анарххис**—крек.—Анарххисăма йышăнса, ăна пурăнăça кўртешшĕн тăрăшакан çын.

**Анарххисăм**--крек.--Кашни çын хăй пĕлнĕ пек пурăнтăр, нимле влаç та кирлĕ мар, ирĕклĕ ушкăнсен ирĕклĕ сойусĕсем анçах пулçăр тийекен по иттикă вĕрентĕвĕ. Анархисăмшĕн пигĕ нумай ĕçленĕ М. Паккунинпа унăн майлисем XIX ĕмĕрĕн 70-мĕш çулсенçе Карл Маркс тунă 1 мĕш Интернатсионалран тухса кайнă. Халĕ анархисăма хапăл тăвакансем темиçе майлă ушкăнсем пулса тăраççĕ.

**Анектот**—крек.—1) Кулăшла халап; 2) пĕр-пĕр çын çинçен кулмалла суйса калани.

**Анклии**—Йевроппăн хĕвеланăç йенçи вăйлă патшалăх; пĕтĕм тĕнçипе нумай халăха хăй аллинçе тытса пусмăрласа пурăнать; Анклин вăйĕ—тинĕсри хлотĕнçе. Анклин столици —Лонтăн—7 мĕлйуна йахăн çын.

**Анттанттă**—1) Мăн Анттанттă—Йевроппăри вăйлă патшалăхсем (Анкли, Хрантси, Иттали) вăрçă вăхăтĕнçе тунă килĕшў, сойус. 2) Кĕçĕн Анттанттă—Мăн Анттанттă тăрăшнипе Р. Х. С. К. Р. çумĕнçе пулса ларнă вак-тĕвек патшалăхсен сойусĕ: хăйсене хăйсем ирĕклĕ патшалăхсем тесе шутлаççĕ, çăннипе пĕтĕмпех Мăн-Анттанттă аллинçе, унăн куçĕнçен пăхса, вăл мĕн хушнине туса пурăнаççĕ.

**Аннекçи**—лат.—Йут халăх çĕрне вăрçса, йе вăрçăсăрах çарпа йышăнса (оккупатси туса) туртса илни. Пример: ирт-

нĕ вăрçăра Анкӡипе Хрантси Керманинне нумай çĕрсем аннекçиленĕ.

**Аноним**—крек—Йатсăр, хăй йатне пĕлтермен ахтăр.

**Арентă**—Куçармалла мар йапаласене тара пани, йе тара илни.

**Арихметтиккă**—крек.—Ӡисласем çинӡен вĕрентекен наукка.

**Аристократ**—крек—1) Ӡаплă йăхран тухнă çын; 2) аристократтиь правиттĕлствишĕн тăрăшакан.

**Аристократти**—крек—1) Патшалăх ĕçне хăй аллинӡе тытса тăракан, хăйне ӡапла хуракан, ыттисене пусмăрласа пурăнакан пуйансен, харам пырсен класĕ. 2) аристократсен аллинӡе тăракан патшалăх.

**Арĕс**—хран—Ирĕксĕрлетни; хуралла илни; тĕрмене хупни.

**Аррхеолоки**—крек—Авалхи йапаласене, памĕтниксене пăхса вĕрентекен наукка.

**Арххиттектурă**—крек.—Çурт-йĕрсем тума вĕрентекен искусствă—наукка.

**Арххиттектăр**—крек.—Çурт-йĕр тăвас ĕçе ăста çын; çуртсем тума плансем туса паракан.

**Арххив**—лат.—Кирлĕ мар пулнă кивĕ хутсене, токкумĕнтсене пăхса усрамалли вырăн.

**Арттис**—хран.—1) Илемлĕ искусствăпа пурăнакан çын; 2) театтăрта выӡакан; актор.

**Арттиллери**—ним.—1) Тупăсемпе вăрçакан çар; 2) тупăсемпе вĕселе кирлĕ йапаласем; 3) тупăсенӡен пеме вĕрентекен наукка.

**Арми**—хран.—Пĕрмайах хатĕр çар: пехоттă, кавалери, арттиллери т. ы. Ш у р ă   а р м и—улпутхуçасене пăхăнса вĕсемшĕн вăрçакан çар; Х ĕ р л ĕ   ç а р—ĕçлесе пурăнакан

хура халăхшăн тăракан, ăна сыхлакан, ĕçлекенсен правиттĕлствине пăхăнса тăракан çар.

**Аванттура**—хран. Хăвăрт пуйас тесе, авуç ăнĕ тесе шанса пуçланă ĕç.

**Аванттурис**—хран.—Кама та пулин улталас тесе шыраса çӳрекен çын; шарлаттан.

**Аванс**—хран.—Ĕçе тăваттен малтанах паракан укçа.

**Авкуст**—лат.—Çулталăкăн 8-мĕш уйăхĕ, Çурла уйăхĕ.

## У.

**Украйнă**—Сотсиалисăмла Канаш Респупликĕсен Сойусĕнче тăракан Канаш Респупликĕ; ĕлĕкхи Раççейĕн 14, хаххулсем пурăнакан, кĕпĕрнесенчен пулнă. Тĕп учрештенисем—Харккăвра.

**Укроп**—Апат-çимĕç çине йамашкăн акса ӳстерекен тутлă шăршлă курăк.

**Уттоппи**—крек.—Ĕçе кӳртме май килмен шухăш.

**Уттоппис**—крек—Тĕрлĕ уттопписем çинчен шухăшласа çӳрекен çын.

**Уттоппилле сотсиалисăм**—19-мĕш ĕмĕрĕн пуçламĕшĕнче Çен-Çимон, Хвурйе, Оуйен т. ы. сарса йанă, çын пурăнăçне лайăхлатас шухăшсем; вăл вăхăтра пролеттариат вăйсăр пулнă пирки, пуршуаçипе çапăçса ирĕке алла илес тесе никам та шухăшламан, çавăнпа пуршуаçине çын телейĕсем çинчен ăшă сăмахсем каласа, ĕçлекенсен пурăнăçне йепле майпа лайăхлатасси çинчен, вĕрентме тăрăшнă. Кун йевĕрлĕ шухăшшем чăнахта уттоппи анчах пулнă, çавăнпа вăл вĕрентӳне „уттоппилле сотсиалисăм“ теççĕ.

**Уттилисатси**—лат. Усă курни.

**Учрештени**—Пĕр-пĕр ĕçе туса тăмашкăн тытнă çынсем ĕçлекен вырăн; ĕçлекенсем хăйсем; ĕçе йурăхлă хатĕр, аппа-

рат; патшалӑх уҫрештенисем—патшалӑх ӗҫне туса тӑракан аппаратсем.

**Усурпаттӑр**—лат.—Сакконсӑр туртса илекен, усурпатсилекен ҫын.

**Усурпатси**—лат.—Ҫын йапалине сакконсӑр туртса илни; пуринҫен ытла влаҫ туртса илни ҫинҫен калаҫҫӗ.

**Устав**—Пӗр-пӗр парҭҭи, ушкӑн, йе сойус тӑвас ӗҫӗсем ҫинҫен, ҫленӗсем мӗн тӑвасси ҫинҫен, мӗлле ӗҫлесси ҫинҫен пур те килӗшше йышӑннӑ йӗрке.

**Услови**—1) Килӗшӳ; тӑвас ӗҫ ҫинҫен сӑмах пӗтерсе, хут ҫине ҫырса ал пусни; 2) ӗҫе малалла йаракан, йе ҫӑрмантарса тӑракан сӑлтавсем; опстановкӑ.

**Улҭтиматтӑм**—лат—Йулашки хут татӑклӑ калама хушни; патшалӑхсем вӑрҫӑ пуҫлас умӗн пӗр-пӗрне улҭтиматтӑм параҫҫӗ.

**Универҫиттет**—лат. Пур науккӑсене те вӗрентекен ҫӑн аслӑ шкул, науккӑсем тӑрӑх темиҫе хаккуҭттетлӑ пулаҭ.

Комунисла универҫиттет—Р. К. П. аслӑрах хуласенҫе канашпа парҭҭи ӗҫӗсене вӗренме тунӑ аслӑ шкулсем: ӗҫлекенсемпе хресҫенсене анҫах илеҫҫӗ.

**Уран**—Хӗвел тавра ҫавӑрӑнакан планеттӑсенҫен пӗри; хӗвелтен питӗ инҫе пирки (Уранпа хӗвел хушши 2.848.000.000 километ.) хӗвел тавра 84 ҫулта тин пӗрре ҫӑвӑрӑнса ӗлкӗрет.

**Урок**—1) Паллӑ вӑхӑтра туса пӗтерме панӑ ӗҫ; 2) шкулта пӗр сехет вӗрентни—пӗр урок. 3) кама та пулин вӗрентсе йатлаҫни.

## Ӑ

**Ӑртут**—Ҫӗрӗ кӗмӗл; кӗмӗл пек ҫутӑ, ирӗлсе тӑракан, йӑвӑр меттал; термометтӑрсем тунӑ ҫӗре кайаҭ; Реомӳр термометтӑрӗ тӑрӑх 40 кралӑс сив пулсан, ӑртут шӑнаҭ, хытаҭ.

## Е

**Еккономи**—крек.—Хуçайствăри ĕççене, расхутсене йĕркелесе, пĕлсе, усăллă туса пыни.

Политтиккă еккономи—етем опщĕствине тытăнтар‑а тăракан тĕп никĕс çинчен — халăх хуçайстви çинчен — верентекен наукка.

**Екконоимиккă** — крек.— 1) Екконимиккăла, хуçайствăла сăлтавсемпе хактăрсем. 2) опщĕствăн хуçайстви йĕрки.

**Екконоимикла**—кр.— Екконимиккăпа мĕлле те пулин çыхăнса тăракан. Екконимикла политтиккă—етем опщĕствин, йе патшалăхăн хуçайстврă йĕркине кирлĕ çулпа йарас тесе, мĕлле сакконсем кăларса пымалли çинчен вĕрентекен теорисене çиçтемлапи.

Екконоимикла маттериалисăм — Маттериалисăм сăмаха пăхмалла.

**Екконоимис**—кр.—1) Политтиккă екконимине ăста пĕлекен çын; 2) Екконимисăма хапăл тувă çын.

**Екконоимисăм**—кр.—Раççейри сотсиал-темократсем хушшинче 1890-мĕш çулсем хыççăн пулса кайнă вĕрентӳ: ĕçлекенсене ирĕке кăлармашкăн политтиккă тĕлĕшĕнчен çапăçмалла мар, екконимиккă тĕлĕшĕнчен анчах пулăшша пымалла тесе вĕрентнĕ.

**Екскурçси** - лат.- -Вĕренес тĕлĕшĕнчен инттереслĕ вырăна кайса пăхни.

**Експетитси** —лат.—1) Инçе çĕре наукăшăн кайни; 2) пуштă кантурĕнче, йе хаçат-кĕнекесем кăларакан çĕрте—çырусене, йе кĕнеке хаçатсене атрĕсĕсем тăрăх майласа йаракан уйрăм.

**Експлуаттаттăр**—хран—Çын ĕçленипе усă курса пурăнакан çын; кулак.

**Експлуаттатси**—хран—1)Пӗр-пӗр претприйаттинђен усӑ курни; 2) ҫын ӗҫӗпе, ытлашши ӗҫлеттерсе пуйса, кулакланса пурӑнни.

**Екҫемпљар**—лат.—Штуккӑ, йетинитсӑ; ытти пӗр пек йапаласен хушшинђен ӑрасна илнӗ йапала, сӑмахран—кӗнеке, хаҫат, картҡин екҫемпљарӗ.

**Екваттӑр**—лат.—Ҫӗр ђӑмӑрӗ (шарӗ) тавра икӗ пољус варринђен шухӑшпа йӗрлесе тухнӑ ҫаврака йӗр Екваттӑр ҫӗр ђӑмӑрне (шара) икӗ пайа (ҫурҫӗр йенђи ҫуршар, кӑнтӑр йенђи ҫуршар) уйӑрса тӑраҡ.

**Ехоис** —лат.—Хӑйне хӑй анђах йуратса, хӑйшӗн анђах тӑрӑшаван ҫын.

**Ехоисӑм**—лат.—Хӑйне анђах йуратса, тӑрӑшша пурӑнни, ытти ҫынна ним вырӑнне те хуманни.

**Еппитеми**—Пурне те йерсе пыракан, ҫынран ҫынна сиксе пыракан (ђирсем, йе урӑх мӗнле те пулин йапала).

**Еппоххӑ**—крек.—1) Историре—пур ытти вӑхӑтсенђен мӗнпе те пулин паллӑ уйрӑлса тӑракан вӑхӑт; 2) кеолокире —пӗр-пӗр паллӑ периотӑн паллӑ пайӗ.

**Еттиккӑ**—крек.—1) Пурнӑҫ йӗркисен, майсен сакконӗсем ҫинђен вӗрентекен науккӑ, 2) пӗр-пӗр партҡин, ушкӑнӑн, йе сойусӑн ђленӗсен пурӑнӑҫӗ майӗсен, йӗркисен, пурӑнӑҫ пӑравӗлӑсен котекси, мараљ.

**Ессер**—Ессерсен (сотсиалис-револ̣утсионерсен) партҡийӗн ђленӗ.

Ессерсем, ессерсен партҡи—„Сотсиалис—револ̣утсионерсем“ сӑмаха пӑх.

**Електритсӑ**—Тӗрлӗ йапаласене хӑйсен ҫук свойствӑсем (туртса илекен, тӗртсе йаракан, елементсене уйӑрса кӑларакан, ҫутӑлтаракан т. ы.) паракан куҫа курӑнми вӑй. Майлӑ

електритсӑ—ҫӑмпа хытӑ сӑтӑрнӑ кӗленҟе йапала ҫине пухӑнаҭ; хирӗҫ електритсӑ—тирпе сӑтӑрнӑ смала ҫине пухӑнаҭ. Майлӑ електритсӑпа хирӗҫ електритсӑ пӗрмайах пӗрлешме тӑрӑшаҫҫӗ, ҫавӑнпа ҫывӑхра пулсан ҫиҫӗм кӑларса, ҫатӑртатса пӗрлешеҫҫӗ (аслатипе ҫиҫӗм). Електритсӑ вӑйӗпе халӗ темле усӑ та кураҫҫӗ: хуласем ҫутатаҫҫӗ, ҫӗр сухалаҫҫӗ, вакунсем ҟуптараҫҫӗ, ҟирҟӗртен тӳрлетеҫҫӗ т. ы.

**Елемент**—лат.—1) Нимле майпа та урӑх тӗрлӗ йапала тума май ҫук йапаласем. Пур тӗнҟери йапаласем те 80 елементран пулса тӑраҫҫӗ (воторот, уклерот, асот, тимӗр, каљи, каљтси, кӗмӗл, ылттӑн, пӑхӑр, кӗкӗрт т. ы.); 2) Нумай пайлӑ йапаласен пӗр пайӗ; 3) каљванисла вӑй тупмалли хатӗр, каљванисла паттарейӑн пайӗ.

**Емикратси**—лат.—1) Ҫуралнӑ ҫӗршыва пӑрахса йут ҫӗре куҫни йе тарни.

**Емикрант**—лат.— Ҫуралнӑ ҫӗршыва пӑрахса йут ҫӗре куҫнӑ, йе тарнӑ ҫын.

**Енерки**—лат. 1) Паллӑ йапала паллӑ таран ӗҫлеме пултарни, вӑй, пултару. Кинеттиклӑ енерки—курӑнса тӑракан, ӗҫлекен енерки; поттентсиаллӑ енерки—пытанса, курӑнмасӑр, ӗҫлемесӗр тӑракан енерки; иккӗшӗ те мехханисла енеркин икӗ тӗрлӗ майӗсем, енерки ҫухалман саккон тӑрӑх ашӑ, ҫутӑ йе тата урӑх тӗрлӗ енерки пулса кайма пултараҫҫӗ. Химилле енерки—йапаласем пӗр-пӗринпе химилле реаксиленме пултарни. 2) пӗр ывӑнмасӑр, питӗ тӑрӑшша, пӗлсе, хӑватлӑ ӗҫлеме пултарни. Енеркиллӗ ӗ ҫ—пӗлсе, тӑрӑшша, вӑйлӑ пыракан ӗҫ.

**Евољутси**—лат.—1) Йерипен, майпе, пӗҟӗккӗн ӳссе, хӑватланса пыни (револютси пек сасартӑк, хӑвӑрт мар). 2) Пиолокире—пӗр хормӑ тепӗр хормӑран тухса ӳссе пыни.

## И.

**Итеал—крек.**—Инçетри, калама çук лайăх, пурăнăçа кӳртме май килмен тĕл.

**Итеалис—крек.**—1) Итеалисăма йышăнса хапăл тăвакан çын; 2) пур пурăнăçри йавленисем çине вĕсене итеалласа, лайăх йенђен анђах пăхакан çын.

**Итеалисăм—крек.**—Пур пурăнăçри йавленисем çине вĕсене итеалласа, маттериллĕ майĕсене курмасăр пăхни.

Хилосохви итеалисăмĕ—Пур куçпа куракан тĕнђе ђăнаххипе çук, епĕ хам ăшра вĕсем çинђен шухăшланăран анђах итейăра анђах пур пек туйăнаççĕ тесе вĕрентекен хилосохви, тĕнђе итейăсемпе анђах пурăнаť тесе вĕрентни. Пур уаçи хилосохвĕсем ку таранђенех хăйсене хăйсем итеалисăмпа лăпланта́рса пурăнаççĕ, мĕншĕн тесен Карл Маркс вĕрентсе хăварнă маттериалисăм çулĕ çине тăрсан, пуршуаçи патшалăхĕ пĕтесси пуриншĕн те паллă курăнса тăраť.

**Итейă—крек.**—1) Пултаруллă шухăш, тĕп шухăш; 2) пĕр-пĕр йавленин вăхăтран-вăхăтран анђах сисĕнекен паллисем мар, ђăн никĕсĕ пулса тăракан, итеаллă шухăшĕ.

**Итеолоки—крек.**—Егем хăй пурăнăçĕнђе тĕл пулакан йаналасемпе йавленисене ăнланса илсе вĕсене хăй пурăнăçĕпе килĕштерсе шухăшлани, таврари тĕнђе çине пăхмалли майсемпе, пăхнă хыççăн ăша йулса лыракан ăнлавусем.

**Итиот—крек.**—Анкă-минкĕ, тăн-тан, ăнсăртарах, тăрри шăтăк тийекен çын.

**Иттальи**—Йевроппăри вăйлă патшалăхсенђен пĕри, Çĕрварри тинĕсĕ çинђи Аппенин çуростравĕ çинђе. Тĕп хули—Рим.

**Искусствă**—1) Шухăша, итейăна ђĕрене систерекен, ăшран йарса илекен майсемпе пĕр çынран тепĕр çынна сис-

терекен майсем. 2) Мĕне те пулин хитре, ђеђен, лайăх тума пĕлни.

**Истори**—крек.—1) Ĕлĕк пулнă хактăсене сотсиолоки кăтартакан меттотсемпе тĕплесе пырса вĕсене ăнлантарса паракан наукă; 2) пĕр-пĕр йапала, йе йавлени ăçтан тухса, мĕнле çулпа пырса, ăçта çитнине, мĕнле улшăнусем пулнине тĕрĕслесе пыни.

**Иљљуçи** —лат.—1) Пĕр-пĕр йавлени ђăн пулнă пек мар, пĕтĕмпех урăхла курăнни; 2) хактăсене пĕрте аса илмесĕр шухăша астарса йани, пулас çук йапаласем çинђен шухăшлани.

**Иљљуминатси**—Пĕр пĕр праçнăк йађĕпе çуртсене, урамсене ерешлесе çутатни.

**Имиттатси**—лат.—Ђăнни, тĕрĕсси пек тума хăтланни, хаљшивăй йапала туни.

**Импери**—Пысăк, императтăр пуçлăх пулса тăракан патшалăх.

**Империалис**—Империалисăмшĕн тăрăшакан.

**Империалисăм**—лат.—Йут патшалăх çĕрĕсене таварсем сутма ирĕк пултăр тесе туртса илме тăрăшакан хинанс каппитталĕн политтикки.

**Импровисатси**—Малтан нимĕн хатĕрленмесĕр тăвакан ĕç, йе урăх мĕн те пулин (сăмах калани, йурă шухăшласа кăларса йурлани, т. ы.).

**Инертси**—лат. Йапаласем никам пулăшмасăр—ђармасăр хăйсен хускалмăшне улăштарма пултараймани. Инертсипе ĕçлени—пĕр пек, ним шухăшламасăр ĕçлесе тăни.

**Инитсиаттăр**—лат.—Ĕçе пуçласа йаракан, пирвайхи шухăша паракан, ђăн малтан ĕçе тытăнакан.

**Инитсиаттивӑ**—лат. —Пуçламă̆ш шухă̆ш, мĕнле те пулин ĕçе тытă̆нас шухă̆ш; ĕçе пуçласа йани.

**Интеликент** — лат. — Интеликентси шутĕнҫе тă̆ракан; алура вăйĕпе мар, пуçпа, ă̆спа ĕçлесе пурă̆накан çын.

**Интеликентси**—1) Пуршуаçипе пролеттариат хушшинҫе тă̆ракан, пуршуаçишĕн укçашă̆н ĕçлесе тă̆ракан клас. Револютси пулса пролеттариат влаçа хă̆й аллине илсен икĕ пайа уйă̆лса сапаланса кайат: хă̆шĕ-пĕри пуршуаçи майлă̆, хă̆шĕ пролеттариат майлă̆ ĕçлеме тытă̆наççĕ. 2) Нумай вĕреннĕ, ă̆с ĕçне ĕçлесе пурă̆накан (тĕрлĕ тухтă̆рсем, уҫҫителсем, атвакатсем, иншенерсем, техниксем, писсаттĕлсем т. ы.).

**Интерес**—хран.—1) Пĕлес килни, йуратса, хавас тă̆вас килни; 2) усă̆, кирлĕ, усă̆ллă̆, паха йапала, усă̆ кă̆тартакан йавлени; К л а с и н т т е р е с ĕ—пĕр-пĕр класă̆н пурă̆нă̆çне усă̆ кă̆тартакан йапала, ĕç, йе йавлени.

**Интереслĕ**—Тĕлĕнмелле, шухă̆ша хă̆й çине туртса илекен, хă̆й çинҫен хавассă̆н шухă̆шлаттаракан, асран кайман йапала; ытти йавленисенҫен ă̆раснах паллă̆ тă̆ракан йавлени.

**Интернатсионал**—1) Пĕтĕм тĕнҫери ĕçлекенсем пĕрлешше каппитталпа кĕрешмешкĕн тунă̆ сойус, ассотсиатси. I-мĕш Интернатсионал— 1864-мĕш çулта Л о н т ă̆ н р а пуçланса 1876-мĕш çулҫен пынă̆, вă̆л пĕтĕм тĕнҫипе ĕçлекенсене каппиттал сă̆нҫă̆рĕсенҫен хă̆тарса, пур çĕрте те влаçа пролеттариат аллине парассишĕн, никама та кирлĕ мар вă̆рçă̆сене пĕтерешшĕн тă̆рă̆шнă̆. 1871-мĕш çулта Париш Комунĕне çĕмĕрсе тă̆ксан, I-мĕш Интернатсионал питĕ вă̆йсă̆рланса йулнă̆ та, Йевроппă̆ри патшалă̆хсенҫе пур çĕрте те реакси çĕнтерсе пынă̆ран, 1876-мĕш çулта пĕтĕмпех пĕгсе ларнă̆. Итейă̆ тĕлĕшĕнҫен I-мĕш Интернатсионала Карл Маркс тĕрĕс çулпа йертсе пынă̆. II-мĕш Интернатсионал—1889-мĕш çулта пуç-

ланса кайнă, вăл тĕрлĕ ҫĕрти сотсиалисăмла парттисене пĕрлештерес, орканисатсилес тĕлĕшĕнҗен нумай ĕҫлесе хăварнă, каппитталисăмла патшалăхсем пĕр пĕринпе вăрҫмасăр пурăнма пултарайманнине пĕлсе, вăрҫăсене пĕтерешшĕн питĕ хытă тăрăшнă. Анҗах пуҫлăхĕсем нумайĕшĕ каппитталиссем майлă ҫавăрăнса кайнăран, 1914-мĕш ҫулта вăрҫă пуҫланса кайсан, Интгернатсионал нимĕн те тума пĕлмесĕр, саланса кайнă. III-мĕш Комунисла Интгернатсионал—Р.К.П. тăрăшнипе 1919-мĕш ҫулта пуҫланса кайнă. Ҫулган ҫулах вăйлăланса пырса, халĕ Комунисла Интернатсионал пур тĕнҗипе Комунисла парттисем орканисатсиленĕ (1923 ҫулта 49 ком. партти пулнă). 2) Комуниссен кимăнĕ: „Тăрхаљ ылхан кĕлеми ҫапнă“ т. м.

**Инттервентси**—лат.—Пĕр патшалăх тепĕр патшалăх ĕҫĕсене хĕҫ-пăшалпа тума тытăнни. Октăпĕрти Револютси хыҫҫăн Йевроппăри патшалăхсем Р.Х.С.К.Р. инттервентсипе питĕ нумай усал тунă.

**Иншенер**—хран.—Иншенер искусствине ăста пĕлекен ҫын (ҫурт-йĕрсем тăвас ĕҫĕн, ҫулсем-кĕперсем, машшинсем, хапрăк-савăтсем, креппăҫсем тăвас ĕҫĕн т. ы. иншенерĕсем пур).

**Инструктăр**—лат.—Пĕр-пĕр ĕҫе лайăх пĕлсе, ĕҫе мĕнле тумаллине кăтартса, тĕрĕс маррисене кăтартса, тĕрĕслесе ҫӳрекен.

**Инструкси**—лат.—Ĕҫе мĕнле тумаллине кăтартса пыракап правĕлăсем.

**Инспектăр**—лат.—Пĕр-пĕр уҗрештени хушнипе ĕҫе, ĕҫлекенсене тĕрĕслесе пăхса ҫӳрекен. Налок инспектăрĕ—налок пухас ĕҫпе пĕр-пĕр районра ĕҫлекен.

**Инспекси**—лат.—Пĕр-пĕр ĕçе мĕнле туса тăнине тĕрĕслесе пыракан уҫрештенисемпе çынсем. Ĕçлекенсемпе хресҫенсен инспексийĕ—Канаш Правитгĕлствинҫе тĕрлĕ уҫрештенисен ĕçĕсене контруллекен Комиссариат.

**Инçтитгут**—лат.—Тĕрлĕ спетсиалистсене вĕренгсе кăларакан аслă шкулсем.

**Инçтинктă**—лат.—1) Вĕренмесĕр, мĕскер тупине ăнласа илмесĕрех кирлĕ, усăллă ĕççем тума пултарни (пĕҫĕк аҫа ҫĕҫĕ ĕмме, кăвакал ҫĕпли шывра ишме никам вĕрентмесĕрех, инстинктăпах, пĕлеççĕ). 2) Мĕн те пулин пуласса ним сăлтавсăрах малтан сисни.

**Инвалит** —лат.—Мĕнле те пулин ĕçе йурăхсăр пулнă çын.

**Инвенттар**—лат. 1) Пур пек пурлăха çырса тухнă кĕнеке 2) Пĕр-пĕр претприйаттине ĕçне тума кирлĕ йапаласем. Ҫĕрĕ инвенттар—претприйаттин ĕçе кирлĕ выҫăх-ҫĕрлĕх. Ҫĕрĕ мар инвенттар— ĕçе кирлĕ машшинсемпе оругисем.

**Ироҥи**—крек.—Кулса, мăшкăласа калани, сăмахсене урăхла май ăнланмалла калани; калаçаканĕн тонĕнҫен иронилепине ăнланмалла.

**Ийуљ**—Çулталăкăн çиҫҫĕмĕш уйăхĕ, Утă уйăхĕ.

**Ийуљри револютси**—Хрансире 1830-мĕш çулăн ийуљ уйăхĕнҫе Пурпонсен тинаçтине сирпĕтсе кăларни.

**Ийуљ кунĕсем**—1917-мĕш çулăн ийуљ уйăхĕнҫе Питĕрти ĕçлекенсемпе салтаксем поҫшевиксем майлă пулса, влаçа Советсен аллине памалла тесе темонстратсиленипе, вĕсене Керенски çĕмĕрсе тăкнă кунсем.

**Ийуҥ**—Çулталăкăн улттăмĕш уйăхĕ—Çĕртме уйăхĕ.

**Ийуҥри револютси**—Парижре 1848-мĕш çулта ĕçлекенсем вăхăтлă правиттĕлствăна хирĕç тăнипе, вĕсене Кавенйак

йанрал питĕ хăрушшăн çĕмĕрсе тăкни.

**Ийот**—крек.—1) Хими елеменҫĕсенҫен пĕри. 2) суран-сене сĕрмелли емел: иота çпиртра ирĕлтерсе тăваççĕ.

## К.

**Кауҫҫук**—Кауҫҫук йатлă йăвăç сухăрĕнҫен хытса пу-лакан йапала, тепĕр тĕрлĕ реçинă, питĕ нумай тĕрлĕ йапа-ласем тунă çĕре кайаҫ.

**Капинет**—хран.—1) Çырмалла ĕçсем тумалли ăрасна пӳлĕм; 2) апат çимелли çуртсенҫи, ресторансенҫи, ăрасна пӳлĕм; 3) конституцилле патшалăхсенҫе—министăрсен йы-шĕ, пур министăрсем пĕрле 4) пĕр пĕр наукăна практик-кăра. лайăх пăхса вĕренмешкĕн тĕрлĕ хатĕрсене пĕрле пух-нă пӳлĕм (хиçик, хими, тĕнҫе истори, йе тата урăх наукă-сен капинеҫĕсем).

**Капкас**—Хура тинĕспе Каçпи тинĕсĕ хушшинҫе вырта-кан пысăк сăртлă çĕр. Капкас сăрҫĕсем питĕ нумай тĕрлĕ ҫавса кăларакан йапаласемпе пуйан: пăхăр, тăхлан т. ы. Сăртсенҫен йухса тухакан сиплĕ шывлă çăлсем нумай. Кап-касри Апшерон çуростравĕ—тĕнҫери нехтăпа пуйан вырăн-сенҫен пĕри. Капкасра нумай тĕрлĕ халăхсем пурăнаççĕ: вырăссем, ерменсем, ҫеркессем, перссем, вырăссем т. ы. Капкасри оплăççемпе Респупликкăсем халĕ Сот. Кан. Респ. Сойусĕнҫе тăраççĕ.

**Каппиттал**—лат.—1) Политтиккă економийĕ тăрăх—хуçине услам паракан мул, урăхла каласан, уйрăм çын ал-линҫе тăнă пирки производствă хатĕрĕнҫен експлуаттатси ха-тĕрĕ пулса кайнă хатĕрсем. Каппиттал услам курас ĕçре икĕ пайа уйрăлса тăраҫ: а) у л ш ă н м и к а п п и т т а л —тавар тума кирлĕ хатĕрсем (ĕçлекен çынписемсĕр пуçне),

ку пай услам памасӗ; у) улшӑнакан каппиттал—ӗҫлекенсене тара тытма кирлӗ укҫа, ку пай, ӗҫлекенсене ӗҫленӗ хакне пӗтӗмпе парса пӗтермен пирки, каппиттал хуҫине услам парать, происвотствӑ протсесӗнҫе ӱссе тухать. 2) Карл Маркс политтиккӑ еккономине криттиклесе ҫырнӑ пысӑк кӗнекен йаҫӗ.

**Каппитталис**—Каппитталран усӑ курса, хӑй ӗҫлемесӗр пурӑнакан ҫын, пуршуй.

**Каппитталисӑм**—Хеотализӑм хыҫҫӑн пуҫланса кайнӑ халӑх хуҫайстви йӗрки. Каппитталисӑм вӑхӑтӗнҫе пур опҫӗствӑ икӗ, пӗр-пӗрне хирӗҫ тӑракан лакӑр пулса тӑрать: пӗр йенҫе йышӑллӑ ӗҫлекенсем, тепӗр йенҫе нумай мар каппитталиссем. Опҫӗствӑри ытти ҫынсем ӑрасна паллӑ клас пулса тӑмаҫҫӗ, йе каппитталиссем йе пролеттариат майлӑ (хӑйсен еккономиккӑ тӑрӑх) пулса тӑраҫҫӗ. Пур етем тӑвакан йапала тавар пулса тӑни, ӗҫ хатӗрӗсем каппитталиссен аллинҫе анҫах пулни тата ӗҫе тара тытса туни—каппитталисӑмӑн виҫӗ тӗп паллисем пулса тӑраҫҫӗ.

**Катет**,—катетсем, катетсен партти—Конститутсипе темократлӑ парттине кӗскен калани; улпут-хуҫасемпе вӗсен майлисен парттийӗ.

**Катталӑк**—крек.—Мӗнле те пулин йапаласене тӗрӗслесе ҫырса тухнӑ кӗнеке.

**Каттекори**—крек.—Расрет; мӗне те пулин сурт тӑрӑх, каҫӗствӑ тӑрӑх, йе хорми тӑрӑх темиҫе пайа валеҫни.

**Каттӑркӑ**—Сутпа ирӗксӗр ӗҫлеме йаракан вырӑн, ӗлӗк патша ҫух айӑплӑ ҫынсене Ҫӗпӗре ҫӗртен йапаласем ҫавса кӑларма йанӑ.

**Каҫӗствӑ**—Йапалан авачлӑхӗпе наҫарлӑхӗ, ӗҫе йурӑхлӑхӗпе йурӑхсӑрлӑхӗ, лайӑххипе лайӑх марри.

**Кас**—Сывлăш майлă, хăйсен хормă çук, пур пуш вырăна та тулма пултаракан йапаласем (воторот, уклекислота, кислорот, асот т. ы.). Питĕ хытă сивĕтсе хĕстерсен кассем йĕпе йапала пулса кайаççĕ, çавăнпа вĕсене халĕ шутсăр сивĕре те вĕресе пăсланма пултаракан йĕпе йапаласем тесе шутлаççĕ.

**Касак**—тут—Патша Раççейĕнҫе—Тонпа Урал шывĕсем тăрăх çеçен хирте çĕр ĕçлесе пурăнакан, кирлĕ пулсан пурте лашалă çара кайакан çынсем. Касаксен хăйсен тĕрлĕ сакконсем, ирĕксем нумай пулнă, çĕр ĕçлес тĕлĕшрен те патша вĕсене ирĕк нумай панă, çавăнпа вĕсем патшашăн хытă тăнă, ĕçлекенсемпе хресҫенсене те, патша хушнипе, революцисисем тунăшăн нумай асап кăтартнă.

**Касамат**—хран.—Тĕрме.

**Касармă**—ним.—1) Салтаксем пурăнакан çурт; 2) пурăнма аванмăр çурт.

**Касус**—лат.—Йĕркесĕр, кĕтмен çĕртен сиксе тухнă ĕç.

**Кассатси**—хран.—Кĕçĕнрех суг прикăвăрне улăштарас тесе аслăрах уҫрештенине прошшени пани.

**Кассатсиллĕ ĕç**—Кĕçĕнрех сут пĕрре пăхса тухнă ĕçе аслăрах сут тепĕр хут, прошшени панă пирки, пăхса тухни.

**Кассă**—ит.—1) Укçа усракан йешҫĕк, арҫа. 2) уҫрештенисенҫе укçа паракан, йе укçа илекен вырăн, пӳлĕм; у с р а в к а с с и—укçана сыхласа усрама проҫҫăн тӳлесе илекен уҫрештени; п у л ă ш у к а с с и—пĕр-пĕр сойусăн, йе ушкăнăн ҫленĕсене нушара пулăшмашкăн пуринҫен те укçа пухса пыракан уҫрештени; с о т с и а л л а с т р а х х о в о й к а с с ă—уҫрештенисемпе претприйаттисенҫе ĕçлекенсене ĕçлейми пулсан пулăшу паракан уҫрештени. Т и п п о к р а х-

висенђе—тӗрлӗ шрихтӑсен саспаллисене кашнине ӑраснa хума пӗђӗк пӳлӗмлӗ тунӑ йешђӗк.

**Кампаңи**—хран.—Паллӑ ӗҫе паллӑ вӑхӑтра ӑраснах пур ытти ӗҫрен те мала хурса, пур вӑй ҫитнӗ таран туса пӗтерме тӑрӑшни (налок пухас кампаңи, советсене суйлас кампаңи т. ы.).

**Кантруљ**—хран.—Камӑн та пулин ӗҫӗсене, йе токкумӗнђесене тӗрӗслени, ревиҫилени.

**Канђитат**—лат.— 1)Тӗрлӗ суйласа лартнӑ ҫынсен ӗҫне вӗсем ҫук ђухне (вилсен мӗн тусан, йе нумайлӑха инҫе ҫӗре кайсан) тумашкӑн суйласа хунӑ ҫын. 2) партђи канђитаћӗ—партђине кӗме хатӗрленекен ҫын, партђине кӗме йурӑхлипе йурӑхсӑррине пӗлме тунӑ вӑхӑта ирттерекен ҫын.

**Каранттин**—ит.—1) Пӗр-пӗр вырӑнта питӗ сикекен усал ђирсем пуҫланса кайсан, ҫав вырӑнтан тухса урӑх ҫӗре кайакансене пӑхса, тӗрӗслесе тухакан, йе вуҫех ниҫта та йамасӑр ђарса тӑракан уђрештенисем; 2) ҫавӑн пек вырӑнта ниҫта каймасӑр пурӑнса ирттернӗ вӑхӑт.

**Каранђи**—хран.— Пурука; пӗр-пӗр ӗҫ тума сӑмах парсан, панӑ сӑмаха ђӑнах та тӑватӑп тесе, салок хуни: шантару.

**Карикаттурӑ**—ит.—1) Пӗр-пӗр ҫынна, йе ӗҫе йури кулӑмалла йенђен кӑтартакан картђинӑ; 2) ҫын мӗн тунипе кулмалла туса кӑтартни.

**Карттӑ**—хран.—1) Тӗнђен пайӗсене (ҫӗре, тинӗссене, патшалӑхсене, пӗлӗте) хут ҫине пӗђӗклетсе ӳкерни; 2) тӗрлӗ кӗлеткесем ӳкернӗ пӗђӗк хут—выљамалли карттӑсем.

**Карнисун**—хран.—Хулара, йе крепӗҫре ӑна тӑшмансенђен сыхласа пурӑнакан ҫар.

**Карйерă—хран.**—Опђĕствă ĕçĕнђе, слушпăра ĕлкĕрсе асла тухса пыни.

**Карйерис—хран.**— Ĕçре ĕçĕшĕн мар, хăй вађђи усă курашшăн анђах тăрăшкан çын.

**Карйерисăм**—Ĕçĕ маталла кайтăр тесе мар, хăйне лайăх пултăр тесе анђах тăрăшни; слушпăра аслăрах вырăна кĕресђă тесе хытă тăрăшни.

**Кавалери**—хран.— Углă (лашалă) çар.

**Кустар**—Ал ăсти; хăй вăйĕпе, пысăк машшинсемсĕрех мĕн те пулин сутма тăвакан.

**Кустарла промышлĕннăç**—Кустарсен промышлĕннăçĕ, тупăшлăхĕ. Палла вырăнти кустарсем ĕçлесе тăвакан йапаласемпе вĕсен тупăшлăхĕ.

**Кулак**—выр.—1) Йалти кушган пуйан, ђухăнсене тĕрлĕ майпа хĕсĕрлесе хăй вађђи ĕçлеттерсе пурăнакан çын; кулаксем пупсемпе питĕ килĕшше пурăнаççĕ—вĕсен ĕçĕсем пĕр пĕк: иккĕшĕ те хресђене улталаса пусмăрласа пурăнаççĕ. 2) Алђăмăрĕ, ђышкă.

**Кулиссă**—хран.—Сђенă çинђе икĕ айăккинђи ђалăшла лартнă теккораттсисем.

**Куљт**—лат.—Турăсене кĕлтумалли йĕркесем, хормисем. В а т т и с е н к у љ т ĕ—такçан вилнĕ ватă, мĕнпе те пулин ђапа тухнă, асаттесене кĕлтуса пуççапса пурăнни.

**Куљттурă**—лат.—1) Пĕр-пĕр натсин, йе пĕтĕм етем йăхĕн вĕрене се, çутта тухса, пурăнăçа лайăхлатас ĕçĕн ăнăçлăхĕ. 2) пĕр-пĕр кирлĕ йапалана лартса, пăхса ўстерни.

**Курс**—хран.—Пĕр-пĕр патшалăхăн хут вађуттă хакĕ; 2) хакăллă хутсен (аксисен мĕнсен) пиршăра хакĕ; 3) пĕр-пĕр наукăн мĕнле те пулин шкулта вĕрентекен аслăшĕ.

4) мĕнлете пулин науккăна, йе унăн пайне тĕплесе çырнă кĕнеке.

**Кăлентар**—лат.—1) Вăхăта шутласа пымалли çистемă, вăхăта астрономлă йавленисем тăрăх, çулталăк саманисем улшăннă тăрăх, кун-çĕр ушăнса пынă тăрăх шутласа пыни. Йулиан кăлентарĕ—(кивĕ çтил)—Йули Ђесăр вăхăтĕнђе тунă кăлентар: çĕр хĕвел тавра çавăрăннине тĕрĕс шутласа кăларман нирки кашни 100 çулта 1 кун кайа йулса пынă. Вăл шутпа Раççейре Октапĕрти Револуци пулађђен вăхăта шутласа пынă. Крикориан кăлентарĕ—Римре Крикори паппă пулнă вăхăтра йышăннă кăлентар (çĕнĕ çтил): Йулиан кăлентарĕнђен 13 кун малта пырать. Халĕ мĕн пур тĕнђипе тенĕ пекех çĕнĕ çтилпе шутлаççĕ. 2) Çулталăкра мĕнле ђисла мĕн кун пулнипе, хăçан мĕнле пăраçнăсем пулмаллине, тата урăх тĕрлĕ çветенисем çырса пухнă кĕнеке.

**Кăркăс**—Раççейĕн хĕллехи хĕвеланăç йенђе, çеçен хирсенђе выђăх усраса пурăнакан халăх, хађĕ хăйсен Ахтономлă Кăркăс Респуплики пур.

**Кетăр**—крек.—Хыр майлă илемлĕ йăвăç, ђăрăш икелли майлă кетăр икелĕ ăшĕнђе вĕтĕ тутлă мăйăрсем ÿсеççĕ.

**Кенерал (Йанрал)**—лат.—Револутсиђђенхи Раççейре—ђи аслă ђинлă ђинавниксемпе тĕрлĕ аслă охвитсерсем: йанрала хресђен тавраш питĕ сайра лекнĕ, пуринђен ытла вĕсем улпут тавраш аđисенђен тухнă.

**Кени**—лат.—Питĕ шутсăр ăслă, йе пĕр пĕр ĕçе калама çук лăйăх тума пултаракан çын.

**Керпари**—лат.—Хут хушшине хурса типĕтнĕ, пĕр-пĕр вырăнтан пухнă йывăç-курăксем.

**Керманђи**—Тĕнђери вăйлă патшалăхсенђен пĕри, техникă тĕлĕшĕнђен пуринђен те малта пынă, анђах 1914—18-мĕш

çулсенђи вăрçă хыççăн çĕнтерекен патшалăхсем мĕн пур пек вăйне сăхса тăнăран, Кермађи халĕ питĕ нађарланса кайнă. Вăрçăра çĕмĕрсе тăквă хыççăн—Кермађи халăхĕ Виђкелм патшана кăларса пăрăхса, пуршуаçилле респупликкă тунă. Пуршуаçи кунран-кунах хытă хĕсĕрлесе пынăран, Кермађи ĕççынни сотсиал-темократсенђен сивĕнсе, комунисcем майлă пулса пырaт, револютси хумĕсем кунран-кунах вăйлăланса, аслăланса пыраççĕ.

**Кеокрахви**—крек.—Çĕр ђăмăркки çинђен, ăна тĕрлĕ йенђен пăхса, вĕрентекен наукка.

**Кеотеçи**—крек.—Çĕр çиййĕн тĕсне йĕрлесе, ăна карттăсем çине ўкерессине вĕрентекен наукка.

**Кеолоки**—крек.—Çĕр ђăмăрккин историйĕ çинђен вĕрентекен наукка.

**Кеометри**—крек.—Маттематтиккăн пайĕ: линисен, çисепĕн, йапаласенĕн вăрăмланас—сарăлас майĕсем çинђен вĕрентет.

**Киттай** — Аçин хĕллехи хĕвелтухăç йенђи пысăк, шутсăр вумай халăхлă патшалăх; Промышлĕннăç тĕлĕшĕнђен, култтурă тĕлĕшĕнђен ытти тĕнђери халăхсенђен питĕ нумай кайа йулнă.

**Кислота**—Йўçĕ; елементсем кислоротпа хутшăнсан пулакан йўçĕ йапаласем.

**Килокрам**—Пин крам=$2^1/_2$ кĕренке.

**Километтăр**—Пин меттăр=467 ђалăш.

**Кирса**—ним.—1) Тапак тултарса пирускă тума хатĕрлесе хунă хут. 2) тарпа пуђă тултарса патрун тума хатĕрлесе хунă кĕпçе.

**Кимӑн**—крек.—Мухтав йурри Патшалӑхри управлени характӗрне кӑтартан йурӑ патша ђухнехи кимӑн—„Турӑ патшана сыхла,“ пролеттариат кимӑнӗ—„Интернатсионал“).

**Кимнаҫи**—крек.—Патша Раҫҫейӗнђе пуйансен ађисене вӗрентекен вӑтам шкул.

**Кимнаҫттиккӑ**—крек.—Оркансӑма тӗреклентермешкӗн ӳт-пӗве тӗрлӗ ҫистемӑсем тӑрӑх выђатса-хускатса вӑй кӳртсе пымалли майсем.

**Кимнаҫторккӑ**—Ҫийелтен тӑхӑнмалли пиншаклӑ ҫӗленӗ хулӑн кӗпе.

**Кинематтокрӑх**—крек.—Тӗрлӗ йапаласене, йе пӗр-пӗр йавленине вӗсем хускалса тӑнӑ ҫӗртех питӗ хӑвӑрт вӑрӑм ђеђђулоитран тунӑ ленттӑ ҫине хоттокрахвилесе пыраҫҫӗ. Ҫав лентгӑна хытӑ ҫутатса ҫутгине екран ҫине ӳкерсен, ленттине пӗрмай шутарса пырсан, екран ҫинђе йапаласем хускалнӑ пек курӑнса пыраҫҫӗ. Ҫавӑн пек карттинсем кӑтартнине, кӑтартакан уђрештенисене кинематтокрӑх, йе кӗскен „Кино“ теҫҫӗ.

**Клас**—лат.—1) Етем опђӗствинђе—пурӑнӑҫра, ӗҫре пӗр пек инттересcемпе пӗрлешше тӑракан ҫынсем; 2) шкулсенђе—пӗрпек вӗренсе пыракан ађасен ушкӑнӗ, вӗсем вӗренекен пӳлӗм; 3) пӗр типлӑ йапаласен расређӗ.

**Клуп**—анк.—1) Пӗр инттереслӗ ушкӑнӑн ђленӗсем тӗрлӗ ӗҫҫем тума, йе ахаљ вӑхӑта ирттерме пухӑнакан ҫурт. 2) Проппакантӑпа акиттатси ӗҫне клуп меттођӗсемпе пурӑнӑҫа кӳртме тӑрӑшакан политҫут уђрештени.

**Клевӗр**—ним. Ђавка пуҫ, кайӑк пуҫ: утӑ тума акакан курӑксенђен пуринђен те ытла хресђен хушшинђе сарӑлнӑ питӗ усӑллӑ курӑк.

**Клишше**—хран.—Пĕр-пĕр йапалан сăнне хут çине нумай екçемпђар ӳкермешкĕн çав йапалан тĕспе йывăç, йе урăх йапала çине пиђет пек ӳкерни.

**Климăт**—крек.—Паллă вырăнти çанталăк улшăнăвĕсенђен пĕрмайах палăрса тăракан вăтам çанталăк; нӳрлĕ (тинĕсле) климăт—ђас-ђасах çумăр çуса тăракан, хĕлле ытла сивĕ мар, çула ытла вĕри мар вырăнсен климăђĕ типĕ (конттинентла) климăт—çумăрсем сахал пулакан, хĕлле ытла сивĕ, çула ытла вĕри пулакан вырăнсен климăђĕ.

**Клиниккă**—крек.—Тухтăра тухма вĕренгекен шкулсен, ђирлĕ çынсене пăхса, вĕренекенсене хăйсен ĕçне практиккăра кăтартса пыма тунă пуђнитсă.

**Клопăс**—лат.—Çĕр ђăмăркки çийелтен пăхсан мĕнле курăннине кăтартма тунă йапала.

**Крахвит**—крек. Уклерот тĕсĕсенђен пĕри, сăрă, меттал çуттиллĕ, кăранташ варрисем тăвакал минерал.

**Кратăс**—лат. 1) Сивĕпе ăшша кăтартакан йетинитсă; 2) ерехсăрасен хăватне кăтартакан йетинитсă; 3) кеометрире çаврашкан 360-мĕш пайĕ.

**Краттĕр**—крек. Вулккансен (вут тухса тăракан сăртсен) çăварĕ.

**Краштăн**—Сослови привиллекисене пĕтернĕ опђĕствăра—опђĕствăн пур ытти ђленĕсемпе пĕр пек правăллă ђленĕ. Краштăн вăрçи—пĕр патшалăхри классем пĕр-пĕринпе вăрçни.

**Крам**—крек. — Меттăр çистемин йапала йăвăрăшне виçмелли виçен йетинитси—Тселççи термометтăрĕпе+4° купла сантиметтăр ăшне тултарнă шывăн йăвăрăшĕ.

**Краматтиккă**—крек.—Ђĕлхен сакконĕсемпе йĕркисене тĕплесе вĕрентекен науккă: виçĕ пайа уйрăлса тăрат (хонеттиккă, морхолоки, çинттăкçис).

**Кранит**—лат. Кристалла пĕрђĕллĕ питĕ хытă ђулсем: уйри шпат, квартсă, çлута кристалĕсенђен пулса тăрат, хытă, тĕреклĕ пирки тĕрлĕ çурт йĕрсем, памĕтниксем тунă çĕре кайат.

**Крушок**—выр—Пĕр-пĕр ĕç тума пухăннă, пĕр уставпа ĕçлекен пĕђĕк ушкăн.

**Крепĕç**—1) Тăшмансем пырса çĕмĕресрен вăрçă техникки тăрăх лайăх хўтленĕ хула; 2) к р е п ĕ ç в ă х ă ђ ĕ— хресђенсем улпутсен аллинђе, вĕсен йапали шугĕнђе пулса тăнă вăхăт, Раççейре 1861-мĕш çулђђен пулнă.

**Кретит**—лат.—1) Кивçен панипе илекен хăй парăмне каранттилени; 2) кама та пулин кивçен парас тĕлĕшрен шанни; 3) пуххалттери кĕнекисем çинђе—расхутсене çырса пыракан сылтăмйенђи странитсă.

**Криттиккă**—крек.—Пĕр-пĕр йапалана, йе просветенине пур йенђен те тĕпђесе, лайăххипе лайăх мар йенĕсене кăтартса пани.

**Кристал**—крек.—1) Пĕр тĕрлĕ йапалан хăй тĕллĕнех пулса тăракан, таса, çимметриллĕ, илемлĕ тĕпренђĕкĕ, сăмахран: тăвара шыва йарса ирĕлтерсен, шывне вĕретсе пăслантарса пĕтерсен, савăт тĕпĕнђе тăвар вĕтĕ кĕтеслĕ-кĕтеслĕ таса кĕрпе пулса йулат, çав кĕрпесем тăварăн кристалĕсем пулаççĕ; 2) таса, çутă, илемлĕ, пĕђĕк йапала.

**Криçис**—крек.—1) Ђирсенђе—ђăн йăвăр, хăрушă вăхăт; 2) хăй хыççăн пысăк улшăнусем тăвакан сопытти; 3) п р о м ы ш л е н н ă ç к р и ç и с ĕ—каппитталисăмлă опђĕствăра производствă анархийĕ пулнă пирки тĕрлĕ таварсене халăх

илме пултарнинђен ытлашши туса тултарнăран пĕтĕм промышленнăç ђарăнса ларма тăнă вăхăт. Каппитталисăмла опђĕствăра криçиссем вăхăтран-вăхăтран пулсах пыраççĕ. 4) Министерствă криçисĕ—пуршуаçи патшалăхĕсенђе пур министăрсем харăс отставкăна тухса, тепĕр капинет тунă вăхăт.

**Крим,—Кримировкă**—хран.—Тĕрлĕ краскăсемпе, суйа çӳç-сухалсем çыпăçтарса пите-куçа паллайми улăштарса йани, арт̆т̆иссене питĕ кирлĕ йапала.

**Кроккотил**—лат. 1) Кăнтăрла йенђи, ăшă шывсенђе пурăнакан пысăк, 10 меттăр тăршшĕне çитекен, калта; çурисене çăмарта туса, çăмартисене вĕри хăйăр ăшне хурса, кăларать. 2) Пур Раççейĕпе ђапа тухнă йуморисла шурнал йађĕ.

**Квалихвиккатси**—лат.—1) Ĕçе мĕн ђухлĕ йурăхлине кăтартса хуни; ĕçе пĕлнин расређĕ; 2) ушкăнран ăрасна уйăрса хуни.

**Кварт̆и**—ит.—Ђи лайăх салтаксенђен тунă, арминђен ăрасна правасемпе уйрăм тăракан çар. Хĕрлĕ кварт̆и—револђутсипе çăлса илнĕ ирĕксене сыхлама хăйсем ирĕккĕн пухăннă çынсенђен тунă çар. Окт̆апĕрти револђутси хыççăнах Раççейри пролеттариата пур тăшмансенђен те Хĕрлĕ кăварти сыхласа тăнă. Шурă кварт̆и—револђутсишĕн тăрăшакансемпе çапăçма тĕрлĕ охвитсерсемпе улпут-хуçасем майлă çынсенђен пухнă çар.

**Квитантси**—**хран**—Илнĕ тесе алă пусса панă хут.

**Коалитси**—лат.—1) Темиçе патшалăх пĕр шухăш тытса, ăна тумашкăн килĕшни; 2) темиçе политтиккă парт̆т̆и пĕр ĕçе тумашкăн тунă сойус.

**Кокс**—Сывлăшсăр çунтарнă çĕр кăмрăкĕ—метталсем шăратнă çĕрте питĕ кирлĕ йапала.

**Копператтăр**—Копператсире ĕçлекен, копператси ыйтă-вĕсене ăста пĕлекен çын.

**Копператси**—лат.—Пĕрлешӳ; темиçе çын хуçайствă тĕлĕшĕнђен усă курмашкăн тунă пĕрлешӳ. Копператси темиçе тĕрлĕ пур: потрепиттĕл копператсийĕ—хăйĕн ђленĕсем вађђи кирлĕ йапаласене йӳне тупса илсе парашшăн тăрăшаť; промысла копператсийĕ—тĕрлĕ ал ăстисем тăвакан таварсенђен ытларах усă курма тăрăшаť; йалхуçайстви копператсийĕ—хресђен хуçайствин таварĕсене сутса, хресђене кирлĕ таварсем йӳнерех тупса параť; кретит копператсийĕ—укçа кивçен параť.

**Коппи**—лат.—1) Мĕне те пулин ним улăштармасăр, мĕн çине пăхса тунă çавăн пекех туса хунă йапала. 2) токкумĕнтсене, йе картťинсене ним улăштармасăр ӳкерсе илнĕ токкумĕнтсем, йе картťинсем.

**Котексă**—лат.—1) Сакконсенә çистемăласа пухса çырнă кĕнеке. 2) Пĕр ыйту çинђен тухнă сакконсене пухса çырнă кĕнеке.

**Коťтировкă**—хран.—Пиршăра хут укçасен хакне кăтартса пыни.

**Космокрахви**—крек.—Астрономинђен, кеокрахвирен, меттеоролокинђен илсе кĕскен çырнă çветенисем.

**Космопполит**—крек.—Космопполиттисăма хапăл тăвакан; тĕнђе краштăнĕ.

**Космопполиттисăм**—крек.—Натсионалисăма хирĕç пыракан вĕрентӳ: пур тĕнђери халăх пĕр патшалăх краштăнĕ пек, пĕр тăван пек пулмалла тесе вĕрентет, анђах харпăрхăй патшалăхне йуратса, уншăн çапăçасса пĕтерме тăрăшмасť.

**Колантї**—Йевроппăн хĕвеланăç йенђи пĕђĕк патшалăх, йалхуçайстви ĕçне лайăх тунипе ђапа тухнă.

**Коллеки**—лат.—Пĕр-пĕр уђрештенине тытса тăракансен ушкăнĕ: уђрештенин пысăкрах ĕçĕсене пĕрле пухăнса шут туса йышăнаї.

**Коллектив**—Ушкăн; пур те пĕрлешше пулнă ушкăн; комунă.

**Коллективлă**—Пур те, ушкăнĕпе (пĕр-пĕр йапалана пур те пĕрле ĕçлесе тунă пулсан, çав йапалана коллективлă ĕçпе тунă йапала теççĕ).

**Коллекси**—лат.—Хăш йенђен те пулин инттереслĕ, пĕр йевĕрлĕ йапаласен пуххи.

**Колоњи**—лат,—1) Пĕр-пĕр патшалăхăн тĕп çĕрĕнђен уйрăм выртакан, урăх халăх пурăнакан çĕр. 2) Инçетрен йут вырăна куçса ларнă йал. 3) Соолокире—пĕр-пĕрипе орканисла çыхăнса тăракан интивитсен ушкăнĕ.

**Колоњиаллă**—к о л о ђ и а л л ă п о л и т т и к к ă—каппитталисăмла патшалăхсен колођисене експлоаттатсилесе, колођири çынсене алăра тытса тăмалли йĕркесем. К о л о ђ и а л л ă т а в а р с е м—колођисенђен илсе килнĕ таварсем.

**Колоњисатси**—Нађар куђттураллă халăхăн çĕрне вăйлă патшалăх халăхĕ нумайăн куçса кайса, хăйсен аллине туртса илни.

**Колоњисатсилени**—Куçса ларни; пĕр-пĕр патшалăх йут çĕрте хăйĕн колођисем туса хуни.

**Командировкă**—Слушпă ĕçĕпе инçе çĕре кайса килни; ĕçе кирлĕшĕн инçе çĕре кайса вăхăтлă пурăнса килни.

**Комунă**—лат.—Пĕрле ĕçлесе, пур ĕçлесе тупакан йапаласемпе пĕрле усă курса пурăнакан ушкăн. Париш комунĕ çинђен „Париш комунĕ“ сăмаха пăхмалла.

**Комунис**—Комунисла парттийён ђленĕ.

**Комунисăм**—1) Маркçисăм: етеме етем эксплоаттатсиленине пĕтерсе, пур происвотствă орутисемпе пур протуктăсене пĕтĕм ĕç халăхĕ аллине памалла, кашни ĕçлекентен хăй пултарнă таран ыйтса, хăйне кирлĕ таран памалла тийекен сотсиалла вĕрентӳ. 2) Комунисăмла опђĕствă йĕрки.

**Комунисла Инттернатсионал**—„Инттернатсионал" сăмаха пăхмалла.

**Комунисла парттисем**—Пур патшалăхсенђе те ĕçлекенсен класĕн аванкарђĕ пулса тăракан револђутсилле парттисем, Комунисла Инттернатсионал йертсе пыракан, ĕçлекенсен класĕн тĕреклĕ, шанђăклă вăйĕ. Раççейри комунисла партти çинђен „Р.К.П." сăмаха пăхмалла.

**Комунисла револђутси**—1) Раççейре 1917-мĕш çулăн Октапĕр уйăхĕнђе пулнă револђутси; 2) Пĕтĕм влаçа комунисăмшăн тăрăшакансен аллине паракан револђутси.

**Кометтă**—крек.—Хӳреллĕ çăлтăр: хĕвел тавра питĕ тăсăк, вăрăм еллипсă тăрăх çаврăнакан йапала, хăй çуттипе, йе хĕвел çинђен ӳкекен çутăпа çутатать. Ĕлĕкхи тĕттĕм çынсем, пупсен сăмахне ĕненсе, кометтăсене турă йăвăр вăхăта пĕлтерсе йарать тесе шутланă, халĕ астрономсем хăш кометтă мĕнле çулта курăнасса темиçе çул малтан пĕлсе тăраççĕ.

**Комети**—крек.—1) Кулăшла трамă; 2) лайăх мар йапаласенђен кулса, вĕсене трамă хормипе çырса кăтартнă происветени.

**Комертси**—лат.—Сутуилӳ.

**Комиттет**—лат.—Мĕнле те пулин ĕçе туса татма, йе орканисатси ĕçне туса пыма вăхăтлăха, йе пĕрмайах ĕçлеме суйласа ларнă çынсем; Ĕçтăвакан Комиттет (Ĕçтăвком)—Ĕçлекенсемпе хресђенсен, хĕрлĕ çар салтакĕсен теп-

путтађёсен канашёсем хăйсен ĕçне сйес саланнă вăхăтра туса тăма суйласа лартакан уђрештени (çынсем). Партти Комиттеђĕ—партти сйесĕ хăй ĕçне туса тăма суйласа лартакап çынсем (уђрештени).

**Комиссар**—хран.—Канаш Правиттĕлстви хушнипе ĕçлекен çын. Халăх Комиссарĕ—Халăх Комиссариађĕн пуçлăхĕ.

**Комиссариат**—1) Канаш Раççейĕн тĕп ĕçĕсене туса тăракан уђрештенисем (революци пулађђенхи шутпа—министерствăсем). 2) Вырăнсенђе—çар ĕçне пăхса тăракан уђрештени, Ĕçтăвкомсен пайĕ.

**Комиççи**—лат.—Пĕр-пĕр ыйтăва пăхса тухса, татса хума вăхăтлăха суйласа лартнă çынсем.

**Коминттерн**—III-мĕш Комунисла Инттернатсионала кĕскен калани.

**Комппас**—хран.—Хускалса тăракан макнитланă йĕппĕн икĕ вĕçĕ çурçĕрпе кăнтăрла йенĕсене кăтартса тăракан хатĕр.

**Конккурентси**—лат.—Сутуилӳре, йе урăх ĕçре темиçе претприйатти тавлăшша ăмăртмалла ĕçлени.

**Конкретлă**—лат.—Татăклă, паллă, куçа курăнса тăракан.

**Конкрес**—лат.—1) Тĕрлĕ парттисен претставиттĕлĕсем пĕтĕм тĕнђерен пухăнса тунă сйес; 2) вăрçăсем хыççăн килĕшӳ тума пухăннă типломатсен сйесĕ; 3) Нумай вĕреннĕ çынсен пĕр-пĕр ыйтăвпа пĕтĕм тĕнђерен пухăнса тунă сйесĕ.

**Комппањи**—хран.—1) Ушкăн; 2) Ĕçе пĕрле тăвакан промышлĕнниксен, йе сутуилӳ тăвакансен ушкăнĕ, пĕрлешӳ.

**Конхверентси**—Тĕрлĕ ыйтусене калаçса татма пухăннă сйес. Партти конхверетсийĕ—кĕпĕрнесенђе, йе уйес-

сенҫе партти оркнисатсийĕн претставиттĕлĕсен сиесĕ.

**Конхвискатси**—лат.—Пĕр-пĕр айăпшăн пурлăха хысна-на туртса илсе пани.

**Контуктăр**—лат.—Пойăссем ҫинҫе вакуна пăхса пыра-кан, вакунти йĕркесене астуса пыракан ҫын.

**Контсеҫҫи**—лат.—Кама та пулин пĕр-пĕр вырăнта пы-сăк претприйатти туса усă курма, правиттĕлствăпа килĕш-ше, ирĕк пани.

**Контсерт**—хран.—Тĕрлĕ мусăккă происветенисене халăх умĕнҫе выҫаса кăтартни.

**Контрипутси**—лат.—Вăрҫăра ҫĕнтерекен патшалăхсем ҫĕнтерĕннĕ патшалăхсенҫен пусмăрласа илекен укҫа, йе тĕр-лĕ йапаласем. Иртнĕ вăрҫăра Хрансипе ун майлисем Кер-маҫи ҫине ҫăтма ҫук йывăр контрипутси хунă.

**Конспиратси**—лат.—Вăрттăн, пытанса, хăй ĕҫĕсене ни-кама та пĕлтермесĕр ĕҫлени: ĕлĕк патша ҫух пур револют-силлĕ парттисем те конспиратсилле ĕҫленĕ, мĕншĕн тесен патшапа унăн улпуҫĕсем револютсионерсене, тытнă пеккине вĕлерсе, йе Ҫĕпĕре йарса пынă.

**Конституттутси**—лат.—Патшалăх йĕркин тĕп саккунĕсем.

**Конструкси**—лат.—Пĕр-пĕр йапалан пайĕсем мĕнле пĕр-пĕринпе ҫыпăҫуллă ларни; йапалан ҫыпăҫĕвĕ.

**Конҫерваттăр**—Кивĕ, кирлĕ мар йĕркесене улăштарма-сăр усрашшăн тăрăшакан ҫын.

**Конҫпектă**—лат.—Пĕр-пĕр ыйтăва кĕскен, тĕп шухăшĕ-сене анҫах кăтартса ҫырни.

**Конорар**—лат.—Ирĕклĕ прохвеҫҫиллĕ ҫынсене ĕҫҫемшĕн тӳлекен укҫа.

**Корисонт**—крек.—Йĕри таврa пăхсан ҫĕрпе пĕлĕт пĕр лешнĕ пек курăнакан вырăн; ҫын пĕр вырăнтан пăхса ку-

ракан çĕр.

**Корреспонтентси** — Корреспонтентсем çырса йаракан хутсем.

**Корппоратси**—лат. 1) Опђĕствăн пĕр инттереспе, пĕр прохвеççипе пĕрлешше тăракан пайĕ (сăмахран: тухтăрсен, вĕреннĕ çынсен корппоратсийĕ). 2) Опђĕствăн ăрасна уставпа, ăрасна правасемпе пĕрлешше, орканисатсиленсе тăракан пайĕ.

**Коррректăр**—лат.—Типпокрахвисенђе – çапма хатĕрлекен хутăн йăнăшĕсене тӳрлетсе пыракан çын.

**Корреспонтент**—лат.—Хаçат-шурналсем вађђи тĕрлĕ çветенисем çырса йарса тăракан çын.

## Х.

**Хаккуљтет**—ним.—Универçиттетăн пĕр пайĕ: пĕр тĕрлĕ науккăсене вĕрентекен аслă шкул пек пулса тăраӗ.

**Хаккир**—Интири ыйткаласа çӳрекен манах, тĕрлĕ хвоккуссем тăвакан.

**Хактă**—лат.—Ђăн пулнă йапала.

**Хактăр**—лат.—1) С у т у и л ӳ р е—суттăвакана таварсем тупса паракан. 2) Т и п п о к р а х в и с е н ђ е—ĕçе астуса, пăхса пыракан. 3) Пĕр-пĕр ĕçе, йавленине, сопыттине вăй парса пыракан услови.

**Хапрăк**—лат.—Ĕçе машшинсемпе тăı акан, нумай ĕçлекенлĕ пысăк претприйатти: таварсене рынăк вађђи хатĕрлени хапрăкăн ремеслерен уйăрăлса тăракан палли.

**Хаприккат**—Хапрăк протукђĕ, хапрăк хатĕрлекен таварсем.

**Хаҫат**—ит.—Кашни кун, йе ернере пĕр хутран сайра мар тухса тăракан, пĕр йатлă, номĕрленĕ хут: тĕнҫере мĕн пулнине пĕлтерсе, хаҫхи вăхăтăн ыйтăвĕсене тĕрлĕ йенҫен кăтартса пыраҫ.

**Халат**—ар.—Ҫийелтен тăхăнмалли, сăкман майлă, ҫўхе, илемлĕ тумтир, вырăссен—ҫемҫе йапаларан ҫĕлетнĕ, шалпар, пўртре тăхăнакан йарт тумтир.

**Хамили**—лат.—1) Ҫемйе, ăратне; ăратнене кĕрекен пур ҫленĕсем; 2) ҫемйери, ăратнери ҫынсен хушамаҫ; 3) кирек мĕнле хушамат.

**Ханаҫҫик**—Пĕр итейăпа анҫах, ытти ҫинҫен ним шухăшламасăр пурăнакан ҫын.

**Ханаттисăм**—Пĕтĕм пурăнăҫа пĕр итейăна пăхăнтарса, пĕр шухăшламасăр, ҫав итейăшăн анҫах тăрăшша пурăнни.

**Ханттаҫи**—крек.—1) Пур-ҫук йапаласем ҫинҫен ҫарусăр шухăшласа кайни; 2) шухăш, йумах, тĕрĕс мар, ҫăн пулма пултарайман йапала.

**Хараҝтĕр**—крек.—1) Пĕр-пĕр ҫыннăн, халăхăн, йе урăх йапалан ытти ҫавăн пек йапаласенҫен ăрасна палăрса тăракан ăшри каҫĕствăсем; 2) ҫыннăн кăмăлĕ; 3) нимле ҫарусене те пăхмасăр хăй ирĕкне кăтартма пултарни; ирĕкĕн, кăмăлăн вăйĕ.

**Хариҫҫей**—крек.—Икĕ питлĕ, ултавҫă ҫын.

**Хаос**—крек.—Йĕркесĕрлĕх, пăтранҫăк, ним йĕрки-паллине тупма ҫукки.

**Хуҫа**—1) Пĕр-пĕр йапалана ҫын ку манăн йапала тет пулсан, ҫав йапала ҫăнахах та унăн пулсан,—ҫав ҫын ҫав йапалан хуҫи пулаҫ. 2) Пуйан ҫын, хăй алливҫе нумай йапала тытакан.

**Хуҫайствӑ**—1) Пӗр хуҫа аллинҙе тӑракан, ыттисенҙен уйрӑм, происвотствӑ йетинитси (хресҙен хуҫайстви). 2) Опҙӗствӑн происвотствӑ тӗлӗшӗнҙен уйрӑм паллӑ тӑракан пайӗ (йалхуҫайстви). 3) Етем опҙӗствин историнҙе происвотствӑ тӗлӗшӗнҙен ытти вӑхӑтсенҙен уйрӑм паллӑ тӑракан вӑхӑт ӑн йӗркисем (каппитгалисӑмла хуҫайствӑ, крепӗҫ хуҫайстви т. ы.).

**Хункси**—лат.—1) Хиҫиолокинҙе—оркӑнсем ӗҫлени. 2) тӑвас ӗҫ 3) мӗлле те пулин мехханисӑмӑн, йе вӑйӑн ӗҫӗ.

**Хелйеттон**—хран.—1) Хаҫатӑн литтераттурӑ пайӗ. 2) пӗҙӗкҫеҫ, саттирӑлла, пурӑнӑҫран илсе ҫырнӑ статйа.

**Хермӑ**—1) Практиккӑра кӑтартса вӗрентме тунӑ йалхуҫайстви уҙрештени; 2) ҫавӑн пек уҙрештенин ҫӗрӗ.

**Хевраљ**—Ҫулталӑкӑн 2-мӗш уйӑхӗ; Нарс уйӑхӗ.

**Хевраљти револјутси**—1) Хрансире 1848-мӗш ҫулӑн хевраљ уйӑхӗнҙе пулнӑ револјутси; 2) Раҫҫейре 1917-мӗш ҫулӑн, хевраљӗн 27-мӗшӗнҙе (кив шутпа) Питӗрти ӗҫлекенсемпе салтаксем Микулай патшана кӑларса сирпӗтни: Раҫҫейри аслӑ револјутсин пуҫламӗш кунӗ.

**Хеоталисӑм**—хран.—Вӑтам ӗмӗрсенҙе Йевроппӑри пурӑнӑҫӑн, вӑл еппоххӑна ытти еппоххӑсенҙен уйӑрса тӑракан паллӑсем: мӗн пур хуҫайствӑ ҫӗр ӗҫӗ ҫинҙе, ҫӗр пӗтӗмпех улпутсен (хеоталсен) аллинҙе, хеоталсем пӗҙӗккисем аслӑраххисене пӑхӑнса пурӑнаҫҫӗ, ҙи аслӑ, пуринҙен пуйан хеотал патша, короҙ пулса тӑрат.

**Хикси**—лат.—Суйа, ахаљ шухӑшласа кӑларнӑ йапала.

**Хиҫиккӑ**—крек.— Тӗрлӗ тулти сисӗмсемпе (туйӑмсемпе) сисекен йапаласен куҫас йавленисене пӑхса тӗплекен наукӑ; хиҫиккӑ пӑхакан йавленисем йапалан елеменҙӗсене улӑштармаҫҫӗ, йапалана, куҫнӑ ҫӗрте, ҫийелтен анҙах пӑхаҫҫӗ.

Хиҫиккӑ пӑхакан йапаласемпе йавленисем: ҫут, ӑшӑ, сасӑ, електриствӑлла, макнитла йавленисем, кассем, шӗвӗ йапаласем.

**Хиҫикла йапала**—Тулти туйӑмсемпе сисме май пур йапала; ӳтлӗ, тӗрӗс, ђӑн пур йапала. Хиҫикла кеокрахви—кеокрахвин ҫӗр питне пӑхса вӗрентекен пайӗ. Хиҫикла ӗҫ—алура вӑйӗ, мускӑл вӑйӗ кирлӗ ӗҫ.

**Хиҫиолоки**—крек.—Ђӗрӗ йапаласен хунксисене астуса, ҫырса, ӑнлантарса пыракан наукӑ.

**Хилиал**—Уђрештенин, йе орканисатсин уйрӑм ӗҫлекен пайӗ.

**Хилосохви**—крек.—1) Пур ытти ђӑнлӑхсен никӗсӗ пулса тӑракан, пуҫламӗш ђӑнлӑхсен наукки; етем пурӑнӑҫӗн, ырлӑхӑн, илемлӗхӗн тӗп проплемисене йӗрлесе шыракан наукӑ; 2) тӗрлӗ наукӑсем тӗплесе тупнӑ ҫветенисене кармониллe ҫинттӗслени. 3) Куманисӑмла наукӑсемпе тисђиплинӑсене (пҫиххолокине, локиккӑна, еттиккӑна, естеттиккӑна) пӗрлештерни. 4) пурӑнӑҫ ӑслӑлӑхӗ. Истори хилосохвийӗ—1) етем йӑхӗн историне хилосохви вӗрентнӗ тӑрӑх тӗрӗслесе ҫырни. 2) истори протсесӗсен тӗп саккунӗсене йӗрлесе ҫырни; 3) историне йӗрлесе пӗлмелли саккунсен теорийӗ.

**Хилосӑх**—крек.—1) Хилосохви тӗлӗшӗнђен ӗҫлекен ҫын; 2) хилосохви ҫиҫтемипе йӗрлесе ӗҫлекен; 3) хилосохвине шкулта вӗрентекен.

**Хилолоки**—крек.— Хилосохвилле, линквистиккӑлла, историлле наукӑсем. 2) халӑхӑн ђӗлхи, искуства, литтераттурӗ ҫинђен вӗрентекен наукӑ; 3) ђӗлхесем ҫинђен вӗрентни.

**Хими**—крек.—Елементсене пӑхса, вӗсем пӗрлешнине йӗрлесе, пӗрлешнӗ ђух палӑракан йавленисене астуса, пӗрлешнӗ хыҫҫӑн ҫӗнӗрен пулакан йапаласене тӗрӗслесе пыракан наукӑ.

**Хинин (хинă)** – Сивĕ ђиртен аван пулăшакан, хинин йывăççин хуппинђен тăвакан шурă, шутсăр йӳçĕ порошок-емел.

**Хинљанťи**—Пуршуаçилле респупликкă: патша ђух Раççей импперин пайĕ пулнă. 1917-мĕшпе 1918 çулсенђе Хинљанťире Канаш влаçĕ пулнă, анђах нимĕç çарĕ пулăшнипе револ̡утсине пуршуаçи çĕмĕрсе тăкнă.

**Хирурки** –крек—Метитсивăн ђирсене алăпах (касса, вырнаçтарса лартса) тӳрлетекен пайĕ.

**Хироманťťи** – Çыннăн ал тупанне пăхса, унăн характĕрĕпе малалли пурăнăçне пĕлме тăрăшакан суйа искусствă.

**Хлоџ** – хран.—1) Патшалăхăн тинĕсри çарĕ, йе тинĕсри пур карапсем. 2) пĕр-пĕр паллă вырăнта ишше çӳрекен карапсем. С ы в л ă ш х л о ђ ĕ – Пĕр-пĕр патшалăхăн сывлăшра вĕçсе çӳремелли аппаратсемпе (йеропплансем, тиришапĕлсем, т. ы.) вĕсене пăхакан çынсемпе хатĕрсем—çав патшалăхăн сывлăшри хлођĕ пулаççĕ.

**Хлорă**—лат.—Паллă вырăнта, йе паллă еппоххăра ӳснĕ, йе ӳсекен курăк йывăççем.

**Хракси**—лат.— Пай, уйрăм. Пĕр-пĕр ушкăнра, йе парттире, тĕп парттинђен кăшт ăраснарах тăракан, пĕр шухăшлă çынсен уйрăм ушкăнĕ.

**Хрантси**—Хĕвел анăçĕнђи Йевроппăри пысăк, вăйлă пуршуаçилле респупликкă. 1914—1918 çулсенђи вăрçăра Раççейпе, Анклипе пĕрлешсе „Анттанттă“ йатлă сойус тунă. Вăрçă хыççăн пуринђен ытла револ̡утсине курайман респупликкă.

**Хрестоматťи**—крек.—Пĕђĕк литтераттурă происветенисене шкулсенђе вĕренмешкĕн пухса кăларнă кĕнеке.

**Хрониккӑ**—крек.—1) Пӗр-пӗр вырӑнта мӗн пулнине кунран-кун ҫырса пыни; 2) хаҫатра—хаӡхи вӑхӑтри вак-тӗвек сопыҭҭисене ҫыракан пай.

**Хронолоки**—крек.—1) Вӑхӑта виҫесси ҫинӡен калакан вӗрентӳ; 2) мӗнле те пулин сопыҭҭисем хӑш вӑхӑтра пулса пыни ҫинӡен ҫырни; 3) ҫулталӑк шуӡӗ.

**Хветератси**—хран.—1) Сойуслӑ патшалӑх; 2) Ахтономлӑ патшалӑхсен сойусӗ; 3) тӗрлӗ уйрӑм органисатсисен, йе опӡӗствӑсен сойусӗ.

**Хвелтшӗр**—ним.—Тухтӑр пумушникки.

**Хвоккус**— лат.—1) Оптиккӑлла кантӑк витӗр тухакан ҫутӑ пӗрҫӗре пухӑнакан пӑнӡӑ. 2) алура правурӗпе туса кӑтартакан тӗрлӗ пӑхса тӗлӗнмелле йапаласем.

**Хвонттан**—хран.—Йури тунӑ, йе хӑй тӗллӗн пулнӑ ҫӗрти шӑтӑкран ҫӳлелле тапса сирпӗнсе тӑракан шыв, йе урӑх шӗвӗ йапала (нехтӑ хвонттанӗ).

**Хоттокрахви**—крек.—1) Ҫутҫыру; ҫутӑ саккунӗсене вӗренсе, ҫутӑ пулӑшнипе тӗрлӗ карттинсем ӳкермелли майсем, меттӑтсем; 2) хоттокрахвипе карттинсем ӳкерекен ҫӳрт; ӳкернӗ карттинӗсем, карттӑӡкӑсем.

**Хонт**—1) тӗпӗ, никӗсӗ; 2) претприйаҭҭин тӗп каппитталӗ.

**Хор**—крек.—Темиҫе, тӗрлӗ сасӑллӑ, пӗрле йурлама пухӑннӑ ҫынсем, пӗр ҫын кӑтартнипе пӗрле йурлакан ушкӑн.

**Хормӑ**—лат.— Йапала тӗсӗ, калӑпӗ, ҫийелтен пӑхсан курӑнакан сӑнӗ.

## П.

**Пактери**—крек.—Микроскоп витӗр анӡах курӑнакан шутсӑр вӗтӗ кӑмпасем: тӗрлӗ йывӑр ӡирсем органисӑмра пактерисем ӗрӡесе кайнӑран пулаҫҫӗ, ӗрӡессе пактерисем питӗ хӑвӑрт ӗрӡесе кайма пултараҫҫӗ, нумайӗшӗ сивве те, вӗрине те ӡӑтма пултараҫҫӗ.

**Пахаш**—хран.—Ҫула кайнӑ ҭух пӗрле илекен йапаласем.

**Папкӑ**—ним.—Кӗнеке хуппи пек хутсем хумалли картунран тунӑ йапала.

**Паппӑ**—лат.—Каттоликсен тӗнӗнҭе—ҭи аслӑ пуҫлӑх пулса тӑракан архерей.

**Патталљйон**—хран.—Ҫар пайӗ: пулкӑн тӑваттӑмӗш пайӗ, тӑватӑ роттӑ.

**Патрулљ**—хран.—Тӳсурта тӑракан салтаксем.

**Патрун**—лат.—1) Киҭсӑ ӑшне тарӑпа пуҭӑ тултарса пӑшал ваҭҭи хатӗрленӗ йапала. 2) Хутран, йе картунран тунӑ мӗн те пулин ҭикмелли ҫаврака йӗнӗ.

**Патриархлӑ опҭӗствӑ**—Ӑрӑвӑн-ӑрӑвӑн уйрӑм пурӗнакан етем опҭӗстви: ӑру пуҫлӑхӗ—пуринҭен ватӑраххи, вӑйлӑраххи, пур те хисеплекен старик (патриарх) пулса тӑраӳ, вӑл ӑрӑвӑн ӗҫӗсене те, ӗҫлесе тупнӑ пурлӑха та хӑй пӗлнӗ пек майласа валеҫҫе пыраӳ.

**Патриот**—крек.—Ҫуралнӑ ҫӗршыва пит йуратакан, уншӑн хытӑ тӑракан ҫын.

**Патриоттисӑм**—крек.— Ҫуралнӑ ҫӗр-шыва питӗ йуратса, ӑна пуринҭен мала хурса, хытӑ тӑрӑшни.

**Паҭкӑ**—ним.—Пӗр ҫыхӑ, пӗр уйрӑм, пӗр пӳрнеске.

**Паспӑрт**—хран.—Ҫынна, вӑл кам иккенне, кӑҫта ҫуралса ӳснине, сӑнсӑпатне кӑтартса ӗнентерекен токкумӗнт.

**Пастовккӑ**—(сапастовккӑ) ит.—Хапрӑк-савӑт хуҫисенҭен ҫӑмӑлтарах ӗҫ условисем ҫӑлса илме ӗҫлекенсем пур те килӗшше харӑс ӗҫлеме пӑрахни. Пастовккӑсене економи, йе политтиккӑ тӗлӗшӗнҭен пурӑнӑҫа лайӑхлатасшӑн тума пултараҫҫӗ. Ӗҫлекенсен сойусӗсем вӑйлӑланса пынӑҫемӗн пастовккӑсем те хӑрушӑланса пыраҫҫӗ: хӑш ҭухне пӗр-пӗр вырӑнта ӗҫлекенсем пур те пӗтӗмпе пӗрлешше пастовккӑ тӑваҫҫӗ.

**Палакан**—перҫ.—Йармăрккасенҫе камитсем кăтартакан ҫурт.

**Палаткă**—Ҫул ҫӳренĕ ҫух кĕрсе выртмалли пир карса тăвакан хушă.

**Палаҫ**—Сутпа вĕлермелле тунă ҫынсене вĕлерекен.

**Паланс**—хран.—Пуххалттеринҫе—укҫа шутне ҫырса пыракан кĕнекесем тăрăх укҫа пухăннипе саланнине (услампа расхута) пĕлмешкĕн танлаштарни.

**Паљсам**—арап.—Мĕнле те пулин имлĕхлĕ ҫу.

**Панк**—ит.—Кретитла уҫрештени: кретит ҫистемине тума тата пушă укҫасене пĕр ҫĕре пухса, вĕсене кирлĕ ҫĕре парса пыма тăрăшаҭ.

**Панккă**—Витре майлă хăлăпсăр савăт.

**Пантă**—ним.—Вăрă-хурахсен ушкăнĕ.

**Пантит**—ним.—Вăрă-хурах.

**Пантероҍ**—хран.—1)Кĕнеке-хаҫатсене пуштăпа йанă ҫух ҫĕркесе, ҫине атрĕҫ ҫырса йаракан хут. 2) тĕрлĕ таварсем ҫине (сăмахран: спиҫкă, тапак, ҫей) актсис налокĕ илнине кăтартса ҫыпăҫтаракан пĕҫĕк хут татăкĕ.

**Парак**—хран.—Йăвăҫран ҫăмăлҫеҫ, наҫҫаслăха тунă ҫурт.

**Паракрăх**—крек.—Ҫырăвăн пайĕсене уйрăм кăтартакан паллă (§).

**Парат**—хран.—1) Пĕр-пĕр праҫнăк йаҫĕпе пур хулари ҫарсене пухса, хула варринҫе вĕсене пăхса тухни; 2) аслă пуҫлăхсем ҫарсене пĕр ҫĕре пухса пăхса тухни.

**Парашӳт**—хран.—Сывлăшри йапаласене ҫас ӳкме паман, пысăк сунҫăк майлă, йапала, пуринҫен ытла авиаттăрсене, сывлăшра инкек-синкек пулсан, ҫĕре сиксен хытă ӳкме памасăр усă кăтартаҭ.

**Паруљ**—хран.—Ђасовăйсене, йе тусурта çӳрекен салтаксене йут çынсене хăйсеннинђен уйăрмашкăн вăрттăн калакан, малтан килĕшше йышăннă сăмах.

**Парик**—ним.—Пуçри çӳçе, урăх тĕслĕ тума пуçа тăхăнакан, çӳçрен тунă йапала: театтăрсенђе арттиссем тăхăнаççĕ.

**Париккатӑ**—хран.—Револђутсисем тунă ђух çарсенђен сыхланма хуласем хушшинђе урама урлă тĕрлĕ мĕн алла кĕнĕ йапалана купаласа тунă ђару.

**Парикмаххĕр**—ним.—Çӳç касакан, париксем тăвакан çын.

**Париш**—тут.—1) Услам. 2) Хрансин тĕп хули: $3^1/_2$ мĕлйун çын, Йевроппăри ђи пысăк хуласенђен пĕри.

**Париш комунĕ**—1871-мĕш çул. мартăн 18-шĕнђе Паришри пролеттариат влаçа хăй аллине илсен тунă правиттĕлствă: 72 кун анђах пурăннă, пур Хрансири пуршуаçи пĕр çĕре пухăнса, пĕђђен тăрса йулнă хулари пролеттариата калама çук хăрушă çĕмĕрсе тăкнă. Халĕ Канаш влаçĕ Париш комунĕне асăнса, мартăн 18-шне праçнăк кун тунă.

**Партнер**—лат.—Ĕçе пĕрле тăвакан çын, йулташ.

**Парттер**—хран.—Театтăрта—стенăна тӳрĕ хирĕç ларакан айалти йĕркесем.

**Партти**—хран.—1) Пĕр тĕлшĕн ĕçлесе тăрăшакан çынсен орканисатсийĕ. Политтиккă парттисем: клас инттересĕшĕн тăрăшакан çынсене пĕрлештерсе тăракан парттисем, çавăнпа опђĕствăра миçе тĕрлĕ классем пур, çавăн ђухлĕ парттисем пулаççĕ: 1) помешђĕксемпе творенсен инттересĕшĕн тăрăшакан (реаксилле) парттисем; 2) каппитталиссемшĕн тăрăшакан (пуршуаçиллĕ) парттисем; 3) инттелекентсипе вак-тĕвек пуршуаçин парттисем; 4) пролеттариатăн револђутсилле партти. Пур политтиккă парттисенĕн те—кашнин

ăрасна прокраммипе, пур те килĕшше йышăннă тактикка пур. Прокраммăпа тактикка тăрăх мĕнле партти мĕншĕн тăрăшнине пĕлеççĕ. 2) кирек мĕнле пĕр пек йапаласен ушкăнĕ, кĕтӳ (пĕр партти литтераттурă, пĕр партти тапак, пĕр партти тавар т. ы.).

**Партком**—Партти Комиттеҫĕ.

**Парламĕнт**—лат.—Пуршуаçилле патшалăхсенҫе—халăх претставиттĕлĕсен саккунсем кăларакан пухăвĕ.

**Парник**—Ăшă йăран, панҫа.

**Пароменттăр**—крек.—Сывлăш йăвăрăшĕ улшăннине систнипе çанталăк улшăнасса кăтартакан хатĕр.

**Павари**—Керманин кăнтăрла йенҫи татăкĕ: 1919-мĕш çулта Павари ĕçлекенĕсем Канаш респупликки тунăҫҫĕ, анҫах йалти кулаксемпе правиттĕлствă çарĕсем, ĕçлекенсен респупликкине ҫасах çĕмĕрсе тăкнă. 1922-23 ç. ç. Павари хашшиссен тĕп йăви пулса тăнă.

**Пайук**—1918—21-мĕш çулсенҫе Канаш правиттĕлстви ĕçлекенсене кашнине кирлĕ таран нормă тăрăх парса тăнă çимĕççем.

**Пукçир**—анк.— Паршăсем туртса çӳрекен пăрахут.

**Пуквă**—Сас палли—ҫĕлхери сасса хут çине ӳкерме йышăннă паллă: „а“, „у“, т. ыт.

**Пуххалттери**—ним.— Укçа шут йĕрне кĕнекесем çине çырса пырса тĕрĕслемелли искусствă.

**Пуххалттĕр**—ним.—Кĕнҫелерсенҫе укçасене кĕнекесем çине çырса, пуххалттери кăтартнă пек тĕрĕслесе пыракан.

**Пупликкă**—лат.—1) Халăх, ушкăн, пуху. 2) хăш йенҫен те пулин пăхса пĕрлештерме май пур çынсенĕн ушкăнне пĕлтерекен сăмах (вакунри пупликкă, театтăра çӳрекен пупликкă т. ыт.).

**Пупликкатси**—лат.—Пĕлтерни; сăмахпа каласа, йе хаçатсем çине çапса пĕр-пĕр йапала çинђен пурне те пĕлтерни.

**Пуштă**—лат.—1) Çырусене, поссылккăсене, укçана, кĕнеке-хаçата атрĕссем тăрăх вырăна çитерсе паракан патшалăх уђрештени. 2) Пуштă кантурĕ.

**Пуљс**—лат.—Ђĕре сиксе, йуна ўтпĕв тăрăх салатнă çемĕн—йун тымарĕсем хускалса тăни; ал тымарĕ тапни.

**Пуљвар**—хран.—Уçăлса çўремешкĕн еретĕн-еретĕн йывăççем лартса тухнă вырăн.

**Пуљнитсă**—Йывăр ђирленĕ çынсене вырттарса, тухтăрсем астуса тăракан уђрештени.

**Пунт**—ним.—1) Пăлхавăр, халăх ним йĕркесĕр пăлханни; 2) „Пур Раççейпе Пољшăри йеврейсен сойусĕ"—1897 мĕш çулта пуçланса пĕрмайах сотсиалисăмла прокраммăпа ĕçлесе пынă. Раççейри ĕçлекенсен Сотсиал—темократтилле партийĕн I-мĕш сйесĕпе (1898 ç.) II-мĕш сйесĕ хушшинђе (1903 ç.) унăн ахтонмлă пайĕ пулса тăнă. 1903 ç. Р.Ĕ.С.Т. парттинђен уйрăлса, ăрасна ĕçлеме пуçланă, анђах 1906 çулта (Стокхољмри сйес хыççăн) каллах Р.Ĕ.С.-Т. парттине кĕнĕ. Октапĕрти револютси пулаççен пĕрмайах меншевиксем майлă ĕçленĕ, Канаш влаçĕ тĕрекленсе çитсен тин „Пунтăн" ђленĕсенђен нумайĕшĕ РКП-пе кĕрсе хутшăнса кайнă.

**Пурука**—Сăмах пани; кам та пулин тепĕр çын шанђăклă иккене кăтартса, ун вырăнне, кирлĕ пулсан, хам ђăтатăп тесе сăмах пани.

**Пуршуаçи**—хран.—Опђĕствăн происвотсвă оруйисене хăй аллинђе тытса тăракан клас, С.К.Р.С-сĕр пуçне пĕтĕм тĕнђипе влаçа хăй аллинђе тытса тăрат; пур ĕçре те усламшăн анђах тăрăшша, пуршуаçи, револютсиллĕ пролеттариата

питĕ кураймасŤ, пур револютсисене те пĕтерме тăрăшаŤ. Пуршуаçи класĕн усламĕсемшĕн, рынăксене туртса илсе, конккурентсине пĕтерме тăрăшша, тĕрлĕ пуршуаçилле правиттĕлствăсем пĕрмайах пĕр-пĕрипне вăрçça пурăнаççĕ: милиттарисăм (вăл сăмаха пăх) çулран-çул ӳссе, хăватланса пыраŤ.

**Пуршуй**—Пуйансене мăшкăлакан сăмах.

**Пурлак**—выр.—1) Пăрахутсем çук ђухне Атăл çинђе кимĕсем туртса çӳрекен çын. 2) Атăл тăрăх ĕçлесе çӳрекен.

**Пăсашир**—хран.—Çул çӳренĕ ђух, кирлĕ выр ăна илсе кайнăшăн укçа тӳлесе ларса пыракан.

**Петакок**—крек.— Вĕрентекен, уђђиттĕл, петакокиккăра ăста çын.

**Петакокиккă**—крек.—Çынна пур йенђен те пăхса ӳстерсе вĕрентесси çинђен пĕлтерекен наукă.

**Петтон**—лат.—Ђемĕнтпа шулгăра хăйăра хутăштарса тăвакан йапала: çурт-йĕр хунтамĕнђĕсем т. ы. йапаласем те тăваççĕ.

**Пессарапи**—Раççейĕн ђи хĕллехи хĕвеланăç кĕтессинђи кĕпĕрне: револютси вăхăтĕнђе Румыђи туртса илнĕ.

**Пеллетристиккă**—хран.—Илемлĕ литтераттурă происветенисем: романсем, повĕçсем, калавсем.

**Пелки**—Хрансипе КолланŤи хушшинђи пĕђĕк патшалăх: питĕ вăйлă промышлĕннăçлă. 1914-18 çулсенђи вăрçăра Пелки Кермаңине хирĕç вăрçнă. Тĕп хули—Прӳççĕл.

**Пенехвис**—лат.—Пур пухăннă укçине пĕр-пĕр арттиса парас йатпа театтăрта выђани.

**Пенçси**—лат.—Ĕçлекенсене, ĕçе йурăхсăр пулсан кашни уйăх, йе кашни çул тăранса пурăнмалăх парса тăракан укçа.

**Периот**—Ӑрасна паллӑсемпе уйрӑм тӑракан вӑхӑт: кеолоки, истори периоҫӗсем т. ы.

**Пӳтшет**—хран.—Тоххотсемпе расхутсене шутласа хунӑ ҫметтӑ.

**Пӳллеттен**—хран.—1) Пысӑк сопыттисем ҫинҫен (вӑрҫӑ ӗҫӗ йепле пыни, налок пухӑнса пыни т. ы.) правиттӗлствӑ вӑхӑтран вӑхӑтран пӗлтерсе пыракан хут. 2) мӗнле те пулин сиесӗн ӗҫӗсене пӗлтерсе 2-3 кунтан, йе ернерен тухса пыракан кӗнеке. 3) вӑрттӑн сасӑпа суйланӑ ҫух суйлакансем хӑйсем суйлакан ҫын йатне ҫырса паракан хут.

**Пӳро**—хран.—1) Пӗр-пӗр уҫрештенин кантурӗ, кӗнҫелерӗ. 2) мӗнле те пулин орканисатсийӗн, 3-4 ҫынран суйласа лартнӑ, ӗҫ тӑвакан оркӑнӗ.

**Пӳрократ**—Пӳрократтисӑма йуратакан, ӗҫшӗн мар, унӑн хормисемшӗн анҫах тӑрӑшакан, ҫиновник.

**Пӳрократтисӑм** — Пур ӗҫҫене те кӗнҫелерсенҫе, кӗҫӗн ҫиновниксем аслисене каласа пынӑ пек, халӑх ирӗкне ниме хумасӑр, атминистратси хушнӑ тӑрӑх, ӗҫӗн хормисене пуринҫен мала шутласа пыракан управлени ҫистеми.

**Пиплиокрахви**—крек.—Тӗрлӗ кӗнекесене криттиклесе, тӗрӗслесе пыни.

**Пиплиоттеккӑ**—крек.—Кӗнеке ҫурҫӗ, кӗнеке пуххи, тӗрлӗ кӗнекесене пур вулас тейекенсене парса, вулас ӗҫе майласа пыракан политҫут уҫрештенийӗ.

**Пинокклӗ**—лат.—Айакри (катари) йапаласене ҫывӑхлатса кӑтартакан икӗ куҫпа пӑхмалли кӗске трупа (тӗкӗр).

**Пирамитӑ**—крек.—1) Кеометрире—тӗпӗ нумайкӗтеслӗх, йенӗсем виҫкӗтеслӗх йапала; 2) авалхи Йекиппӗтре вилнӗ хараонсене пытарма тунӑ шутсӑр пысӑк, тӗпӗ тӑваткӑл, йенӗсем виҫкӗтеслӗх памӗтниксем.

**Пиршă**—Тĕрлĕ сутуилў тăвакансем, панккирсем хăйсен ĕçĕсене тума пухăнакан çурт. Ĕ ç п и р ш и с е м—С.К.Р.С-ђе ĕççĕр çынсене ĕç тупса паракан патшалăх уђрештени.

**Пиокрахви**—крек.—Камăн та пулин пурăвăçĕ çинђен тĕпĕ-йĕрĕпе çырнă кĕнеке.

**Пиолоки**—крек.—Пурăнăç йавленисене хиçиккă тĕлĕшĕнђен пăхса, орканисăм пурăнăçĕн саккунĕсене йĕрлесе пыракан науккă.

**Пçевтоним**—крек.—Ахтăр, хăй йатне пĕлтерешшĕн мар пулса, хăйĕн просветенисене алă пусакан, шухăшласа кăларнă, хушамат.

**Пçихолăк**—Пçихолокине ăста пĕлекен çын.

**Пçихолоки**—крек.—Çыннăн ăшри, ђунри йавленисене йĕрлесе пыракан науккă.

**План**—лат.—1) Пысăк вырăна хут çине маштаппа ўкерни. 2) Тăвас ĕçе майласа, йĕркелесе çырса хуни; ĕç йĕрки.

**Планеттă**—крек.—Хĕвел тавра тăрхала унпă пек йĕрпе (еллипсăпа) çаврăнса тăракан хăйĕн çути çук йапала (Çĕр, Меркури, Венерă, Марс т. ы.).

**Пленăм**—лат.—Пĕр-пĕр ушкăнăн, канашăн, йе ĕçтăвкомăн пур ђленĕсене пухса тунă саççетаңи (ларăвĕ).

**Плоккатă**—хран.—Пĕр-пĕр патшалăха парăнтарас тесе унăн çĕрне йĕри тавра хупăрласа, никампа пĕрлешме памасăр усрани.

**Прак**—ним. Пăсăк, йурăхсăр йапаласем.

**Пракун**—Лава кайнăшăн, йе лав тытма паракан укçа.

**Правă**—Пуçлăхра тăракан классен инттересĕсене сыхласа тăракан пусмăр оруйисĕнђен пĕри: етем опђĕствинђе пурăнас майсен, ирĕксен нормĕ, тивĕçлĕх.

**Правиттӗлствӑ**—Патшалӑхри ђи аслӑ влаҫ: саккунсем кӑларакан, тытӑмпа сут йӗркине астӑвакан аслӑ оркӑнсем.

**Правлени**—Пӗр-пӗр ушкӑнӑн, йе сойусӑн суйласа лартнӑ ӗҫтӑвкомӗ.

**Претприйатти**—Ӗҫе план тӑрӑх туса пыракан хуҫайствӑ, ӳђрештени, хапрӑк-савӑт т. ы.

**Претставиттӗл**—Мӗнле те пулин орканисатсирен суйласа йанӑ, орканисатсин шухӑшӗсене ӗҫе кӳртме тӑрӑшакан ҫын.

**Претставиттӗлствӑ** — Претставиттӗлсен ушкӑнӗ, вӗсем ӗҫлекен ӳђрештени.

**Претҫетаттӗл**—Пуҫлӑх.

**Прессӑ**—хран.—Хаҍ тухса тӑракан хаҫат-шурналсем.

**Преҫитент**—хран.—Пуршуаҫилле респупликкӑсенђе вӑхӑтлӑха суйласа лартакан патша.

**Преҫитиум**—Претҫетаттӗл, унӑн йулташӗсем тата ҫекреттарӗсем.

**Премиъ**—лат.—Ӗҫе лайӑх тунӑшӑн панӑ парне.

**Премйер**—хран.—Пуршуаллӑ патшалӑхсенђе—министӑрсен капинеђӗн пуҫлӑхӗ, ђи аслӑ министӑр.

**Прени**—Тавлашу, сӑмах ваклани.

**Прикӑвӑр**—выр.—1) Халӑх пухӑвӗ пӗр-пӗр ыйтӑва шухӑшласа татсан, вӑл ыйтӑва пур те хут ҫине ҫырса алӑ пусса хунӑ хут. 2) Сутсенђе—ӗҫе сутласа пӗтерсен кама мӗнле айӑпламалли ҫинђен ҫырса алӑ пусни.

**Прис**—хран.—Конккурентсиллӗ ӗҫре ҫӗнтерекене паракан парне.

**Присмӑ**—крек.—1) Кеометрире—тӗпӗпе ҫийӗ пӗр пек нумайкӗтеслӗх, йенӗсем тӳрӗ тӑваткӗтеслӗх йапала; 2) витӗр ҭурӑнакан йапаларан тунӑ виҫкӗтеслӗ присмӑ: витӗр хӗвел ути тухсан, ҫутӑ ҫиђӗ тӗслӗ уйӑрӑлса тӑрат̆.

**Принтсип**—лат.—Тĕп шухăш.

**Проектă**—хран.—План, малтанхи шухăш.

**Происветени**—1) Пĕр ҫисланa тепĕр ҫисла хут ӳстерсен пулакан ҫисла. 2) Ахтăр шухăшласа ҫырнă литтераттурă.

**Происвотствă**—Тулăшлăх, етеме кирлĕ йапаласене тĕрлĕ майпа ĕҫлесе тупни: етем опҫĕствине малалла йарса пыракан сăлтав.

**Проккураттурă**—Проккурор ĕҫлекен уҫрештени, проккурорăн кĕнҫелерĕ.

**Проккурор**—хран.—Саккунсене тĕрĕс туса пынине астуса пыракан; ĕлĕкхи сутсенҫе—айăплакан.

**Прокламатси**—хран.—Пĕр-пĕр револютсиллĕ партти мĕнле те пулин сопытти пирки халăха мĕнле те пулин ĕҫҫем тума ҫĕнсе ҫырнă хут.

**Прокраммă**—крек.—1) Тăвас ĕҫĕн майĕсем. 2) шкулсенҫе мĕне мĕнҫул вĕренессине кăтартса, йĕркипе ҫырса хунă хут. 3) пĕр-пĕр пухăвăн тăвас ĕҫĕсем; 4) пĕр-пĕр хаҫатăн, йе шурналăн мĕнле ыйтусем ҫинҫен, вĕсене хăш йĕнҫен кăтартса пымалли майсем; 5) театтăрта, йе контсертсенҫе мĕн ҫинҫен кам выҫаса кăтартас йĕрке. П о л и т т и к к ă  п а р т т и с е н  п р о к р а м м и—политтиккă парттийĕн, хăй класĕн интересĕсемшĕн тăрăшша тумалли, малти тĕлĕсем; прокраммăна парттин сиесĕ йышăнать, вăл анҫах улăштарма пултарать; партти ҫленĕ—пĕри те прокраммă хушнинҫен пăрăнма пултараймасть. Сотсиалисăмла парттисен прокраммисем икĕ пайа уйрăлса тăраҫҫĕ: 1) п р о к а м м ă-м и н и м у м—хаҫхи вăхăтра, хаҫхи условисенҫе тума май пур тĕлсем; 2) п р о к р а м м ă-м а к ҫ и м у м—парттин тĕп ыйтăвĕсемпе, партти пур ирĕке хăй аллине илсен анҫах тума пултаракан тĕлĕсем.

**Прокрес**—лат.—1)Етем опђёстви хăйён куђттурĕне вăйлăлантарса, малалла кайса, пурăнăçа ăнтарса пыни; 2) ĕç ăнса пыни, малалла кайни, ăнăçлăх.

**Прохвессăр**—лат. Аслă шкулсенђе вĕрентекенсен ђинĕ; пĕр-пĕр науккăна питĕ ăста пĕлекен вĕрентекен.

**Прохвеççи**—лат.—Тăрантса усракан ĕç (пĕр-пĕр çын çĕвĕ çĕлесе тăранса пурăнаť пулсан, çĕвĕçĕ çав çыннăн прохвеççи пулаť). Прохвеççиллĕ сойуссем—(прохсойуссем)—пĕр ĕçпе тăранса пурăнакан ĕçлекенсен, хăйсен ăрасна инттересĕсене сыхласа, астуса тăма тунă сойусĕ. Каппитталисăм аллинђе пурăнакан ĕçлекенсен прохсойусĕсем каппитталпа кĕрешес ĕçре питĕ пысăк усă параççĕ, кĕрешмелли меттăтсенђен пуринђен вăйлă меттăт—пастовкă (çав сăмаха пăх). Раççейре прохсойуссем 1905 çулта пуçланса кайнă. Халĕ прохсойуссем пролеттариата происвотствăна майлаштарса пыма вĕрентсе пыраççĕ (прохсойуссем—комунисăм шкулĕсем).

**Прохвил**—лат.—1) Хăрах йенђен курăнакан сăн; 2) пĕр-пĕр йапалан ђăнкă линипе кассан курăнакан тĕсĕ.

**Пропă**—ним.—Хутăштарса шăратнă йапалан кĕренкинђи таса ылттăн, йе кĕмĕл мыскалĕн шуђĕ; 2) ылттăн-кĕмĕлрен тунă йапаласем çине вĕсен кађђĕствине пĕлтерме лартакан пĕђĕк паллă; 3) мĕне те пулин, унăн кађĕствине пĕлме сăнаса пăхни; 4) сăнаса пăхма тунă йапала.

**Проппортси**—лат.—Танлăшĕ; йапалан пайĕсем пĕр-пĕринпе тĕрĕс, çыпçуллă тăни.

**Проплемă**—крек.—Ыйту, сатађђă; науккăри, йе искусствăри тавлашуллă, тума кирлĕ ыйту.

**Протуктă**—лат.—1) Егем опђĕствин вăйĕпе, йе тĕнђе вăйĕсемпе пулнă усăллă йапала; 2) мĕнле те пулин условисен хыçĕ.

**Проттоккол**—крек.—1) Пуху ĕçĕсене йĕркипе çырса тухнă хут. 2) пĕр-пĕр ĕç çинђен, куракансем, йе пуçлăхсем мĕнле пулнине çырса хуни; 3) сутра, пĕр-пĕр ĕçе пăхса тухнă май, мĕнле пулнине çырса пынă хут.

**Протсес**—лат.—1) Сутра—ĕçе туса пыни. 2) мĕнле те пулин йавленисем ăнса пыни.

**Прођђăн**—лат.—1) Мĕнĕн те пулин 100-мĕш пайĕ. 2) Кивçен панă укçашăн илекен услам.

**Прошектор**—Çутта тĕкĕрсемпе вăйлăлатса, пĕр çĕре пухса, пĕр йеннелле кăларса йарахан, пысăк, електритсă хунарĕ: пысăк вырăна айакран çуталма пулгарнипе вăрçăсенђе çĕрле тăшмансен поçитсине пăхма аван.

**Просă**—лат.—Нимскер те илемлетмен, пур те калаçакан майлă халап.

**Пролеттари**—лат.- Хăй вăйне сутса, тара кĕрше ĕçлесе анђах пурăнакан çын.

**Пролеттариат**—лат.—Хăй вăйне сутса, тара кĕрше ĕçлесе пурăнакансен класĕ: происвотствă хатĕрĕсем пĕтĕмпе пуршуаçи аллинђе пулнăран, пролеттариат каппитталисăмла опђĕствăра пур таварсемпе пĕр тан хăй вăйне пуршуаçине сутса тăранса пурăнаĭ. Каппиттал ÿссе, вăйлăланса пынăçемĕн унпа пĕр танах пролеттариат та нумайланса, вăйлăланса, лайăхрах орканисатсиленсе пыраĭ, хăйĕн инттересĕсемшĕн тăрăшакан партти тăваĭ (Комуниссен парттийĕ), пур происвотствăна хăй аллине çăлса илме тăрăшаĭ, çавăнпа нимĕскере пăхмасăр ĕмĕртеппе пуршуаçи класĕпе кĕрешше пурăнаĭ.

Револ̧утсисем туса каппиттала çĕмĕрсе тăксан, пуршуаçи пусмăрлăхне тĕпĕ-йĕрĕпе пĕтермешкĕн—пролеттариат тиктаттурĕ тăвать. Халĕ пирĕн Раççейре çавăн пек пролеттариат тиктаттурĕ вăхăд̧ĕ.

**Промышленнăç**—выр.—Тупăшлăх.

**Пророк**—Малалла мĕн пулассине каласа пĕлтерекен; елĕкхи тĕттĕм халăхсем тĕрлĕ шарлаттансем кирлĕмара пакăлтатса çӳрекене, йури çынна ăнланмалла мар сăмахсем каласа çӳренине—малалла мĕн пуласса пĕлтерсе калать тесе ĕненнĕ, çав çынсене таса çынсем, турра йурăхлă çынсем, пророксем тенĕ.

**Провисăр**—Аптеккă ĕçĕсене ăста пĕлекен, аптеккăна пăхса тăма пултаракан çын.

**Провоккаттăр**—Ĕскĕртекен: 1) Халăха улталаса пăлхантаракан; 2) пĕр-пĕр парттине йури д̧лене кĕрсе, партти ĕçне пăсса пырса, кирлĕ çветенисене тăшмансене кăтартса пыракан.

**Провоккатси**—лат.—Халăха влаçа хирĕç тăмашкăн, пăлханмашкăн кирлĕ мар çĕрте ĕскĕртсе, пăтратса çӳрени.

**Пйессă**—хран.—Трамăллă, йе мусăклă происветени.

**Поет**—крек.—Поеçи сисĕмĕ пур çын; сăвăсем çырма пултаракан.

**Поеçи**—крек.—Илемлĕ пултару; пурăнăçа илемлĕ сăмахпа çырса кăтартни.

**Поемă**—крек.— Сăвăпа çырнă роман; пĕр-пĕр халăхăн паллă сопыттисене çӳшет туса, вĕсем çинд̧ен илемлĕ сăвăсемпе çырнă происветени.

**Поттаниккă**—крек.—Ӳсен-тăранçем çинд̧ен вĕрентекен наукă.

**Потрепиттĕл**—Çийекен, пĕгерекен, усă куракан.

**Постановлени**—Килĕшше йышăнни: пĕр-пĕр ушкăн, мĕнле те пулин ыйту çинҫен тавлашу тунă хыççăн, килĕшше, ĕçе çапла тумалла тесе хут çине çырса хуни.

**Поçитси**—лат.—1) Çапăçма (вăрçăра) суйласа хунă вырăн; 2) пĕр ыйту çине кăш йенҫен пăхни.

**Политтиккă**—крек.—1) Патшалăха тытса тăмалли искусствă, патшалăхри шалти ĕççене, йе йут патшалăхсемпе тумалли ĕççене, туса пымалли майсем, йĕркесем: кирек мĕнле политтиккă та пĕр-пĕр класăн интересĕсене туса пыраҭ; 2) камăн та пулин (уҫрештенин, парттин, йе ахаҍ çыннăн) хăй ĕçĕсене туса пыракан йĕркесемпе майсем.

**Политси**—хран.—Пуршуаçиллĕ патшалăхăн шалти йĕркесене астуса тăракан уҫрештенисемпе вĕсен ҫиновникĕсем.

**Поҍус**—1) Ç ĕ р п о ҍ у с ĕ с е м—çĕр ҫăмăркки хăй тавра тĕнĕл çинҫе çаврăннă пек çаврăннă ҫух, çĕрĕн çурçĕрпе кăнтăрлари вĕçĕнҫе ним çаврăнмасăр тăракан пăнҫă (çĕр ҫăнах та тĕнĕл çинҫе çаврăнса тăрас пулсан тĕнĕлĕн икĕ вĕçĕ поҍуссем пулса тăраççĕ;) 2) т ĕ н ҫ е п о ҍ у с ĕ с е м—çĕр çинҫен пăхсан пур пĕлĕт çинҫи çăлтăрсем пĕр пăнҫă тавра çаврăнса тăнă пек курăнаҭ; çав пăнҫăна тĕнҫе поҍусĕ теççĕ. Тĕнҫен çур çĕр йенҫи поҍусĕ—Поҍар çăлтăрĕ çывăхĕнҫе, çавăнпа вăл çăлтăр пĕлĕт çинҫе ним хускалмасăр тăнă пек туйăнаҭ.

**Поҍшевиксем**—Раççей Комунисĕсен (поҍшевиксен) Парттийĕ ҫленĕсем. Раççейри ĕçлекенсен Сотсиал-темократтиллĕ Парттийĕн 2-мĕш сйесĕнҫе, сйеса пынă телекатсем тактиккă ыйтăвĕ тăрăх тавлашу пулсан икĕ пайа уйрăлса тăнă: Марттăв майлисем сахалтарах, пулнăран вĕсене меншшевиксем те-

нĕ, Ленин майлисем нумайрах пулнăран вĕсене пољшевиксем тенĕ.

**Помешђĕк**—Çĕр улпуђĕ; хăй аллинђе нумай çĕр тытса тăракан, çĕр паракан тоххотпа ним тумасăр пурнакан улпут.

**Повесткă**—1) Сута, йе пĕр-пĕр пухăва ђĕнекен хут. 2) пухăвăн кун йĕрки.

**Повĕç**—Пĕђĕк роман: просăпа çырнă пĕђĕк пеллетристиккă происветени.

**Пойккот**—Кампа та пулин нимле ĕç те тумалла мар тесе килĕшни. Ирлантири Пойккот йатлă помешђĕкрен тухса кайнă, вăл хăйсен ĕçлекенĕсене питĕ асаплантарнăран, ирлантири хермĕрсем (хресђенсем) ун вађђи ним ĕç те тумалла мар, ун патне тара кĕршмелле мар тесе килĕшнĕ. Йулашкинђен Пойккот пĕтĕмпех аптăраса çитсе, хăй вырăнĕнђен тухса тарнă. Çавăнтан вара çавăн пек меттăтсемпе кĕрешнине пойккот теççĕ. 1923 çул. Воровски йултапа вĕлерсен Раççей Швейтсарине пойккотланă.

## Т.

**Тактиккă**--крек.—Умра тăракан тĕлсене çитмелли майсем. Ç а р ĕ ç ĕ н ђ е—тăшмансене çĕнтерес тĕлпе çарсене вырăнтан вырăна куçарса пымалли искусствă. П а р т т и с е н т а к т и к к и—парттисен, хăйсен тĕлĕсене çитмешкĕн мĕнле вăхăтра мĕнле ĕçлемелли майсем.

**Таксă**—хран.—Тĕрлĕ йапаласен, йе пĕр-пĕр ĕçĕн Правиттĕлствă туса хунă хакĕ.

**Тапељ**—ним.—Крахвасем тăрăх, хормă туса çырса тухнă хут. Т а п ĕ л-к ă л е н т а р—кун йађĕсемпе ђисласене ернен-ернен, йе уйăхăн-уйăхăн крахвасем тăрăх çырса тунă кăлентар.

**Таплитсă**—лат.—1) Тапĕљ; 2) пĕр-пĕр ыйтăва ђисласемпе çирĕплетсе кăтартмашкăн, ђислисене пĕр-пĕр хормăпа крахвасем тăрăх çырса тухнă хут.

**Таттă**—лат.—Хут çинђе куна, уйăха, çулталăка кăтартса хуни (1923 çул, Теккапĕрĕн 26-мĕш кунĕ).

**Тађђă**—Таса сывлăшлă вырăнта, çула канса пурăнма тунă çурт.

**Талант**—крек.—Вĕренмесĕрех, çуралнăранах пур ăста: мĕне те пулин шугсăр аван тума пĕлсен, çавăн пек çынна талантлă çын тесçĕ.

**Тарвинис**—Тарвинисăма хапăл тăвакан.

**Тарвинисăм**—Ђарљс Тарвинăн теорийĕ: пур орканисăмсем те ĕмĕрсен тăрăшшĕнђе пурăнăçшăн таврари йапаласемпе (условисемпе) кĕрешше пурăннăран, пурăннăçемĕн хăйсем улшăнса пынăран, кĕрешӳре çĕнтерме пултаразан интивитумсем анђах ĕрђеме пултарнăран,—тĕнђери тĕрлĕ орканисăмсем пулса кайнă тесе вĕрентет. Çавăн пекех етем те етем майлă упăтесенђен пулса кайнă тет.

**Туалисăм**—лат.—Иккĕленни: монисăмпа хирĕç тăракан, пур йапала та икĕ тĕпрен (ырăлăхпа усаллăхран, маттерипе итейăран) тухса пыраӳ тесе вĕрентекен вĕрентӳсем.

**Тует**—ит.—Иккĕн йурламалла çырнă мусăккă происветепи: кашни йурлаканĕ хăй ăраснарах йурлаӳ.

**Тупликкат**—лат.—Мĕнле те пулин токкумĕнтĕн пирвайхипе пĕр пекех 2-мĕш екçемпљарĕ.

**Тумă**—(Патшалăх Тумĕ)—Раççейре 1905 çулхи револљутси хыççăн тунă халăх претставиттĕлĕсен Канашĕ, кĕçĕн парламĕнт.

**Тунтрă**—Çурçĕр йенђи, вăрмансем ӳсме пултарайман, ĕмĕр шăнса тăракан ушахлă (лађака) çĕрсем.

**Туннел**—Çĕр айĕнђен шăтарса тухнă çул, йе ахађ çĕр витĕр тухакан шăтăк.

**Театтăр**—крек.—1) Сђенă çинђе выђаса кăтартма тунă çурт; 2) пĕр-пĕр ĕç пулакан вырăн (вăрçă театтăрĕ).

**Текенерат**—лат.—Пĕтсе пыракан йăхри çын, йăхĕ ăнăç-çăр çын.

**Теккапĕр**—Çулталăкăн 12-мĕш уйăхĕ—Раштав уйăхĕ.

**Теккаприссем**—Пĕрремĕш Елексантăр патша ђухнехи вăрттăн политтиккă ушкăнĕн ђленĕсем: Елексантăр патша вилсен, 1825 ç. Теккапĕр уйăхĕн 14-мĕшĕнђе, патша ирĕкне кăшт ђакарса çĕнĕ конститтутси тăвашшăн Пĕрремĕш Микулайа хĕçпăшалпа хирĕç тăнă. Анђах Микулай вĕсене çĕмĕрсе тăкнă, ушкăнăн пуçлăхĕсенĕ (5 çын) çакса вĕлернĕ.

**Теккаметтр**—Вунă меттăр. Текка вуннă:—кунтан: т е к к а л и т т ă р—10 литтăр, т е к к а к р а м—10 крам т. ы.

**Теккоратси**—лат.—Театтăрсенђе—ĕç мĕнле вырăнта пулнине кăтартакан карттинсем. Й у п т а р с а к а л а с а н—мĕнĕн те пулин илемлĕ тулашĕ, шалти лайăхмара пытарса тăракан йапала.

**Текламаттăр**—лат.—Текламатси пăравĕлĕсем тăрăх вулакан.

**Текламатси**—лат.—Илемлĕ, тĕрĕс, сасă улăштарса, мĕн вулавине шестиккуђатсипе кăтартса вуламалли искусствă.

**Текларатси**—лат.—Пĕтĕм халăха пĕлтерни.

**Текрет**—лат.—Правиттĕлствă кăларнă саккун, постановлени.

**Техниккăм**—Пĕр ăрасна ĕçе вĕренгекен вăтам шкул: п е т а к о к и к к ă т е х н и к к ă м ĕ—уђђиттĕл пулма вĕрентет, й а л х у ç а й с т в и т е х н и к к ă м ĕ—акроном пулма...

**Техниккӑ**—крек.—1) Мĕнле те пулин искусствӑн, йе ремеслен ĕçлемелли майĕсем. 2) тупакан промышлĕннӑç йапалисенђен урӑх йапаласем тӑвакан промышлĕннӑç.

**Технолоки**—крек.—Хатĕр мар маттериалтан тĕрлĕ йапаласем тума вĕрентекен науккӑ: йывӑçран, тĕрлĕ меттал-севђен т. ы.

**Техвитсит** —лат.— Расхутсем тоххотсенђен ытларах пулни.

**Тепат**—хран.—Тавлашу, прени.

**Тепет**—лат.—Пуххалтери кĕнекисем çинђе—илес укçасене çыракан сулахай странитси.

**Тепӳт**—хран.—Пирвайхи хут сђенӑ çине выђама тухни.

**Теппуттат**—лат.—Суйласа йанӑ претставиттĕл.

**Теппуттатси** —лат.—Халӑх, йе пĕр-пĕр ушкӑн суйласа йанӑ çынсем.

**Тетукси** —лат.—Йĕрлесе пĕлмелли меттӑт: ушкӑнлӑ хактӑсенђен ӑрасна хактӑсене оппӑтсӑрах пĕлни, сӑмахран:— Каппитталисӑм вӑйлӑланса пынӑçемĕн пĕђĕк претприйаттисем пĕтсе пыраççĕ; Раççейре каппитталисӑм вӑйлӑланса пырат пулсан, Раççейри вак-тĕвек претприйаттисем пĕтсе пыраççĕ тени тĕрĕс.

**Теспӑт**—крек.—Хӑй ирĕкпе анђах тутарса пурӑнакан, усал, хӑй çынĕсене питĕ хытӑ тытса пурӑнакан, патша.

**Теспоттисӑм**—крек.—Пур ирĕке пĕр патша аллине панӑ патшалӑх йĕрки, апсођуттисӑм.

**Тессант**—хран.—Карапсем çинђен анса вӑрçça кĕрекен çар.

**Теçерттир**—хран.—Таркӑн салтак.

**Теçĕс**—крек —Пĕр-пĕр токлатӑн, йе происветенин тĕп шухӑшĕсене кĕскен каласа пани.

**Телекат**—Теппуттат, уполномођђӑннӑй.

**Телекатси**—Суйласа йанă çынсем, суйласа йаракансен интересĕсемшĕн тăрăшакансем, вĕсем хушнине тăвакансем.

**Телекрах**—крек.—Сăмахсене инçе çĕре хăвăрт пĕлтермелли аппарат. Ратио-телекрах—правлуксăр, сăмахсене сывлăш тăрăх йаракан телекрах.

**Телекрахвис**—Телекрахпа сăмахсем йаракан çын, телекрах ĕçне ăста пĕлекен.

**Телекрам**—крек.—Телекрах тăрăх йанă хут, çыру.

**Телехвон**—крек.—Çын сассине правлук тăрăх инçе çĕре илтĕнтерекен аппарат.

**Телехвонокрам**—Телехвонпа калаçнине çырса хунă хут. çыру.

**Телескоп**—крек.—Пелĕт çинҫи çутăсене пăхмалли, инçетри йапалана çывăх кăтартакан труба (тĕкĕр).

**Темакок**—крек.—Политтиккă ĕçĕпе халăха пăлхатакан çын.

**Темакоки**—крек.—Пĕр-пĕр тĕлшĕн халăха тĕрлĕ сăмахсемпе пăлхатни.

**Темă**—лат.—Çырнă, йе çырас йапалан тĕп шухăшĕ, йаҫĕ.

**Темократ**—Халăх ирĕкшĕн тăракан.

**Темократти**—крек.—1) Халăх ирĕклĕхĕ; 2) Халăхăн пуйанмар класĕсем (пролеттариат, хресҫенсем, вак-тĕвек пуршуаçи).

**Темократтилле**—Халăхла. Темократтилле респупликкă—влаçа пур халăх суйласа лартакан çынсен аллине панă респупликкă (ĕçре кирек хăçан та пуршуаçи аллине ўкет). Темократтилле ҫентралисăм—пур влаç суйласа йанă телекатсен сиесĕ аллинҫе тăракан йĕрке.

**Темопилисатси**—Мопилисатсиленĕ çынсене кайалла киле салатни.

**Темонстратси**—лат.—1)Халăх хăйне мĕн кирлине урамсем тăрăх плаккатсемпе çӳресе, миттĕнксем, пухусем туса пĕлтерни. 2) лексисем, йе токлатсем тупă ђух мĕн каланине оппăтсемпе кăтартса пани; 3) тăшмансене улталамашкăн çарсене йури вырăнтан вырăна куçарни.

**Теморалисатси**—хран.— Йĕркесĕре тухса кайни, тистсиплинă пĕтни.

**Тенăр**—ит.—Пасран çинçерех, арçынсем йурлакан сасă.

**Термин**—лат.—Пĕр пĕр паллă шухăша пĕлтерекен сăмах.

**Терминолоки**—лат.—Пĕр-пĕр науккăра, йе искусствăра, паллă шухăшшене пĕлтерекен, пур те йышăннă (пурăнăçа кĕнĕ) сăмахсем.

**Термометтăр**—крек.—Ăшăпа сивве кăтартакан хатĕр.

**Территтори**—лат. —Ытти çĕрсенђен паллă ђикĕсемпе уйрăлса тăракан çĕр (патшалăх, йе оплăç территториййĕ).

**Террор**—хран.—Хăйĕн тĕлĕсене шутсăр хăрушă ĕççемпе çитме тăрăшакан çистемă.

**Террорис**—Терророрпа ĕçлекен. Раççейре патша ђух револђутсилле парттисенђен ессерсем террориссем пулнă. Вĕсем патшасене, йе унăн усал министăрсене вĕлерсе пырса патшана хăраташшăн пулнă. Октăпĕрти Револђутси пулсан—ессерсемех террорпах Канаш влаçне пĕтерме тăнă(Волотарски й. вĕлерни, Ленин й. пăшалпа пени т. ыт.)

**Теваљватси**—хран.—Хут укçасен хакĕ ӳксе пынăран, вĕсен хакне танлаштармашкăн çĕнĕ укçасем кăларса, ылттăн йе кĕмĕл укçасене вĕсен хакĕпе танлаштарни.

**Тевис**—хран.—Пěр-пер парттин тěп шухăшне кěскен каласа пěлтерекен сăмах. Сăмахран: Р.К.П.-йěн тевисě—„Пěтěм тěнҫери пролеттарисем, пěрлешěр!“.

**Теолоки**—крек.— Турă ҫинҫен вěрентекен хилосохви.

**Теоремă**—крек.—Тăнлантарса ĕнентерме кирлě ҫăнлăх.

**Теори**—крек.—1)Мěнле те пулин науккăн тěп шухăшěсен йěрки. 2) сăнаса курнă хактăсенҫен курăнса тăракан шухăшшен ҫистеми.

**Тиакнос**—крек.—Ҫир-ҫěрсен паллисене пăхса мěнле ҫир иккенне пěлни.

**Тиакраммă**—крек.—Статтистиккă тăрăх шыраса пěлнě ҫисласене паллă, карттинăсемпе кăтартакан ўкерҫěк.

**Тиалектă**—крек.—Пěр-пěр вырăнти ăрасна пуплев, сăмахран: ҫăвашшен вирйал тиалекҫěпе анатри тиалектă пур, вирйалсем пěр майлă пуплеҫҫě, анатрисем хăйсем ăраснарах пуплеҫҫě.

**Тиалектиккă**—крек.—Пěлсе, тěрěс тавлашмалли искусствă. Тиалектиккăлла меттăт—йапаласемпе йавленисене вěсем улшăнса, хускалса пынăҫемěн сăнани: вăл меттăта Карл Маркс науккăлла сотсиалисăмăн никěсě туса хунă. Тиалектиккăлла протсес—хире-хирěҫ пулнипе малалла кайса пыни: кирек мěлле йавлени те, хăй малалла кайса пынăҫемěн хăйне хирěҫ пыракан, хăйне пěтерекен вăйсем хатěрлесе пыни; Кекěл триатě тăрăх (теҫис, анттитеҫис, ҫинттěс) малалла кайса пыни.

**Тиалăк**—крек.—Икě ҫын пуплевě.

**Тиаметтăр**—крек.—Кеометрире—ҫаврашкана, йе ҫаврака унка ҫурмаран уйăракан тўрě йěр: тўрě йěр ҫинҫе выртакан икě ратиус.

**Тиктаттурӑ**—лат.—Вӑхӑтлӑха тунӑ ҫарусӑр влаҫ. Пролеттариат тиктаттурӗ—пуршуаҫинҫен влаҫа туртса илсен, ӑна пӗтӗмпех ҫӗмӗрсе, вӑйсӑрлантарса хӑварма пролеттариата вӑхӑтлӑха пысӑк влаҫ кирлӗ: вӑл влаҫ пуршуаҫине патшалӑх ӗҫӗсене тума паманнинҫен, вӗсене хытӑрах айӑпланинҫен, Канашшене суйлама ирӗк паманнинҫен паллӑ курӑнса тӑраҫ.

**Тиктаттӑр**—лат.—Патшалӑх ӗҫӗсене тунӑ ҫӗрте, вӑхӑтлӑха, мӗн тӑвас тенӗ ҫавна тума ирӗк панӑ ҫын.

**Тиктовкӑ**—хран.—1) Сӑмахпа каланине ним улӑштармасӑр итлекенсем хут ҫине ҫырса пыни. 2) ним шухӑшламасӑр, каланӑ сӑмаха пӑхӑнтарни.

**Тихтерит**—крек.—Питӗ ҫас сиксе йерекен, йӑвӑр пыр шыҫҫи.

**Тип**—крек.—Пур хӑй йевӗрлӗ йапаласен паллисене тӗрӗс кӑтартса тӑракан йапала, ҫын, йе йавлени.

**Типпокрахви**—крек.—Кӗнеке-хаҫатсем ҫапакан уҫрештени.

**Типлом**—крек.—Аслӑ шкулта вӗренсе тухнине пӗлтерекен токкумӗнг.

**Типломат**—Йут патшалӑх правиттӗлствипе ӗҫҫем тӑрӑх калаҫма шанса, хушша йанӑ ҫын.

**Типломатти**—хран.—1) Йут патшалӑхсемпе ӗҫҫем тумалли искусствӑ; 2) йут патшалӑхри претставиттӗлствӑ.

**Тискуҫҫи**—лат. Тавлашу, прени, сӳтсе йавни.

**Тискӑнт**—лат.— Мусӑкра—ҫинҫе йанрав сасӑ, ҫамрӑк аҫасен, йе хӗрсен сасӗ.

**Тиспут**—лат.—Тавлашу, тускуҫҫи.

**Тистанси**—лат.—1) Хушши инҫӗшӗ; икӗ стантсӑ хушшинҫи ҫул; 2) Ҫарсенҫе—ҫарӑн пайӗсен хушши.

**Тистиплинă**—лат.—1) Ушкăнра, йе парттире—пурӗленсем те туса тăма тивĕçлĕ пăравĕлăсем. 2) кирлĕ таран пăхăнса тăни (çарсенҫе, шкулра т. ы. ). 3) наукkăна пулăшша тăракан ăрасна вĕрентў.

**Тиссонанс**—лат.—Килĕшў çукки, илемсĕр сасăсем.

**Тилеммă**—крек.—Икĕ йапаларан пĕрне суйласа йышăнни.

**Тинаçҭи**—крек.—Патша йăхĕ.

**Тинамиккă**—Улшăнса (хускалса) тăни, лăпкă, ним хускалмасăр тăнине пĕлтерекен поҥаҭҭипе хире-хирĕç поҥаҭҭи.

**Тинамит**—крек.—Тар йевĕрлĕ, питĕ хытă çунакан йапала; туп тарĕ.

**Тираш**—хран.—1) Лоттерейă, пилетсем тăрăх выҫаса йани; 2) вăхăтран-вăхăтран тухса тăракан кĕнеке-хаçатсен екçемпҫарĕсен шуҫĕ, хисепĕ.

**Тиректăр**—лат.— Пуçлăх, наҫаљник; уҫрештенине тытса тăракан.

**Тиректори**—хран.—1795 çулта Хрансири патшалăх ĕççене туса тăракан, 5 çынлă коллеки, вăйлă пуршуаçин правиттĕлстви: 1799 çулта Напполеон ăна çĕмĕрсе тăкнă.

**Тиришор**—хран.—Орккестăра, йе хора ĕçре йертсе пыракан.

**Тивиçи**—лат.—Пĕҫĕк арми, темиçе тĕрлĕ çарсем те пур, ăрасна çапăçма пултаракан йетиницă.

**Тĕрме**—ним.—Ăристансене хупса лартакан çурт, касамат.

**Тракети**—крек.—1) Питĕ вăйлă, хурлăхлă ĕççем çинҫен çырнă трамă. 2) Хăрушă, хурлăхлă, йăвăр сопыҭҭи.

**Трактăр**—Акапуççем туртса çўреме тунă ахтомопил.

**Трактир**—Укçапа апат çитерекен йе ĕçтерекен çурт.

**Траппетси**—крек.—Икĕ айакки паралеллĕ, икĕ айакки паралеллĕ мар тăваткĕтеслĕх. 2) кимнаçтикка тумалли хатĕр: йунашар çакăнса тăракан икĕ шађçа.

**Траппировкă**—хран.—Тĕрлĕ пиравăрпа йапалана илемлĕн каркаласа хуни.

**Тратитси**—лат.—Ĕлĕкренпех пыракан, вагă, пурăнăçра кирлĕ мар пулнă йăласем.

**Трамă**—крек.—1) Поеçи происветенийĕ: сопыттисене йут çын каласа кăтартнă пек мар, сопыттири çынсем хăйсем пĕр пĕринпе калаçнă пек туса, хурлăхлă картгинăсемпе, йăвăр сђенăсемпе куракансен ђĕрине сиктерет. 2) мĕнле те пулин хуйхăллă, йăвăр сопытти.

**Транспăрт**—лат.—1) Пуххалттеринђе—тепĕр страница çине куçарни. 2) йут çĕре куçаракан тавар ушкăнĕ. 3) йапаласене инçе çĕре куçарни, куçармалли хатĕрсем.

**Труппă**—хран.—Театтăрта выђакан арттиссен ушкăнĕ куçça çӳрекен, ушкăнпа пĕрле ĕçлекен арттиссем.

**Трест**—анк.—Пĕр происвотствăри вăйлă каппитталиссем конккурентсипе пĕтерешшĕн, рынăка хăйсен аллине пуçтарса илешшĕн пĕрлешше тунă сойус. Трестсем хăйсен ĕçĕсене сӳйласа лартнă правлени урлă туса тăраççĕ, ăрасна претприйаттисем ушкăнĕпех çав правленине пăхăнса тăраççĕ. Пĕр происвотствăри претприйаттисене хăйсен аллине илсе пырса, хăш ђух трестсем темиçе патшалăхри промышлĕннăçа пĕрлештерме пултараççĕ. Пуринђен ытла трестсем Америккăри Штатсенђе вăйлăланса çитнĕ.

**Треçинă**—Ђукун çулсем çинђе, ређссăсем тăрăх алăпа çавăрса ђуптаракан пĕђĕк машшин, урапа.

**Треççировкă**—Выђăхсене хушнине итлеме вĕрентни.

**Трипунӑ**—лат.—Ораттӑрсем хӑпарса калаҫма тунӑ ҫӳлӗ вырӑн.

**Трипунал**—лат.—Ђи аслӑ сут.

**Троппил**—Ҫурт-йӗр ҫавӑрнӑ ђух ҫийӗне тытӑнтарса тӑракан, ђэлӑшла пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтарса тӑратакан каштасем, тӑрӑх каштасене тытӑнтарса тӑракан хреслесем.

**Токӑвӑр**—Килӗшӳ, услови, сӑмах пӗтерни.

**Токкумент**—лат —Тӗрӗс ҫырнӑ, шанма йуракан хут, утостоверени.

**Токлат**—Пулнӑ ӗҫ ҫинђен тӗпӗйӗрӗпе каласа кӑтартни.

**Токмӑт**—крек.—Пӗр-пӗр вӗрентӳн тӗп, никам улӑштарма пултарайман шухӑшӗ, никӗсӗ.

**Топпокрахви**—**крек.**—Типӗ ҫӗр питне кеометри йенђен астуса хут ҫине ӳкерессине вӗрентекен наукӑ.

**Тосӑ**—крек.—Емелсен пӗрре ӗҫмелли пысӑккӑшӗ (кашӑк, тумлам т. ы.).

**Толлӑр**—Америккӑри Штатсен укҫи: икӗ тенке йахӑн.

**Томат**—хран.—Помитор.

**Томкрат**—кол.—Йӑвӑр йапаласене ҫӗклемелли машшин.

**Тон**—хран.—1) Сасӑн ҫинҫӗшӗ; 2) картӱинсем ҫинђе—краскӑсен тӗсӗпе ҫутти. 3) сӑмах кӑмӑллӑхӗ.

**Тоннӑ**—хран.—Йӑвӑр виҫе—61 пӑт, 1.000 килокрам.

## Ť.

**Ťушӑн**—Вуниккӗ.

**Ťуйм**—Виҫе=2,5 сантӱиметтӑр, аршӑнӑн 28-мӗш пайӗ.

## Ђ.

**Ђек**—анк.—Панкра укҫа пур ҫын, укҫине илме йут ҫынна хушшан ҫырса паракан хут.

**Ђехно-словакки**—Вăрçă хыççăн пулнă, Йевроппăн варринђи пĕђĕк патшалăх: ђехсемпе словаксен патшалăхĕ.

**Ђемĕнт**—лат.—Исвĕспе тăмран тăвакан, ђулсене, йе кирпĕђсене пĕр пĕринпе çыпăçтаракан йапала: сывлăшпа типсен питĕ хытă пулнипе ђулсене аван, тĕреклĕ çыпçăнтарaŷ.

**Ђенттăр**—лат.—1) Çаврашкан, йе шарăн хĕрри çинђи пур пăнђăран та пĕр пек инçе (катара) тăракан пăнђă, шăп варри. 2) Опђĕствă пурăнăçĕн кăш йенђен те пулин пуринђен вăйлă вырăнĕ: промышлĕннăç ђенттăрĕ, култтурă ђенттăрĕ т. ы.

**Ђентралисатси**—лат. —1) Патшалăхăн тĕпри влаç пур ĕççене те хăй, вырăнсене пысăк ирĕк памасăр, туса тăракан çистемĕ; 2) пĕр вырăна пухни.

**Ђентралисăм**—лат.—Ђентралисатси.

**Ђенсурă**—лат.—Кĕнеке-хаçатсене, кирлĕмар шухăшсем çапасран сыхлани; сыхлакан уђрештени.

**Ђенсăр**—лат.—Кĕнеке-хаçатсене ђенсурлакан çын.

**Ђервонтсă**—Раççейри Совет правиттĕлстви 1922-мĕш çулта кăларнă ылттăн шуђĕпе çŷрекен 10 тенкĕлĕх укçа.

**Ђисла**—1) Йапала ушкăнĕн хисепĕ. Ђисласем: йатлисемпе йатсăррисем, тĕрĕссисемпе троплисем, майлă шутлисемпе кутăн шутлисем пур. Примерсем: ниме шутламасăрах, ахалех 3, 4, 5 тесен, вăл ђисласем йатсăррисем, 3 лаша, 4 çын тесен вăл ђисласем йатлă пулаççĕ; 2, 3—тĕрĕс ђисласем, $^1/_2$, $^1/_3$—тропла ђисласем; 1, 2—майлă шутлă ђисласем,—1,—2—кутăн шутлă ђисласем 2). Уйăхăн кунĕсен хисепĕ: пайан 20 ђисла тени—пайан уйăх пулçланнăранпа 20 кун çитрĕ тени пулаŷ.

**Ђирккуђар**—лат.—Пĕр-пĕр уђрешгени хăйне пăхăнса тăракан уђрештенисене çырса йанă хушу, приккас.

**Ђирккуђарлă**—Ђирккуђар тесе шутламалла (ђирккуђарсен пуçламăшĕнђе çыракан сăмах).

**Ђивилисатси**—Вĕренни, çутта тухни, куђттурă, малалла кайса пыни. Халăхăн тискер йăласем пĕтсе, куђттурă малалла кайса пынине пĕлтерекен паллăсем.

**Ђлен**—Ушкăнра пуринпе те пĕр тан çын.

## Ш.

**Шахмат**—Авалах Йекиппĕтре шухăшласа кăларнă вăйă: 64 пĕђĕк тăваткаллă сăрланă тăваткал хăма çинђе иккĕн 16-шар хикурăсемпе вăрçнă пек выђаççĕ.

**Шантташ**—хран.—Хăратса укçа, йе мĕн те пулин илни, пусмăрлани.

**Шар**—Çаврашка, çăмха пек ђăмăр йапала.

**Шарлаттан**—хран.—Ултавçă; тĕрлĕ таса мар ĕççемпе çыхланакан çын.

**Шайккă**—1) Пĕђĕк лаххан; 2) Вăрă-хурахсен ушкăнĕ—пантă.

**Шурнал**—хран. 1) Кунран-кун ĕççем çинђен çырса пыракан кĕнеке. 2) Паллă вăхăтран (ернерен, уйăхран) тухса тăракан пĕр йатлă кĕнеке. 3) Кĕнђелерте—кĕрекен-тухакан хутсене номĕрлесе çырса пыракан кĕнеке. 4) пуххалттерире—кĕрекен-тухакан укçасене çырса пыракан кĕнеке.

**Шурналçă**—(шурналис)—хран.—Шурналсем çине çыракан, шурналсем кăларас ĕçре ĕçлекен çын.

**Шех**—хран.—Пĕр-пĕр çар пайĕн, оркаңисатсин, йе уђрештенин тăрăшакан, ăна пулăшма пулнă оркаңисатси, уђрештени, çын.

**Шерпет**—ар. —Сахăр, пыл, йе урăх пылак йапала ирĕлтерсе пылаклатнă шыв

**Шихр**—хран.—Вăрттăнçыру; çырусене, йут çын вуласран, малтан килĕшнĕ ăрасна паллăсемпе çырни.

**Широнтă, широнтиссем**—Хрантсири Аслă револютси вăхăтĕнче— липераллă пуршуаçи партти, сулахай «Кора» парттине вăйлă хирĕç тăнă.

**Шпион**—хран.—Вăрттăн, кам та пулин хушнипе пăхса, пĕлсе çӳрекен.

**Штат**—ним.—1) Пĕр пĕр учрештенире ĕçлекенсем ушкăнĕпе; 2) кĕпĕрне майлă оплăç.

**Штап**—1) Вăрçăра—çар ĕçне астуса пыракан управлени. 2) пысăк орканисатсине йертсе пыракан оркăн.

**Штемппĕл**—ним.—1) Пичет, клеме, йапала çине çапнă паллă; 2) пичет, клеме çапмалли хатĕр.

**Штрейхпреххĕр**—ним.—Пастовккă тунă чух ĕçлекен, пастовккăна çĕмĕрекен, пăсакан.

**Шрихтă**—ним.—Кĕнекесем çапмалли тĕрлĕ саспаллисем.

**Шовинис**—Хăй натсине анчах йуратакан, урăх натсисене курайман çын.

**Шовинисăм**—Хăй натсине анчах йуратса, ытти натсисемпе çапăçма хатĕр пулни; хăй натсипе мухтанса, ытти натсисене ниме пăхмасăр айăплани.

## С.

**Саккон**—1) Патшалăхри халăхăн пурăнăçне йĕркелесе пымашкăн правиттĕлствă кăларакан правĕлăсем, текретсем. 2) Етем хăй шухăшĕпе улăштарма пултарайман тĕнче йĕркисем.

**Сапотташ**—хран.—Ĕçе йури, пĕлсе пăсса пыни. Ĕçлекенсем стаçкăсем тунă çух сапотташлаçă. Октăпĕр Революци пулсан—патша ҫиновнĕкĕсем ĕççынни правиттĕлствине тĕп тăвашшăн пулса, нумайççен сапотташласа пынă.

**Сапотташнĕк**—Сапотташлакан çын.

**Сатиççă**—1) Нумай шухăшласа тумалли, йывăр ĕç. 2) Умра тăракан ĕç.

**Саттиpă**—лат.—1) Поеçире—пурăнăç йĕркисенçен кулса, мăшкăласа çырни; 2) мĕлле те пулин йавленине çиленсе мăшкăласа кулмалла йенçен кăтартни.

**Сатмени**—Х ĕ в е л с а т м е н и—уйăх çĕр тавра çаврăннă çух хĕвел тĕлне пулнăран, уйăх мĕлки çĕр çине ÿкнĕрен хĕвел тĕттĕмленни. У й ă х с а т м е н и—çĕр хĕвел тавра çаврăннă çух уйăхпа хĕвел хушшине пулнăран, çĕр мĕлки уйăх çине ÿкнĕрен уйăх тĕттĕмленни.

**Саççетаçи**—Лару, пуху.

**Сал**—ним.—Пысăк, таса пÿлĕм.

**Салок**—Йапала парса вăхăтлăх укçа илни. Пĕр-пĕр ĕçре йапаласем вăхăтлăха илсе тăмалла пулсан, çав йапаласем çухаласран тытса йулакан, малтан хывнă укçа.

**Самеçтиттĕл**—Вырăнне пулса тăракан: пĕр-пĕр уçрещтени пуçлăхĕ çук çух, ун вырăнне вăл хушша хăварнипе ĕçлекене калаççĕ.

**Санкси**—лат.—Пĕр-пĕр проекта аслă оркăн йышăнни.

**Сантти**—хран.—Çĕрĕмĕш пайĕ. Санттиметтр—меттăрăн çĕрĕмĕш пайĕ, санттикрам—крамăн çĕрĕмĕш пайĕ, санттилиттăр—литтăрăн çĕрĕмĕш пайĕ.

**Санттиментталисăм**—Литтераттурăра—XIX-мĕш ĕм. суйа класçитсисăма хирĕç пыракан направлени; ытти направле-

нисенђен—супйекта шухашесене, пçиххолокине аналислесе çырнипе уйарался тарат. Санттиментталиссем—çын ђеринђе тенђе çинђен, йурату çинђен, мескенсене херхенесси çинђен шухашшем варатма тарашна, çаванпа весен романесем хуйхалла, йеру романесем пулна.

**Сават**—Терле ђере (хађђен хапрак-саватра пулман) йапаласенђен алапа, йе машшинсемпе еçе йурахла йапаласем хатерлекен претприйатти, çурт.

**Сайавлени**—выр.—Уђрештенине, йе орканисатсине мен çинђен те пулин пелтерсе, йе мен те пулин тума ыйтса çырна хут.

**Сухђор**—Театтарта актйорсене роðсене шаппан каласа пыракан.

**Супперхосхат**—лат.—Шама келне кекерт кислутипе хуташтарса туна çанах майла йапала, анасем çине тислек выранне таксан пите аван.

**Супçити**—лат.—Укçан пана пулашу, поссопи.

**Супйекта**—лат.—Пçиххолокипе хилосохвире—пеђђен, хай уйрам еçлеме пултаракан ђун, „епе“, пур тенђерен хайне уйрам шухашлакан ђун.

**Сут**—выр.—Çын айапесене тереслесе, сакконсем тарах айаплакан уђрештени.

**Сунђак**—ним.—Çумар йепетесрен, йе хевел песересрен пуç телне тытмалли патак çине карна пир; кирле мар ђухне пуçтарса, ђеркесе хуманла, вара сунђакран туйа пулат.

**Сурт**—хран.—Арасна тес, хай арасна каðествалла йапала (апат-çимеç сурђесем, ђей, тапак сурђе т. ы.).

**Скала**—Киреле тарасан пер пуçне киресем лартма çакакан йапала.

**Скантал**—хран.—Усал ҫап саракан сопыҫҫи; мăшкăл.

**Скептик**—крек.—Нимскере те шанман, ĕненмен ҫын, иккĕленекен.

**Скептитсисăм**—Нимскере те шанманни, ĕненменни, иккĕленни.

**Скипитар**—Терппенттин ҫăвĕ, шăршлă йапала.

**С. К. Р. С.**—Сотсиалисăмла Канаш Респупликĕсен Сойусĕ.

**Скопкă**—1) Алăк, йе арҫа хăлăпĕ. 2) Матгематтиккăра —пĕр ушкăн ҫисласене тепĕр ушкăнтан уйрăм тăнипе кăтартакан паллă „( )“.

**Схемă**—крек.—План, кĕскен кăтартнă тĕп шухăшшем.

**Статтистиккă**—крек.—Тĕрлĕ йавленисене ҫисласем тăрăх ҫистемăласа вĕренмелли йĕркесене астăвакан наукă.

**Статйа**—Пĕр-пĕр ыйту ҫинҫен хаҫат, йе шурнал тавраш ваҫҫи кĕскен ҫырнă хут.

**Стаҫкă**—Пастовккă.

**Стан, станок**—Пĕр-пĕр ĕҫ ĕҫлемелли, йе йапала кӳртсе лартмалли рамă, хатĕр. П и р с т а н ĕ—пир тĕртмелли хатĕр. У р а п а с т а н ĕ—урапан 4 кускăҫĕ: икĕ малти, икĕ кайри кускăҫ. Ҫ ӳ р е ҫ е с т а н ĕ—пĕр ҫӳреҫене лартакан икĕ рамă.

**Стантсă**—хран.—1) Ҫул ҫинҫе канма ҫарăнакан вырăн. 2) икĕ стантсă хушшинҫи ҫул. 3) тĕрлĕ наукă ыйтусене практиккă тăрăх пăхса пĕлме тунă уҫрештени.

**Стутент**—лат.—Аслă шкулта вĕренекен.

**Структурă**—лат.—Йапала пайĕсен ҫыпăҫăвĕ, вĕсем пĕрпĕрinne мĕнле майпа килĕшше тăни (органисăмăн, опҫĕствăн т. ы. структурĕ).

**Стоппа**—Хут паҫки—480 листа.

**Сҫенă**—лат.—1) Театтăрта акӗорсем выҫакан ҫӳлӗ вырăн. 2) Пйессăн пӗр йавлени, пайӗ.

**Слопота**—Пысăк хуласем ҫумӗнҫи йалсем, хула ҫӗрӗ ҫинҫи, хуларан ăрасна ларакан кил-ҫуртсем.

**Сохвисăм**—крек.—Суйа сăмаха тӗрлӗ сăмах майӗсемпе тӗрӗс пек кăтартни. Ӗлӗк Кретсире, Сократрҫн малтан пулнă тӗрлӗ вӗрентекенсен тавлашу манерӗ.

**Сопраҫи**—выр.—Пуху.

**Сотсиалисатси**—Опҫӗствă аллине пани. Ҫӗре сотсиалисатсилени—пӗтӗм ҫӗре хăйсем вăйӗпе ӗҫлесе пурăнакансен аллине парса, ҫӗре сутма, илме, тара пама пăрахтарни.

**Сотсиал-темократӗи**—Маркҫисăма хапăл тăвакансем, пролеттариата каппитталпа ҫапăҫма вӗрентсе, сотсиалисăма ҫывăхарташшăн тăрăшакансем. Халӗ темиҫе тӗрлӗ парттисем пулса пӗтнӗ, вӗсенҫен пӗр Р. К. П. анҫах Маркс вӗрентӳне ҫăн пурăнăҫа кӳрттешшӗн тăрăшаӗ, ытти парттисем каппиттала сутăннă.

**Сотсиал-револҫутсионерсем, эссерсем, эссерсен партӗи**—Инттеликентси инттересӗсемшӗн тăрăшакан политтиккă партти, патша влаҫне пӗтерес ҫӗрте террор меттоҫӗсемпе кӗрешнӗ. Окӗапӗр Револҫутси хыҫҫăн темиҫе пайа саланса пӗтнӗ, хăйӗн пуршуаҫи майлă ӗҫӗсемпе ӗҫлекенсене, хресҫенсене хăйӗнҫен сивӗтнӗ пирки, Канаш влаҫне хирӗҫ тăнă пирки пӗтсе ларнă. Нумайӗшӗ—пуршуаҫи йенне кусна, нумайӗшӗ комуниссемпе пӗрлешше кайнă.

**Сотсиалис**—Сотсиалисăма хапăл тăвакан, сотсиалисăмшăн тăрăшакан.

**Сотсиалисăм**—Малалли çынсен пуранăçĕ çинђен калакан вĕрентӳ: пур ĕçлемелли оруӳисем, хатĕрсем пĕтĕм опђĕствăн пулмалла, пур тăвакан, тупакан йапаласем (протуктăсем) пурне те пĕр пек валеçĕнмелле, пур те пĕр пек ĕçлесе пурăнмалла, пур çын та пĕр тан, никам та тепĕринђен аслă пулмалла мар, мĕн пур тĕнђери халăхсем пĕр тăван пек пурăнмалла тесе вĕрентет.

**Сотсиалла**—Опђĕствăлла. С о т с и а л л а  ы й т у—мĕн пур çын опђĕствин ыйтăвĕсене, опђĕствăна мĕлле майпа улăштарса аванлатассине пур йенђен те пăхса пĕтерекен ыйту. Сотсиалла науккăсем—опђĕствă çинђен вĕрентекен науккăсем: политтиккă економи, истори т. ы. С о т с и а л л а  р е в о љ у т с и—опђĕствă пурăнăçне тĕпĕ йĕрĕпе, ĕçлекенсен инттересĕсем майлă, пăсса çĕнĕрен тăвакан револјутси.

**Сотсиолоки**—Етем опђĕствин пурăнăçĕ сакконĕсене тĕрĕслесе вĕрентекен науккă.

**Совет**—Канаш.

**Сойус**—Пĕрлешӳ, килĕшӳ, ушкăн.

**Сойусник**—Пĕрлешекен.

**Соолăк**—Соолокине ăста пĕлекен.

**Соолоки**—крек.—Тĕнђене пĕлекен науккăн ђунлă йапаласем çинђен вĕрентекен пайĕ.

## Ç.

**Çуприс**—хран.—Кĕтмен парне. Кĕтмен çĕртен сиксе тухнă ĕç, йапала, сопыӳӳи.

**Çеккунтă**—лат.—Минутăн 60-мĕш пайĕ.

**Çектă**—лат.—Ушкăнран уйрăлса пулнă пĕђĕк ушкăн: пуринђен ытла релики ушкăнĕ.

**Çекси**—лат.—1) Пысăк пухусенђе пěр-пěр ыйтăва тěплесе тухма суйласа лартнă çынсем. 2) Уйрăм пайě, уђрештенисен пайěн пайě.

**Çекрет**—хран.—1) Вăрттăн калакан сăмах, пур те пěлме кирлě мар йапала. 2) пěр-пěр йавленин палăрса тăман услови. 3) тăшмансене вăрттăн сăнаса тăма уйăрнă салтаксем.

**Çекреттар**—Çыруçă, уђрештенисенђе—пур кěнђелер ěçне туса тăракан, пуçлăх вађђи хутсем хатěрлекен çыруçă; пухусенђе—пуху мěн-мěн тунине тěпě-йěрěпе çырса пыракан.

**ÇЕП**—Çěнě еккономи политтěкě: çак виçě сăмахăн малтанхи саспаллисенђен тунă сăмах: Канаш влаçěн краштăн вăрçи пěтсен (1921 ç.) пуçланса кайнă политтиккă.

**Çеппараттăр**—Сěтрен хăймине уйăрса кăларакан машшин.

**Çеппараттисăм**—Ушкăнран уйăрăлса тухма, ахтономиллě пулма тăрăшни. Патшалăхсем пěрлешше тепěр патшалăхпа вăрçнă ђух, пěр патшалăхě, ытгисенђен уйрăм килěшў тума гăрăшаŤ пулсан, ăна çеппаратлă килěшў тăвашшăн теççě.

**Çесон**—хран.—Çулталăк пайě: паллă, пěр пек тăракан вăхăт; театтăрта—çуллахи, йе хěллехи уйăхсем (хěллехи, йе çуллахи çесон).

**Çеççи**—лат.—Вăхăтран-вăхăтран пухăнакан ушкăнăн пухăвě ěçлекен вăхăт, сăмахран—ěçтăвкомсен çеççийě.

**ÇенŤŤапěр**—Çулталăкăн 9 мěш уйăхě, авăн уйăхě.

**Çенссатси**—лат.—Пурне те хăй çинђен калаçтаракан ěç.

**Çерийа**—хран.—1) Ěрет, йěрке, ушкăн, пай. 2) расретсемпе тухса пыракан патшалăх сайомě.

**Çейм**—Хăш-хăш пуршуаçиллĕ патшалăхсенче (Хинчанчи, Польшă) парламĕнт, халăх претставиттĕлĕсен пухăвĕ.

**Çихвилис**—Намăс чирĕ, питĕ сикекен чир.

**Çистемă**—крек.—1) Пĕр майлă вĕрентӳсен йĕркеленĕ пухăвĕ (хилософхви çистеми); 2) йапала пайĕсен йĕрки, вĕсем пĕр-пĕринпе çыпçуллă, килĕшӳллĕ тăни (тĕнче çистеми, нервăсен çистеми); 3) пĕр-пĕр ĕçĕн майĕсемпе тĕрĕс планĕ (управлени çистеми). Х ĕ в е л ç и с т е м и—хĕвел тавра çаврăнса тăракан планеттăсемпе кометтăсем. К е о л о к и ç и с т е м и—çĕр пичĕ хытса пулса пынă çĕрте уйрăм тăракан пай.

**Çимулйатси**—лат.—Пăлахайа хывни, çук йапалана пур тесе суйни; сăмахран—салтакран хăтăлашшăн чирлĕ тесе кутăнланни.

**Çимппатти**--крек.—Савни, йуратни, кăмăла кайни.

**Çимметри**—крек.—Йапалан пайĕсем тĕрĕс, икĕ йенче те пĕр пек тăни: çимметриллĕ йапалана çурмаран кассан, икĕ çурри шăп пĕр пек пулаççĕ.

**Çинтиккат**—хран.—1) Каппитталисăмла претприйаттисен рынăка пĕр пĕринпе валеççе, тавар хакĕсене нормăласа конккурентсине пĕтерме тăрăшакан сойусĕ. 2) Хрансири ĕçлекенсен прохсойусĕсем.

**Çинтиккалисăм**—Револютсиллĕ вĕрентӳ: каппитталисăма пĕтерсе, сотсиалисăм тумашкăн ĕçлекенсен парламĕнтсем урлă мар, хĕç-пăшалпа каппитталиссемпе кĕрешше те мар, ĕçлекенсен çинтиккачĕсем туса, станкăсем туса, ĕçлекенсен пурăнăçне економиккă тĕлĕшĕнчен аванлатса, вĕсен орканисатсисене вăйлăлатса пыма чĕнет. Пуринчен ытла çинтиккалисăм Хрансири ĕçлекенсем хушшинче вăйлă тăрать.

**Çинттăкçис—крек.**—Краматтиккă пайĕ: ђĕлхен ăрасна сăмахĕсем пĕрлешше халап пулас сакконĕсене вĕрентет.

**Çинттĕс—крек.**—Аналиспа хире-хирĕç поњаттйи: вак поњаттйисене пĕрлештерсе вĕсенђен пĕр пысăк поњаттйи туни.

**Çÿшет—хран.**—Литтераттурă, йе мусăк происветенисен тĕп шухăшĕ, темă.

**Çкелет—крек.**—1) Етемĕн, йе выђăх-ђĕрлĕхĕн ўг-тирĕнђен тасатнă шăм-шакĕ; 2) мĕнĕн те пулин тĕрекĕ, пурне те тытса, çĕклесе тăракан пайĕ.

**Çпеккуљатси**—лат.—Кирек мĕнле ĕçрен те пысăк услам курма тăрăшни, таса мар ĕççемпе çыхланса услам курни.

**Çпеккуљант—хран.**—Спеккуљатсипе çыхланса çÿрекен.

**Çпектаккăљ**—хран.—Театтăрта пĕр-пĕр пйесă выљаса кăтартни.

**Çпектăр**—лат.—Çутă пайăркине виçкĕтеслĕ кĕленђе присмă витĕр кăларсан çутă саланса темиçе теслĕ пулакан ўкерђĕк (хĕвел çпектăрĕ—асамат кĕперри—хĕвел çути çумăр тумламĕсем витĕр тухса саланнăран пулаť).

**Çпетсиалис—çпетсă**—Пĕр ĕçе питĕ лайăх вĕренсе ăна пĕлсе тăракан.

**Çпетсиалисатси**—Пĕр ĕçе лайăх тума вĕренни.

**Çпирт**—Алккокăљ, пылак йапаласем йўççен пулакан, ўсĕртекен йапала.

**Çтена**—выр.—1) Çурт таврашĕнђе—пўлĕмсене уйăрса тăракан хупăр; шăтăксăр карта; 2) Кирек мĕнĕ те урăх йапаларан уйăракан хупăр.

**Çтенокрахви**—крек.—Ăрасна паллăсемпе хăвăрт çырмалли искусствă.

**Çтенокрахвис**—Çтенокрахвипе çын сăмахĕсене калаçнăçемĕн çырса пыракан.

**Çтереоскоп**—крек.— Карҭҭинсем пăхмалли хатĕр: хоттокрахвипе ўкернĕ карҭҭинсем ахаљ пăхнă пек лаптак мар, ђăнах тăнă пек, ђăмăррăн, темиçе йенлĕ курăнаççĕ.

**Çтерлĕнк**—Ăнкђири укçа, пирĕн шутпа 10 тенке йахăн.

**Çтил**—крек.—1) Писсаттĕлĕн, йе хутошнĕкĕн çырас манерĕ; литтераттурăпа искусствăн пĕр-пĕр еппоххăна пĕлтерекен характĕрлĕ паллăсем. Кивĕ çтил—Кивĕ кăлентар, Йули кăлентарĕ; Сĕнĕ çтил—Крикори кăлентарĕ.

**Çтиппенҭи**—лат.—Вĕренекенсене тĕрлĕ уђрештенисем парса тăракан поссопи.

**Çтиппенҭиат**—лат.—Çтиппенҭи илсе тăракан вĕренекен.

**Çтиххийă**—крек.—Тĕнђе вăйĕ: çын хăй тăрăшнипе ђарма пултарайман вăй (çĕр ђĕтрени, вăйлă çумăр т. ыт.)

**Çтиххотворени**—Сăвăллă, илемлĕ çырнă литтераттурă произветени.

**Çметтă**—Пулас расхутсемпе тоххотсене тĕрĕслесе, шутласа çырнă хут.

**Çвитетлĕ**—Курса, пĕлсе тăракан.

## Л.

**Лак**—ним.—Тĕрлĕ смаласене çпирт, скипитар, йе çу çинђе ирĕлтерсе тунă краскă: сăрланă йапаласене çуттăн курăнтараҭ.

**Лакăр** (лакĕр)—ним.—1) Çар пухăнса тăракан вырăн, поçитси; 2) политтиккăра—пĕр-пĕр парттине хирĕç тăракан парттисем.

**Лаккей**—Тарçă.

**Лапиринт**—1) Авалхи крексен, римђăнсен—шутсăр нумай, пăтратса пĕтернĕ пўлĕмлĕ, тухма пĕлмелле мар, пысăк

çуртсем. 2) Йывăççем хушшинчи çулсене лапиринтри пӳлĕмсем майлă туса пĕтерне пахчасем. 3) Хăлха ăшчикĕ. 4) пăтратса пĕтерне, ăнланма пĕлмелле мар йапаласем, шухăшсем,

**Лапораттори**—лат.—Тĕрлĕ оппăтсем тума (хими, хиçик т. ыт. оппăтсем) хатĕрсем пур çурт, пӳлĕм.

**Латтынь**—Ĕлĕк Римре пурăннă халăх, халĕ çук; çав халăхăн чĕлхи, халĕ вăл чĕлхепе тĕрлĕ науккă сăмахĕсене çыраççĕ.

**Латви**—Латтышшен патшалăхĕ: револютсиччен Раççейĕн Лихчанĭи кĕпĕрни пулнă, халĕ пуршуаçилле респупликкă.

**Ласарет**—ним.—Пульнитсă, шпитал, чирлĕ, йе аманнă салтаксене пăхакан вырăн.

**Лекентă**—Ĕненмелле мар, йумах майлă калав. Пĕр-пĕр авалхи ĕççем çинчен халăх хушшинче çӳрекен калав; тĕрĕсси-суйине пĕлмелле мар сăмах

**Лектăр**—лат.—Лексисем вулакан.

**Лекси**—лат.—1) Аслă шкулта вĕрентекен, йе прохвессăр пĕр ыйту çинчен каласа пыни; 2) çав вĕрентсе калани не хут çине çырса хуни. 3) кирек мĕнле çын та пĕр ыйту çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе, итлекенсене вĕрентме, калакан сăмах.

**Леттарки, леттаркилле ыйăх**—крек.—Чирлĕ, усал, çынна вилнĕ пек тăвакан ыйăх: çывăрса кайсан, çын темиçе кун ним пĕлмесĕр çывăраĭ.

**Ленттă**—Ансăр, вăрăм пусма (хăйу).

**Ленин**—Влатимĕр Ильич Ульйанăв—тĕнчери пролеттариата комунисăм çулĕпе йертсе пыракан, 1870-мĕш çулта Чĕмпĕрте (халĕ Ульйанăвск) çуралнă. Çамрăкранах сотсиалла науккăсеве тĕплĕ вĕренсе, Влатимĕр Ильич часах маркçисăмшăн хытă кĕрешекен револютсионер пулса кайаĭ, 1890-

мӗш ҫулсенҫе „Ӗҫлекенсен класне ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекенсен Сойусӗ“ тӑваӗ. Анҫах ҫасах патша правиттӗлстви ӑна тытса Ҫӗпӗре йараӗ. Ҫӗпӗртен тавӑрӑнсан, В. И. йут патшалӑха тараӗ те, унта Плеххнӑвпа, Марттӑвпа пӗрле „Искрӑ“ йатлӑ хаҫат урлӑ Раҫҫейри сотсиал-темократтине економисӑм (ҫав сӑмахсене пӑх) ултавӗсенҫен тасатас тӗлӗшпе хытӑ ӗҫлет. 1903-мӗш ҫулта парттин 2-мӗш сиесӗ хыҫҫӑн В. И. поҫшевиксен литӗрӗ пулса тӑраӗ, 1905-мӗш ҫулхи револютсире Совет влаҫӗ тӑвас лосунка кӑларса йараӗ, унтан кайран ликвитаттӑрсемпе кӗрешет. Вӑрҫӑ пуҫланса кайсан, II-мӗш Инттернатсионалӑн пуҫлӑхӗсем каппитталиссем май.лӑ пулса кайсан, В. И. хӑй тавра имппериалисӑм вӑрҫине краштӑн вӑрҫи туса йарашшӑн тӑрӑшакансене пухаӗ, вӑрҫа хирӗҫ вӑрҫӑ кӑларса йараӗ. Хевраҫри револютси хыҫҫӑн Раҫҫейе тавӑрӑнсан, Ленин пур пуршуаҫилле парттисемпе кӗрешме, револютси ӗҫне малалла йарса пырассишӗн тӑрӑшма пуҫлаӗ. Октапӗрти Револютси пулсан Ленина Халӑх Комиссарӗсен Канашӗн Претҫетаттӗлӗ туса хураҫҫӗ, вара вӑл тӗреклӗ алӑпа, тӗрӗс ҫулпа тӗнҫере халиҫҫен пулман ӗҫлекенсен респупликне йертсе пыраӗ. 1919-мӗш ҫулта, В. И. Ленин тӑрӑшнипе, пур тӗнҫери ӗҫлекенсене пӗрлештерекен III-мӗш Комунисла Инттернатсионал пуҫланса кайаӗ.

Хӑйӗн вӑйӗсене пӗр хӗрхенмесӗр питӗ нумай ӗҫленӗрен В. И. Ленин 1922-мӗш ҫулта йывӑр ҫирлесе кайаӗ те, 1924 ҫ. кӑрлаҫӑн 21 кунӗнҫе вилсе выртаӗ. Ленина Мускавра, Кремҫ ҫтени ҫумне пытарнӑ, ӳтне тухтӑрсем ҫӗрмелле мар тунӑ.

**Ликӑ**—хран.—Политтиккӑ, релики, йе урӑх опҫӗстӑ ыйтусемшӗн тӑрӑшакан сойус, ушкӑн йе ассотсиатси.

**Ликвитаттӑр—сем**—лат.—1) Ликвитатсилекен уҫрештени, ҫын. 2) Раҫҫейри сотсиал—темократсен хушшинҫе—1905 ҫ.

революtsине реакси çĕнтерсен, патшана хирĕç кĕрешес ĕçе пĕтерешшĕн, ликвитатсилешшĕн тăрăшакансем.

**Ликвитатси**—лат.—Тĕп туни, пĕтерни; пĕр пĕр ĕçе, йе претприйаттине пĕтерни.

**Липералисăм** —лат.—Ирĕкшухăшлăх, пуршуаçи политтиккĕнҫе—пĕҫĕк рехвормăсемшĕн, ирĕклĕ конккурентсишĕн тăрăшакан направлени.

**Липкнĕхт**—Карл Липкнĕхт—Кермаҫири вăйлă комунис: 1914-18 çулсенҫи вăрçă вăхăтĕнҫе вăрçа хирĕç акиттатсиленĕ. Кермаҫи правиттĕлстви 1919 çулăн йанвар уйăхĕнҫе Липкнĕхтпа Росă Ҫукçемпурка вĕлернĕ.

**Литĕр**—анк.—Политтиккă парттине тĕрĕс çулпа йертсе пыракан.

**Литтăр**—хран.—Йухакан йапаласен виçи: витрен 12-мĕш пайĕ.

**Литтĕр**—лат.—Сас палли.

**Литтераттурă**—лат.—Çырулăх. 1) Пĕр-пĕр ҫĕлхепе тĕрлĕ йапаласем çинҫен çырнă происветенисем. 2) пĕр-пĕр ыйту çинҫен çырнă происветенисем.

**Литтокрахви**—крек.—1) Ҫул, йывăç, йе урăх йака йапала çине тĕрлĕ краскăсемпе карттинсем ÿкерме вĕрентекен искусствă. 2) литтокрахви ĕçĕсене тăвакан çурт, пÿлĕм.

**Лимххă**—лат.—Ҫи вĕтĕ йун тымарĕсенҫен тухса пĕтĕм ÿт-пĕве сарăлакан, шыв майлă, кăштах сарă тĕслĕ сĕткен.

**Линейккă**—Линисем тумалли, тÿрĕ йĕр ÿкермелли тÿрĕ патак.

**Лини**—Йĕр. Кеометрире—виçесĕр пăнҫă йĕрĕ.

**Лирик**—Лириккăпа çыракан поет.

**Лириккă**—Поеçи тĕсĕсенҫен пĕри: çыннăн туйăмĕсем, сисĕмĕсем çинҫен çырнă илемлĕ çырулăх.

**Ливӗр**—анк.—Йухакан йапаласене пӗр савӑтран тепӗр савӑта куҫармалли ҫинҫе, варри хӑмпӑљђӑ трупа.

**Локиккӑ**—крек.—Шухӑшламалли хормӑсен сакконӗсене вӗрентекен науккӑ.

**Локкаут**—анк.—Хапрӑк-савӑт хуҫисем пастовккӑсемпе кӗрешнӗ ђух темиҫе претприйаттирен, пӗрле килӗшше, ӗҫлекенсене кӑларса йани.

**Лот**—1) Виҫе—кӗрепенкӗн 32-мӗш пайӗ. 2) шывсен тарӑнӑшне виҫмелли вӗҫне йывӑр йапала ҫыхнӑ кантӑра.

**Лоттерейӑ**—хран.—Пилетсем тӑрӑх укҫа, йе йапала выђаса йани.

**Лошӑ**—ит.—Театтӑрсенђе—темиҫе ҫын ӑрасна лармалла тунӑ пӳлӗм.

**Лосунк**—ним.—1) Политтиккӑра—пӗр-пӗр парттин характӗрне тӗрӗс кӑтартакан кӗске сӑмах (пӗтӗм тӗнђери пролеттарисем, пӗрлешӗр!) 2) ҫын пӗр-пӗр парттире, йе орканисатсире тӑнине кӑтартакан условлӑ сӑмах, тевис. 3) кӗскен каласа хунӑ тӗп шухӑш.

**Ломпарт**—Тӗрлӗ йапаласене салока илсе, вӗсемшӗн вӑхӑтлӑх укҫа паракан кретитла уђрештени.

## Љ.

**Љукҫемпурк, Росӑ**—Кермађири ђаплӑ хӗрарӑм—комунис. 1914-18 ҫулхи вӑрҫӑ вӑхӑтӗнђе, К. Липкнӗхтпа пӗрле вӑрҫа хирӗҫ акиттатсиленӗ. 1916-мӗш ҫулта ӑна Кермађи Правиттӗлстви, „Спарттак“ сойусра тӑнӑшӑн тӗрмене хупнӑ. Кермађире револ̧утси пулсан, Росӑ Љукҫемпурк К. Липкнӗхтпа пӗрле, пролеттари револ̧утсишӗн тӑрӑшнӑ, унпа пӗрлех 1919 ҫулӑн йанвар уйӑхӗнђе нимӗҫ меншевикӗсем ӑна вӗлерсе пӑрахнӑ.

**Љутсернă**—хран.—Выђăх çитерме акса тăвакан, ђавка пуç (клевĕр) манерлĕ курăк. Љутсернăна акса тăвакан курăксенђен ђи лайăххи тесе шутлаççĕ.

**Љумппен-пролеттариат**—ним. Каппитгалисăмлă опђĕстврăри—ним паллă ĕç те туман, нимĕскер те çук, тĕрлĕ таса мар ĕççемпе, йе ыйткаласа тăранса пурăнакан çынсен класĕ, происвотствăран тухса ÿкнĕ çынсем. Каппиталисăм експлуаттатсиленĕрен пулса кайнăскер—љумппен-пролеттариат—ĕмĕртенпех пуршуаçине калама çук кураймасăр, ăна пĕтерешшĕн тăрăшша пурăнаĭ, анђах происвотствăран тухса ÿкнĕ пирки, пĕр инттереслĕ клас пулман пирки, комунисла парттипе пĕрле ĕçлеме пултараймасĭ, тĕрлĕ анаркхиссен ушкăнĕсене ытларах килĕштерет.

**Љкоттă**—Çăмăллăх. Кама та пулин пĕр-пĕр ĕçре ытти çынсенђен ăрасна çăмăлтарах условисем пани.

## М.

**Макаçăн**—хран.—1) Пысăк, ђаплă лавкă; 2) тĕрлĕ йапаласем сыхласа усракан вырăн, склат.

**Маккарон**—ит.—Тул çăнăхĕнђен пĕђĕк кĕпçе пек туса хатĕрленĕ апат.

**Макçимум** (**maksimum**)—лат.—Ђи пысăкки; пуринђен ытла.

**Макнит**—лат.—1) Тимĕре хăй çумне туртса илекен тимĕр рути; макниглан̆ хурăç. 2) аллекорилле—асран йамалла мар, хăпма пĕлмелле мар йапала.

**Макнеттисăм**—1) Макнит вăйĕ, макнитсем тимĕр йапаласене хăйсем патне туртса илме пултарни. 2) Хиçиккăн макнитла йавленисене пăхакан пайĕ. Çĕр макнеттисăмĕ

—çĕр ҫăмăрĕн макнитланă йĕппе çурçĕрпе кăнтăрла йенне пăракан вăйĕ.

**Маххоркка**—Йÿнĕ сурт тапак, хутпа туртмалли те, ҫĕлĕмпе туртмалли те пур.

**Мат**—ар.—1) Шахмăт вăйĕнҫе ҫи аслă хикурăна хупса хуни. 2) Ÿрăх ниçта та кайса кĕмелле мар пулни.

**Маттематтикка**—крек.—Пысăккăшпе пĕҫĕккĕш çинҫен, вĕсен сакконĕсем çинҫен вĕрентекен наукка.

**Маттематтик**—Маттематтиккăна ăста пĕлекен çын.

**Маттери**—лат.—1) Кирек мĕнĕн те йапалалăхне, ÿтлĕхне кăтартакан сăмах, йапалан тĕп ÿҫĕ, ăшĕ; 2) пир-авăр, аршăнпа сутакан тавар. 3) суранран йухакан пÿр.

**Маттериал**—хран.—Пĕр-пĕр ĕç тума кирлĕ хатĕрсем, саппасем, поссописем.

**Маттериалисăм**—1) Маттерине пур йавленисен тĕпĕ тесе шутлакан хилосохви вĕрентÿ. 2) К. Маркс вĕрентÿ—историлле (тиалектиккăлла, економиккăлла) маттериалисăм.

**Маттерик**—Тĕнҫе пайĕн тĕп çĕрĕ (кеокрахвире).

**Матрус**—1) Хлот çарĕнҫи салтак. 2) пăрахут çинҫе ĕçлекен. 3) вăрман хуралçисен (стрилуксен) пуçлăхĕ, опйешҫĕк.

**Маҫтă**—ним.—Парăс кармалли кашта.

**Машшин**—лат.—Çын вăйне вăйлăлатса, тăвас ĕçе хăвăртрах тума пулăшакан хатĕр.

**Машшинис**—Машшина пăхса тăрса, майласа, ĕçлеттерсе тăракан.

**Масштап**—ним.—1) Йапалан планне миçе хут пĕҫĕклетнин хисепĕ. 2) пĕҫĕк виçесем ÿкернĕ линейкка. 3) виçе, танлаштармалли хатĕр.

**Маç**—выр.—Сĕрмелли, çемçе, çу майлă йапала.

**Маçтăр**—анк.—Ăста; пĕр-пĕр ĕçе ăста пĕлекен çын.

**Маçтерскуй**—Ĕçлемелли пӳлĕм.

**Мамăнт**—Вилсе пĕтнĕ авалхи тискер кайăк: авалхи слон. Халĕ тĕрлĕ çĕрте мамăнт шăмĕсем тупăнаççĕ.

**Манухвактурă**—лат.—1) Хапрăк майлă промышлĕннăçла претприйаттĭи. 2) алăсталăхсене (ремесласене) пăрахса пысăк машшинсемпе ĕçлеме тытăннă вăхăтсен хушши. 3) аршăнпа сутакан таварсем.

**Манер,—манерлĕ**—хран.—1) Аван, çепçӳллĕ йапала; 2) ĕçе тăвас майсем, ӳт-пĕве тыткаласси.

**Маневăр**—хран.—Çарсем пĕр-пĕринпе вĕренмелле, йури çапăçни.

**Мантат**—лат.—Мĕнле те пулин ĕçе тума ирĕк паракан хут.

**Маҗихвес**—лат.—1) Пĕр-пĕр политтиккă партти хăйĕн тĕп шухăшĕсене кăтартса, вĕсем çинҗен пурне те пĕлтермешкĕн çырнă хут. 2) патша, халăха хăй ирĕкне пĕлтерме çырнă хут. К о м у н и с л а п а р т т и н м а җ и х в е с җ ĕ—К. Марксла Х. Енкĕлс 1847-мĕш çулта кăларнă манихвест.

**Маҗихвестатси**—лат.—Халăх хăй ирĕкне, хăй шухăшĕсене урамсем тăрăх плаккатсемпе çӳресе пĕлтерни.

**Мари**—Çармăс.

**Маркка**—1) Хыснана укçа тӳленине пĕлтерекен пĕҗĕк йарлăк (çырусем, йе ĕçлĕ хутсем çумне çыпăçтараççĕ). 2) Кермаҗире, Хинҗантĭире т. ыт.—укçа, 37½ пус.

**Маркс, Карл**—(1828—1885). XIX ĕмĕрти җи җаплă, ă с л ă çынсенҗен пĕри, науккăлла сотсиалисăмăн никĕсне туса хуракан, I-мĕш Интернатсионала йертсе пыракан, политек-

кономилле, хилосохвилле, историлле кĕнекесен ахтăрĕ, ђаплă революционер. Марксăн ђи ђаплă кĕнеки—„Каппиттал“—тухсан, пролеттариат наукка тĕлĕшĕнђен питĕ нумай малалла кайнă. „Каппиттал“ вĕрентнĕ тăрăх—каппитталисăмла опђĕства хăй ўссе вăйлăланса пынăçемĕн хăй вађђи шăтăк ђавса пыраť, мĕншĕн тесен, каппитталисăм вăйлăланнăçемĕн, унăн ĕмĕрхи тăшманĕ пролеттариат та вăйлăланса пыраť. Маркс вĕрентнĕ тăрăх пролеттариат, каппитталисăм експлуататсинђен хăтăлмашкăн, комунисăмла партти туса, пур происвотствă хатĕрĕсене, патшалăхри влаçа хăй аллине туртса илсе, пролеттариат тиктаттурĕ тумалла. Маркс-хилосохвийĕ (историлле, еккономиккăлла, тиалектиккăлла маттериалисăм) етем опђĕствин никĕсĕ опђĕствăн еккономиккăлла структурĕнђе тесе вĕрентет, опђĕствăн ытти йĕркисем (релики, наукка, искусствă, патшалăх йĕркисем т. ыт.) вĕсем пур те çав еккономиккăлла никĕс çинђе тăракан сийĕсем анђах тет. Истори тĕлĕшĕнђен—Маркс—етем опђĕствин историйĕ вăл çав опђĕствăри тĕрлĕ классем еккономиккăшăн çапăçнин историйĕ тесе вĕрентет.

**Маркçис**—К. Маркс вĕрентўне хапăл тăвакан, ăна ăста пĕлсе тăракан çын, комунис.

**Маркçисăм**—К. Марксăн вĕрентўвĕ—науккăлла сотсиалисăм (**Маркс** сăмаха пăх).

**Март**—Çулталăкăн 3-мĕш уйăхĕ—Пуш уйăхĕ.

**Марш**—хран.—1) Çарсем йĕркеллĕ çўрени. 2) Ушкăнпа йĕркеллĕ çўреме пулăшакан мусăк происветени. 3) Çарсене „кай“ тесе хушакан комантă сăмахĕ.

**Марс**—1) Авалхи римђăнсен вăрçă турри йађĕ; 2) Хĕвел тавра çаврăнакан тулти планетсенђен ђи çывăх планетă: çĕртен кăштах пĕђĕкрех.

**Марҫҫелйесӑ**—хран.—1) Хрантсуссен револ̧утсиллĕ кимăнĕ; 3) ҫавă кимăн кĕввипе йурлакан револ̧утсилле йурăсем.

**Марл̧ă**—Питĕ ҫӳхе, сайра, ăҫлăк майлă пир.

**Май**—Ҫулталăкăн 5-мĕш уйăхĕ—Ҫу уйăхĕ.

**Майак**—1) Ҫул тăрăх аташша кайаоран лартнă паллă. 2) тинĕссем хĕррине карапсене ҫул кăтартма лартакан ҫӳлĕ, шутсăр пысăк хунар.

**Майăн 1-мĕшĕ**—Пĕтĕм тĕнл̧ери пролеттариат каппитталпа ҫапăҫма пĕрлешнин праҫнăкĕ. Вăл куна пĕтĕм тĕнл̧ери сотсиалисăмла парттисен сйесĕ 1889-мĕш ҫулта праҫнăк кунĕ тунă.

**Мусăк**—крек.—Мусăкăлла искусствă—тĕрлĕ сасăсене илемлĕн пĕрлештерсе, ҫыннăн л̧ёрине систерекен ·искусствă (йурăсем, сăвăсем т. ы.).

**Муҫей**—крек.—Тĕрлĕ искусствă йапалисене, авалхи йапаласене пухса пыракан ул̧рештени.

**Муми**—ар.—1) Тĕрлĕ майсемпе емеллесе ҫĕрми тунă ӳт. 2) тĕрлĕ йапаласене сăрламалли хĕрлĕ краскă.

**Мунтир**—ним.—Хормăлла тумтир (салтаксен, милитсисен, вĕренекенсен т. ы.).

**Метик**—лат.—Метитсинăна ăста пĕлекен, лекĕр, тухтăр.

**Метитсинă**—лат.—Л̧ир-л̧ĕрсене тӳрлетекен науккăпа искусствă.

**Метталсем**—Хими тĕлĕшĕнл̧ен пĕр пек, хытă, витĕр курăнман, хĕртсен ҫемҫелекен, ҫапсан лапл̧ăнакан, тăсăлакан йапаласем (тимĕр, тăхлан, пăхăр, л̧инк т. ы.) Л̧ а п л ă м е т т а л с е м—тутăхман метталсем: ылттăн, кĕмĕл, платтина.

**Метталлурки**—крек.—1) Технолокин пайĕ: тĕрлĕ метталсене вĕсен рутисенҫен тупас ĕҫе вĕрентет; 2) метталсем тупакан промышлĕннăҫ.

**Меттăт**—крек.—Тăвас ĕҫĕн ҫулĕсем, майĕсем, йĕркисем.

**Меттăр**—крек.—Меттăр ҫистемĕн тĕп виҫи—Париш меритианĕн 40 мĕлйунăмĕш пайĕ (22$^{1}/_{2}$ вершук).

**Меттеор**—крек.—Ӳкекен ҫăлтăр, ҫĕр ҫине пĕлĕт ҫинҫен ӳкекен ҫулсем.

**Меттеоролоки**—крек.—Ҫĕр атмосверĕнҫи йавленисене сăнаса пыракан наукkă.

**Меморантум**—лат.—Пĕр-пĕр правиттĕлствă мĕнле те пулин ыйту тăрăх тепĕр патшалăха хăйĕн шухăшĕсене кăтартса панă хут.

**Меншевиксем**—1903 ҫулта Раҫ. Сот. Тем. Ĕҫлек. Парттин 2-мĕш сйесĕнҫе сахаллăн йулса сйес шухăшĕпе килĕшмесĕр йулнă ҫынсем. Сйеса пухăннă ҫынсем малтанах оркаписатсилле ыйтусем тăрăх килĕшеймен: меншевиксем парттине кĕме пурне те ирĕк парас тенĕ, поҫшевиксем—парттине пуринҫен ытла ĕҫлевенсене, парттишĕн хытă тăрăшакансене анҫах кӳртес тенĕ. Сйес пĕтсен кайран ҫасах меншевиксемпе поҫшевиксем тактикkă ыйтăвĕсем тăрăх килĕшӳ ҫухатнă. Кайран-кайран меншевиксем (пуринҫен ытла вăрҫă пуҫланнăран вара) пĕтĕмпех пуршуаҫи майлă пулса кайнă. Халĕ вĕсен партти кунран кун пĕтсе, саланса пырать.

**Меритиан**—лат.—Ҫĕр ҫăмăрĕн икĕ поҫусĕ витĕр екваттăра ҫурмаран татса кайакан, шухăшпа тăвакан йĕр.

**Микроскоп**—крек.—Пĕҫек йапаласене темиҫе пин хут пысăклатса кăтартакан трупа.

**Микроорканисӑмсем**—Шутсӑр вӗтӗ, ахаҙ куҫпа пӑхса курӑнман, микроскоп витӗр анҙах курӑнакан оркаиисӑмсем: пактерисем, инхусорисем.

**Михҳолоки**—крек.—1) Тӗрлӗ претанисене астӑвакан, вӗсене хисеплекен, йӗркелекен наукка. 2) Пӗр-пӗр халӑхӑн авалхи пурӑнӑҫӗ ҫинҙен калакан претанисем, ӗненмелле мар калавсем, йурӑсем.

**Миҫтитсисӑм**—крек.—1) Реликиллӗ хилосохви вӗрентӳ: етем турӑпа пӗрлешме пултарать, унӑн ирӗкне пӗлме пултарать тесе вӗрентет. 2) тӗрлӗ тӗлӗнмелле, ӑнланмалла мар йавленисене йуратни.

**Милиттарис**—Милиттарисӑмшӗн тӑрӑшакан.

**Милиттарисӑм**—лат.—1) Патшалӑх ҫар, йе вӑрҫӑ интересӗсене пуринҙен мала хуни; 2) патшалӑх хӑйӗн пур вӑйӗ ҫитнӗ таран ҫарне, вӑрҫӑ хатӗрсене вӑйлӑлатни.

**Милитси**—лат.—1) Раҫҫейре—халӑх хушшинҙе йӗркесӗрлӗхсем ан пулҙҙӑр тесе сыхлакан уҙрешгени, тытӑм уҙрештенийӗ. 2) Халӑх пухӑнса килӗшӳллӗ пулнӑ ҫар.

**Милитсионер**—Милитсире ӗҫлекен ҫын.

**Миллиарт**—Пин мӗлйун.

**Милликрам**—Крамӑн пинӗмӗш пайӗ.

**Миллиметтӑр**—Меттӑрӑн пинӗмӗш пайӗ.

**Миллион (мӗлйун)**—Пин хут пин.

**Мимиккӑ**—крек.—Тӗрлӗ шухӑшшене пите-куҫа улӑштарнипе, йе ал-урапа кӑтартнипе пӗлтерекен искусствӑ.

**Минӑ**—хран.—Тинӗссем ҫинҙе—карапсене путаракан пысӑк снарет: хӑй тӗллӗн ишше ҫӳрекенни те, карапсем ҫинҙен тӗллесе йамалли те пур.

**Минералсем**—лат.—Хытӑ, йе шӗвӗ (ҙулсем, шыв, тимӗр) ҙунсӑр йапаласем.

**Минералоки**—Тĕрлĕ минералсем çинҫен вĕрентекен науккӑ.

**Министӑр**—Пуршуаçилле патшалӑхсенҫе—патшалӑхӑн аслӑ уҫрештенине пӑхса тӑракан улпут.

**Минимум**—лат.—Пуринҫен те пĕҫĕкки, сахалли.

**Мир**—Килĕшӳ.

**Мираш**—хран.—Таçти инçетри йапаласем умри пек курӑнакан йавлени: çутӑ пĕрпек ӑшӑмар сывлӑш витĕр тухса хуçӑлнӑран пулаӳ.

**Мрамӑр**—крек.—Пĕрҫĕллĕ исвĕс ҫулĕн хытӑ йышши: темиçе тĕсли те пур.

**Мопилисатси**—хран.—Çарсене вӑрçа кайма пуçтарни, хатĕрлени.

**Мошенник**—ултавçӑ, шарлаттан, таса мар ĕççемпе пурӑнакан çын.

**Молеккулӑ**—Питĕ шутсӑр пĕҫĕк пай.

**Монарх**—крек.—Патша, ĕмпӳ.

**Монаррхис**—Монаррхисӑмшӑн тӑрӑшакан.

**Монаррхисӑм**—Пур патшалӑх ĕçĕсене пĕр патша тытса тӑракан патшалӑх йĕрки.

**Морш**—Сивĕ тинĕссенҫе пурӑнакан тĕлен майлӑ выҫӑх.

## Н.

**Науккӑ**—1) Етем йӑхĕ мĕн авалтанпа вĕренсе пырса пĕлни; 2) пĕр-пĕр ыйту çинҫен çистемӑна кӳртнĕ вĕрентӳ (маттематтиккӑ, метитсинӑ т. ы.)

**Науккӑлла сотсиалисӑм**—Маркçисӑм сӑмаха пӑх.

**Наисуç**—Кĕнеке çине пӑхмасӑр, астуса тӑнӑ тӑрӑх тĕрĕс калани.

**Нахталин**—Çӗр кăмрăкӗ смалинҗен тăвакан шурă, йур майлă йапала. емелсем тунă çӗрӗ, йе йапалана кӗве çийес-рен сапмашкăн кайаҭ.

**Направлени**—Паллă йенлӗ йухăм, сăмахран: литтерат-турăн реалисăмла направлени—пӗр вăхăтра темиçе писсат-тӗл, хăйсен вăхăтӗнҗи литтераттурăри тратитсисене пăрах-са, реалисăмла çырма тапратсан, вӗсен ӗçӗ ăнса пырсан, литтераттурă историйӗнҗе палăрса йулсан—вӗсен вăхăтӗнҗи литтераттурăна реалисăм направленилле литтераттурă теççӗ.

**Наттурă**—лат.—1) Çыннăн, йе йапалан ăшӗнҗи пурлăхӗ, сăмахран: т ы р ă   н а т т у р ӗ—тыррăн тутлăхӗ (пӗр тырах кăшçул аван, кăшçул наҗар наттурăллă пулаҭ); ç ы н   н а т-т у р ӗ—çын кăмăлӗ, унăн характӗрӗ. 2) укçа вырăнне пара-кан кирлӗ йапаласем (пӗр-пӗр ӗç тунăшăн укçа вырăнне тырă, тумтир, йе урăх йапала парсан—ӗçленӗшӗн наттурăпа панă теççӗ).

**Натси**—лат.—Пурăнăç йӗркисем-йăлисем пӗр пек, пӗр йăхран тухнă, пӗр вырăнта пурăнакан, пӗр җӗлхепе калаçа-кан етемсен ушкăнӗ.

**Натсионалис**—Хăй натсишӗн анҗах тăрăшакан, ытти натсисене кӗçӗне хуракан.

**Натсионалисатси**—Çӗр вăрмансене, хапрăк-савăтсене, йе урăх мӗне те пулин патшалăх аллине илни.

**Натсионалисăм**—Пуршуаçин политтиккă вӗрентӳйӗ: хар-пăр хăй натсишӗн анҗах тăрăшша, ытти натсисене хăйне пăхăнтарма хушаҭ.

**Нашатăр**—Шăршлă минерал,—емелсем тунă çӗре, сăрă-сем çине, тăхлапла шăратса çыпăçтарнă çӗре кайаҭ.

**Налок**—Куланай.

**Наротниксем**—Каппитталисӑм малалла кайса пыни йала тивмест, йалти хресҫен опҫӗстви ҫаплипех йулмалла тесе шухӑшлакавсем; политтиккӑ парттисенҫен ҫавӑн пек есерсем шухӑшлаҫҫӗ.

**Наротоволҍтсӑсем**—„Народная Воля“ йатлӑ револютсиллӗ парттин ҫленӗсем. Вӑл партти 1879-мӗш ҫулта пуҫланса кайнӑ, патша ирӗкне террӑрпа пӗтерме тӑрӑшнӑ; патша правиттӗлстви ӑна 1880-90-мӗш ҫулсенҫе ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

**Нулҍ**—лат.—Нимӗн те ҫуккине кӑтартакан ҫихвӑр—0.

**Некаттив**—хран.—Хоттокрахвинҫе—ҫутта сисекен кантӑк ҫине ӳкнӗ сӑн; некаттив ҫине пур йапала сӑнӗ те кутӑнла ӳкет: хура вырӑнсем-шурӑ, шурӑ вырӑнсем—хура ӳкеҫҫӗ.

**Некӑрсем**—Ахриккӑра пурӑнакан хура ӳтлӗ халӑх.

**Некролӑк**—крек.—Вилнӗ ҫынна асӑнса, увӑн пурӑнӑҫӗ ҫинҫен, йе ӗҫӗсем ҫинҫен кӗскен каланӑ сӑмах, йе ҫырнӑ хут.

**Нехтӑ**—арап.—Ҫӗр айӗнҫен тухакан ҫу майлӑ шӑршлӑ йапала; нехтӑран нумай тӗрлӗ йапаласем пулаҫҫӗ: кӑраҫҫин, пенҫин т. ы.

**Нервӑ**—лат.—Пуҫ, йе ҫурӑм миминҫен пӗтӗм ӳтпӗве сарӑлакан ҫинҫе миме ҫиппи; нервӑсем систерекен йышши, хускатакан йышши пур. Куҫри, хулхари, сӑмсари, ҫӑвартари ҫӗхлери нервӑсем кашни ҫутта, сасса, шӑрша, тутлӑпа йӳҫҫе пуҫ мимине систерсе тӑнӑран ҫын курать, илтет, шӑршлать, йӳҫҫе-тутта сисет. Ҫынна алӑран йӗпӗпе сасартӑк ҫиксен систерекен нервӑ пуҫ мимине ыратни ҫинҫен систерет, пуҫ мими хушнипе хускатакан нервӑ алла хӑвӑртрах туртса илтерет. Алӑри нервӑсене хул тӗпӗнҫен пурне те татса тух-

сан, алли сывах, лайӑхах пулсан та, алӑ нимӗн те пӗлми, хускалаймн пулаҫ, вилет.

**Нейтралиттет**—храп.—Тавлашуна хушӑнманни; икӗ патшалӑх вӑрҫаҫҫӗ пулсан, виҫҫӗмӗшӗ вӗсен вӑрҫине хутшӑнасшӑн мар пулсан,—ӑна нейтралиттет тытаҫ теҫҫӗ.

**Никилис**—Никилисӑма хапӑл тӑвакан. Никилис ђипӗ—Туркенӗвӑн „Ашшӗсемпе ађисем“ йатлӑ романӗнђе—Пасарӑв.

**Никилисӑм**—лат.—XIX-мӗш ӗмӗрӗн 50-60 ҫулсенђи вырӑс литтераттурӗ вӗрентнӗ шухӑш: реликине, ҫемйе йӗркисене, хӗрарӑмсен йӑвӑр пурӑнӑҫне, патша йӗркине пӗтерасшӗн тӑрӑшнӑ. Сотсиалисӑмпа килӗшӳллӗ пулнӑ пирки, револђутси вађђи, никилисӑм нумай ҫынсем хатӗрленӗ.

**Никкӗл**—ним.—Кӗмӗл майлӑ ҫутӑ меттал, тӗрлӗ вактӗвек йапаласем тума, йе урӑх метталсене ҫутатнӑ ҫӗре кайаҫ.

**Ноттӑ**—лат.—1) Мусӑкра—сасӑн ҫинђӗшӗпе пысӑккӑшне кӑтартакан паллӑ. 2) йут патшалӑх правиттӗлствине пӗрпӗр ӗҫ ҫинђен ҫырса панӑ охвитсиаллӑ хут.

**Номӗр**—лат.—1) Пӗр-пӗр йапалана ытти йапаласем хушшинђе кӑш вырӑнта тӑнине кӑтартакан паллӑ; 2) шут йӗрки палли: кӗнеке ҫырусем ҫинђе „№“ паллӑпа кӑтартаҫҫӗ.

**Нормӑ**—лат.—Виҫе, йыш, пӑравӗлӑ, йурӑхлӑ. Ҫ и м ӗ ҫ н о р м и—шӑп килӗ таран, ытлашши те мар, сахал та мар, ҫийес хисеп. П у х у с е н е с у й л а с н о р м ӑ (претставиттӗлствӑ норми)—мӗнле йыш миҫе ҫын суйлас виҫе, пӑравӗлӑ.

**Нойапӗр**—лат.—Ҫулталӑкӑн 11-мӗш уйӑхӗ—Ђӳк уйӑхӗ.

## Р.

**Ракеттӑ**—ним.—Тӗрлӗ йышши тар тултарнӑ хут килсӑ, тивертсе йарсан питӗ илемлӗн ҫунса ҫӳлелле хӑпарса кайаҫ.

**Рапхак**—Ӗçлекенсен хаккуђтеђе; аслă шкулсене кӗме хатӗрлекен шкул: ӗçлекенсемпе хресђенсене анђах илеççӗ.

**Рапођђай**—Хапрăк-савăтра, йе урăх претприйаттинђе ӗçлекен, çавăнта ӗçленипе анђах тăранса пурăнакан.

**Ратиус**—лат.—Çаврашкара—ђенттăртан хӗррине çитиђђен туртнă лини.

**Ратиккал**—лат.—Ратиккалисăма хапăл тăвакан; политтиккă тӗлӗшӗнђен тӗпӗ йӗрӗпе улаштарашшăн тăрăшакан.

**Ратиккалисăм**—лат.— 1) Политтиккăра, хилосохвире, йе урăх ӗçре хăй шухăшшене тӗпӗйӗрӗпе вырăна кӳртешшӗн тăрăшни. 2) пуринђен те ытла липераллă политтиккă направленийӗ.

**Ратий**—лат.—Курăнми хӗлхемсем кăларакан питӗ хаклă елемент. Питӗ усăллă йапала, анђах калама çук сахал.

**Ратио**—1) Правлуксăр телекрах. 2) Правлуксăр телекрахпа йанă телеґрам.

**Раттихиккатси**—лат.—Патшалăхри ђи аслă влаç пӗрпӗр токăвăра тӗплесе йышăнни.

**Ратсионалис**—лат.—1) Ратсионалисăма, теисăма хапăл тăвакан; 2) пур пурăнăç ыйтăвӗсене те пуçри ăсăпа криттиклекен çын.

**Ратсионалисăм**—лат.—1) Çыннăн ăсӗ тӗнђере пуринђен те аслă, çын ăсӗ пурне те тума пултарать тийекен вӗрентӳ. 2) религи çине, вăл çын ним пӗлменнипе анђах тытăнса тăрать тесе пăхни. 3) теисăм.

**Ратсионаллă**—Усăллă, тӗрӗс, тӗплӗ (пӗр-пӗр ӗçе мӗнле тăвасси çинђен калаççӗ).

**Раштав уйăхӗ**—Çулталăкăн XII-мӗш уйăхӗ—Теккапӗр.

**Расхут**—Тăкак.

**Рассă**—хран.—Пĕтĕм етем йăхĕ 5 рассă пулса тăрать: 1) Капкас расси—шурă ÿтлĕ çынсем (вырăссем, нимĕçсем, хрантсуссем т. ы.); 2) Монкол расси—сарă ÿтлĕ çынсем (тутарсем, киттайсем, чăвашшем т. ы.); 3) Некăр расси—хура ÿтлĕ çынсем (некăрсем, пушменсем т. ы.); 4) Иньи расси—хĕрлĕ ÿтлĕ çынсем (америккăри интейтсăсем); 5) Малай расси—Малай утравĕсем çинче пурăнакансем. Кашни рассă темиçе йăх, ăру, халăх пулса тăрать. Рассă—етем опчĕствин ÿтпÿ паллисемпе уйрăм тăракан пайĕ.

**Расверскă**—Совет правиттĕлстви 1918—21 çулсенче хресченсенчен наттурăпа пухакан налок йачĕ: йалти халăх хăй валли шăп кирлĕ таран анчах хăварса, пур ытлашшине тырра хыснана памалла пулнă.

**Р.К.П.**—Раççей Комунисĕсен (польшевиксен) Парттийĕ.

**Р.Х.С.К.Р.**—Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликки (РСФСР).

**Р.Ç.Л.К.С.—(РЛКСМ)**—Раççейри Çамрăксен Ленинăн Комунисла Сойусĕ, комсомол.

**Рамă (рамккă)**—Карттинсене, тĕрлĕ хут таврашне, тĕкĕрсене илемлĕ курăнмашкăн кÿртсе лартмалли стан; чÿречe, кантăк рамкки—кантăка кÿртсе лартма ыралачă стан.

**Район**—хран.—Мĕнпе те пулин ытти çĕрсенчен уйрăлса тăракан оплăç, окрăк.

**Рынăк**—1) Сутуилÿ тăвакан вырăн, пасар. 2) Сутуилÿ.

**Реакси**—лат.—2) Химире—темиçе йапала пĕрлешнипе урăх тĕрлĕ йапала пулни. 2) Политтиккăра—револютси панă ирĕксене пĕтерсе, кивĕ, йурами п... кесем туни; консерватив...тивлă, кивĕ йĕркесемпе пурăнашшăн ăрăшакан парттисем, 3) органисăм вăйлă ĕ... хыççăн сасартăк вăй пĕтсе ларни

**Реалисатси**—хран.—Пěр-пěр йапалана паллă, пурне те курăнакан, пур те пěлекен туни, пурăнăçа кўртни.

**Реалисăм**—хран.—1) Литтераттурăпа искусствăра тěпђене, йе çынсене тěрěс çырса кăтартни. 2) Пурăнăçра—пурăнăç йавленисем çине хăйуллă, тěрěс пăхса, вěсене тўрлетме ђăн, вырăна кўртме пур майсем шырани.

**Рекистраттăр**—лат.—Рекистратсилекен çын. Кěнђелерсенђе—хутсене йěркелесе çырса пыракан.

**Рекистратси**—лат.——Тěрěслесе йěркипе çырса тухни.

**Реккоментатси**—хран.—Пěр-пěр йапалана, çынна, йе урăх мěне те пулин ырласа, лайăх йенěсене кăтартса çырса пани, йе ахаљ каласа кăтартни.

**Ректăр**—лат.—Аслă шкулсенђе—шкула пăхса тăракан пуçлăх.

**Рекламă**—хран.—Пěр-пěр ěç, йе йапала, йе çын çинђен ытлашши мухтаса, пурне те çавăн çинђен пěлтерме тăрăшни, пěлтермелли майсем.

**Рекламěнт**—лат.—Пуху хăй ларăвěсене йěркелес тесе çырнă, йе ахаљ йышăннă пăравěлăсем.

**Рекрес**—лат.—Кайалла ђакни, ěç ăнса пынă çěртен ђарăнса кайалла ђакма тытăнни.

**Реквиçитси**—лат.—Тěрлě йапаласене саккун тăрăх хакне тўлесе ирěксěр туртса илни.

**Рехверат**—лат.—Мěнле те пулин ыйту çинђен тěплě тунă токлат.

**Рехвормă**—лат.—Тěп саккунсене тивмесěр улшăнусем туни.

**Реппуттатси**—хран.—Уђрештени, йе çын çинђен ытти çынсем хушшинђе сарăлнă йат.

**Реппеттитси**—лат.—Пйессăна, йе контсертсене лартма хатĕрленнĕ ђух—малтан, вĕренмелле, выђаса пăхни.

**Репперттуар**—хран.—Пĕр çесонра лартакан, йе пĕр актŏр выђакан пйессăсем.

**Репреççи**—хран.—1) Хăратмалла, хăрушă йĕркесем; 2) Хытă айăплани.

**Ретактăр**—лат.—1) Хаçат-шурналсен, йе урăх вăхăтран-вăхăтран тухса тăракан хутсен ретаксине пăхса тăракан, вĕсемшĕн ответ тытакан. 2) Урăх çын çырнă йапаласене, тĕп шухăшĕсене улăштармасăр, тŷрлетекен.

**Ретакси**—лат.—1) Çырнă йапалана тĕп шухăшĕсене улăштармасăр тŷрлетес ĕç; 2) Кĕнеке-хаçат кăларакан уђрештенин кĕнеке-хаçата кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен çынсем. 3) Кĕнеке-хаçат кăларас тĕлĕшпе ĕçлекенсен кĕнђелерĕ, ĕçпŷлĕмĕ.

**Ретсептă**—лат.—Тухтăрсем емелсене мĕнле тăвасси çинђен çырса панă хут.

**Решиççор**—хран.—Сђенă çинђе пйессăна лартнă ђух астуса, кăтартса, ытти арттиссене йертсе пыракан.

**Решим**—хран.—1) Патшалăх управленин характĕрĕ, йĕрки. 2) Уђрештенисенђе, йе ахађ пурăнăçра кам та пулин хушнипе тăвакан пăравĕлăсем.

**Респупликкă**—лат.—1) Халăх суйласа лартнă çынсем патшалăх ĕçне туса тăракан йĕрке, йе çавăн пек йĕркеллĕ патшалăх. Пуршуаллă респупликкă—конститтутси тăрăх халăх претставиттĕлĕсем тытса тăракан, ђăннипе, ĕçре пур патшалăх управлени пуршуаçи аллинђе тăракан респупликкă (Хранси). Темократтиллĕ респупликкă—патшалăх управленийĕ темократсен аллинђе шутланакан рес-

пуликкӑ; ђӑннипе унта та пӗтӗм влаç пуршуаçи майлӑ çынсен аллинђе (Швейтсари). Канаш респупликки—мӗн пур влаç ӗçлекенсен аллинђе пулса тӑракан, ђухӑнсен, ӗçлекенсен ирӗкпе туса тӑракан респупликкӑ (Раççей, Украйнӑ).

**Реставратси**—лат.—1) Çӗнетни, пӑсӑлнӑ, йе ваннӑ пайсене çӗнӗрен ӗлӗкхи пекех туса хуни; 2) Пӗрре кӑларса пӑрахнӑ патша йӑхне тепӗр хут патшана кӳртни.

**Ресољутси**—лат.—1) Йышӑнӑç, постановлени; пуху йышӑннӑ шухӑшшене кӗскей каласа хуни. 2) пӗр-пӗр ӗç синђен пуçлӑхсем ӗçе мӗнле тӑвасси çинђен хут çине çырса пани.

**Реçервӑ**—хран.—Сạппас, хатӗр.

**Реçӳме**—хран.—1) Пысӑк шухӑша, йе темиçе çын шухӑшӗсене пӗрлештерсе кӗскен каласа хуни. 2) тавлашура—хирӗç, йе май каланисене тӗплесе кӗскен, татӑклӑ каласа пани. 3) Йулашки, татӑклӑ сӑмах.

**Реçинӑ**—лат.—Кауђђук йывӑçӗн сухӑрӗ, тӗрлӗ йапаласем тунӑ çӗре кайаҭ.

**Релики**—лат.—Тӗн, турӑсене ӗненни, ӗненес, кӗлтӑвас йӗркесемпе йӑласем. Тӗнђере темӗскер, çын пӗлмен, тӗнђене тытса тӑракан вӑй—турӑ—пур тесе шухӑшлави; çав шухӑшшем тӑрӑх тӗрлӗ турӑсене кӗлтумалли йӗркесем.

**Релссӑ**—анк.—Ђукунçул çинђе çул тӑрӑшшӗпе урапасем ваљљи хурса тухнӑ тимӗрсем.

**Ремесле**—Ал ӑсталӑхӗ.

**Ренекат**—лат.—Ӗлӗкхи хӑй тӗнне, хӑй ӗненӳне, ӗлӗкхи хӑй шухӑшӗсене пӑрахса урӑх тӗрлӗ шухӑшлама тытӑннӑ çын.

**Ревисор**—лат.—Мӗнле те пулин ӳђрештенисен ӗçне ревиçилеме хушнӑ çын.

**Ревиçи**—лат.—Тĕрĕслени; пĕр-пĕр учрештени мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе пăхса тухни.

**Ревматтисăм**—хран.—Шăмă сыпписене ыраттаракан чир, час тӳрленмест, шăннăран пулаҫ.

**Револютси**—лат.—Халиччен пусмăрлăхра пурăннă çынсем харăс тăрса, вăйча, вăрçăпа патшалăх ирĕкне хăйсен аллине туртса илни. Политтиккă револютси—политтиккă тĕлĕшĕнчен анчах револютси туса влаçа анчах алла илни. Сотсиалла револютси—влаçа анчах мар, улпут-хуçасен мулĕсене те туртса илсе, ĕçлекенсен аллине паракан револютси. Хрансири аслă револ.—Хрансире 1789 çулта пуçланса кайнă револютси: каппитталисăм вăйлăланса çитсе, пуршуаçи хеоталисăма çĕмĕрме тытăннине пĕлтерет. Раççейри Хевраль рев.—Раççейре 1917-мĕш çулта патшана кăларса пăрахни. Хевраль револютси хыççăн влаç пуршуаçи аллине лекнĕ. Октяпĕрти револютси—Раççейре 1917-мĕш çулăн Октяпĕр (Йупа) уйăхĕнче пулнă револютси: ĕçлекенсемпе хресченсем хевральре пуршуаçи улталанине сиссе, комуниссен партти йертсе пынипе мĕн пур ирĕке хăйсен аллине çавăрса илнĕ те, Совет влаçĕ туса хунă.

**Револютсионер**—хран.—Револютсишĕн тăрăшакан, ĕçлекен.

**Револвер**—анк.—Кĕске, кăсйара чиксе çӳремелле, темиçе патронлă пăшал.

**Реорканисатси**—лат.—Пăсса çĕнĕрен туни.

**Риккошшет**—Пăшалпа, йе тупăпа персен пульă, йе йетре çĕре лексе тепĕр йеннелле сиксе кайни.

**Рихмă**—Сăвăсенче (çтихxотворенисенче) йĕркесем илемлĕн, пĕр сасăллă илтĕнни, сăмахăн мусăкĕ.

**Рис**—Шурă кĕрпе тăвакан тырă: пуринђен ытла Китайна Йаппоњире акса тăваççĕ.

**Роль**—хран. 1) Пйессăн пĕр акťор выђакан пайĕ. 2) пĕр-пĕр йавлени ытти йавленисем хушшинђе тăракан вырăн, унăн вăйлăхĕ.

**Роман**—хран.—Илемлĕ литтераттурăра-пурăнăçа тĕрлĕ йенђен кăтартакан, анђах тĕп шухăшĕ йурату çинђе тытăнса тăракан происветени.

**Романттисăм**—хран.—1) Литтераттурă историйĕнђе—кивĕ, суйа клаççитсисăмпа кĕрешше, шухăша, ханттаçине ирĕк парса, халăх пурăнăçĕ çинђен çырма тăрăшнă вăхăт. 2) Шухăшпа таçта çĕкленсе кайса, çук йапаласем çинђен шухăшлани.

**Ройаль**—хран.—Хĕлĕхлĕ, клавишлă пысăк мусăк инструменђĕ.

## В.

**Ваккансçи**—лат.—Уђрештенире-çынпа йышăнман ĕç вырăнĕ.

**Ваксал**—анк.—Ђукунçул çинђе кайансўрен çынсем пойăссене кĕтмелли çурт, стантсă çурђĕ.

**Ваксă**—ним.—Сăранран тунă йапаласене тасатмалли маç.

**Ваттерппас**—анк.—Тўрĕ çисем тўрем выртнине сăнаса пĕлмелли хатĕр.

**Ваçелин**—лат.—Нехтăран тасатса тунă, ĕне çу манерлĕ çемçе йапала; тĕрлĕ емелсем тунă çĕре, йе пите сĕрме кайаť.

**Валешник**—выр.—Çилпе, йе çĕрсе ўкнĕ, çĕрте выртакан йăвăç, турат-тĕрет.

**Валюттă**—ит.—1) Векçĕл хакĕ. 2) Патшалăхăн укçа çистемĕ. 3) Патшалăхăн хаклă хуђĕсен (векçĕлсен, хут ук-

çасен, опликатсисен) хакне вĕсемшĕн пиршăра паракан хаксемпе танлаштарни.

**Ваннă**—хран.—Пӳртре шыва кĕмелли ҭăсмака (шан йевĕрлĕ) савăт.

**Вулккан**—Вутлă-хĕмлĕ сăрт; çĕр варринҭе сунса вĕресе тăракан йапаласем (лавă) çĕр çине шăтарса тухакан вырăн.

**Вывĕскă**—Шалта мĕн пурри çинҭен иртен-çӳрене пĕлтерме туса пӳрт-сурт çумне çапнă çырулă хăма.

**Векçĕл**—ним.—Кивçен илнĕ укçана вăхăтра тӳлетĕп тесе алă пусса панă хут.

**Ветамăç**—1) Пулнă, йе пулас тăкаксене шутласа çырнă хут. 2) Валеççе памалли йапаласене, йе укçасене кама мĕнҭул тивнине шутласа çырнă хут.

**Веттеринари**—лат.—Выҭăх-ҭĕрлĕх ҭирĕсене тӳрлетес ĕçре кирлĕ пĕлӳсем.

**Веттеринар**—Выҭăх-ҭĕрлĕх ҭирĕсене тӳрлетекен тухтăр.

**Венă**—лат.—Тир витĕр кăваккăн курăнса тăракан йун тымарĕсем. Венăсем тăрăх ӳтпӳре ĕçлесе йурами пулнă йун кайалла ӳпкесене ҭупаť, ӳпкесенҭе сывлăшпа çĕнелсен артерисем (сăмаха пăх) тăрăх пĕтĕм ӳтпĕве сарăлаť.

**Венерă**—лат.—Хĕвел тавра çаврăнакан шалти планеттăсенҭен пĕри; пĕлĕт çинҭе йе каçпала (хĕвел анăçĕнҭе), йе ирпеле (хĕвел тухăçĕнҭе) çап сутă çăлтăр пек курăнаť.

**Венкри**—Тунай шывĕ тăрăх выртакан патшалăх, вăрçăҭҭен Австрипе пĕрле Австро-Венкри патшалăхĕ пулса тăнă. Вăрçă пĕтсен пулнă револютси Венкрире Канаш влаçĕ тетунă, анҭах правиттĕлствăна кĕнĕ меншевиксем пуршуаçи майлă пулнăран,—Канаш респупликкине ҭасах Румиҭи çарĕсене ҭĕнсе пырса çĕмĕрсе тăкнă.

**Венттиљаттăр**—лат.—Пӳрте таса сывлăш кӳртме тунă шăтăк.

**Верстак**—ним.—Йăвăç каскаласа саваламалли вăрăм сĕтел, стан.

**Версаљ**—Пăриш çывăхĕнђи хула: ĕлĕк Хранси патши пурăннă вырăн.

**Версаљ килĕшĕвĕ**—Кермаљипе ăна çĕнтерекен патшалăхсем 1920-мĕш çулта тунă килĕшӳ: вăл килĕшӳ тăрăх Кермаљине пĕтĕмпех çаратса пĕтернĕ, ђăтмалла мар контрипутси тӳлемелле тунă.

**Вилоçиппет**—лат.—Икĕ кускăçлă, çăмăл, утланса ларса ура вăййĕпе ђуптаракан урапа.

**Винт**—1) Пăрса кӳртмелли пăта. 2) Кайккă пăрса кӳртмелле кастарнă тимĕр-патак.

**Винттовкă**—Кĕпçе шăтăкне винт майлă кастарнă пăшал; салтак пăшалĕ.

**Винократ**—Кăнтăрла йĕнђĕ ӳсекен ĕрех çырли.

**Вçаткă**—1) Ђинлă çынсем пĕр-пĕр саккуна хирĕç пыракан ĕçе туса панăшăн вăрттăн йапала (укçа) илни; 2) çавăн пек ĕçшĕн паракан йе илекен йапала (укçа).

**Влаç**—1) ирĕк. Канаш (Совет) влаçĕ—Канаш (Совет) ирĕкĕ; патша влаçĕ—патша ирĕкĕ. 2) Тӳре-шара, правиттĕлствă.

**Вйушкă**—Кăмака мăрйине питĕрмелли ђукăн, йĕ тимĕр питлĕх.

**Вохрă**—крек.—Урайсем сăрлакан сарă краскă.

**Воторот**—Шывамăшĕ: тĕссĕр, шăршăсăр, тутăсăр питĕ çăмăл кас, елемент, питĕ хытă çунаĭ, йӳçамăшпе (кислоротпа) химилле хутшăнсан шыв пулаĭ. Хими палли—Н=(аш).

## Й.

**Йакăр**—Карапсем, пăрахутсем пĕр вырăнта тăнă ђух шыв тĕпĕнђи çĕртен çакланмалли çекĕл.

**Йађђейккă**—Ђи пĕђĕк орканисăм. РКП, йе Р.Ç.Л.К.С. йађђейкки—РКП-н, йе Р.Ç.Л.К.С-н пĕр-пĕр уђрештенири, йалти. савăтри пĕђĕк орканисатсийĕ.

**Йаппоњи**—Хĕвел тухăç йенђи вăйлă патшалăх. Йулашки çулсенђе Йаппоњире каппитталисăм питĕ хăвăрт вăйлăланса пынипе Йаппоњи Йевроппăри аслă патшалăхсемпе танлашнă.

**Йаçли**—Пĕђĕк ађасене ашшĕ-амăшĕ пĕр-пĕр ĕçе кайсан пăхакан çурт.

**Йанвар**—лат.—Çулталăкăн 1-мĕш уйăхĕ, Кăрлађ уйăхĕ.

**Йараплан**—крек.—Сывлăш тăрăх вĕççе çÿремелли машшин.

**Йарлăк**—тут.—Йапала çумне унăн йăвăрăшне, шутне, йе урăх мĕнле те пулин паллисене çырса çыпăçтаракан хут.

**Йармăкка**—ним.—Сайра хутран анђах (çулталăкра 1-2) пулакан питĕ вăйлă, инçетрен çын пухăнакан пасар.

**Йупилей**—лат.—Мĕнле те пулин сопыҭҭи пулни çавăнђул çул тулнине ăсăнса тăвакан праçнăк.

**Йуститси**—лат.—Тÿрĕсут. Сут ĕçне пăхса тăракан оркăнсем.

**Йетиницсă**—1) Пĕррене пĕлтерекен ђихвăр. 2) ытти пĕр пек йапаласен ушкăнĕнђен ăрасна илнĕ йапала, штуккă.

**Йетре**—Тупăсенђен перекен, пысăк пуђă.

**Йевроппă**—Тĕнђĕн 5 пайĕнђен пĕри; Йевроппă ђиккисем: кăнтăрлара—Хура тинĕс, Çĕрварри тинĕсĕ; хĕвеланăçĕнђе—Атланттик оккеанĕ; çурçĕрте—Çурçĕрти пăрлă оккеан; хĕвел тухăçĕнђе—Урал сăрђĕ, Урал шывĕ.

## О.

**Оаҫис—крек.**—Нимскер ҫук пушă хирте уйрăм вырта-кан, йăвăҫ-курăк ӳсме пултаракан вырăн.

**Оккупатси—лат.**—Йут патшалăх ҫĕрне ҫавăрса илни.

**Оккеан—крек.** Ҫĕр ђăмăрĕ ҫинђи тип ҫĕре 5 пайа уйă-ракан питĕ пысăк, вĕҫĕ-хĕррисĕр тинĕссем. Ҫĕр ҫинђе 5 оккеан: 1) Ҫурҫĕрти пăрлă оккеан; 2) Кăнтăрлари пăрлă оккеан; 3) Аслă, лăпкă оккеан 4) Атлантгтик оккеанĕ; 5) Инĭи оккеанĕ.

**Окĭапĕр**—лат.—Ҫулталăкăн Х-мĕш уйăхĕ—Йупа уйăхĕ.

**Окĭапĕрти револютси**—1917-мĕш ҫулăн Окĭапĕр уйăхĕнђе пулнă револютси: ĕҫлекенсемпе хресђенсем, салтаксем пуршуаҫи правиттĕлствине хăваласа йарса халђен тĕнђере пулман влаҫ, ĕҫлекен халăхăн тиктăттурĕ, Совет Респупликки туса хунă.

**Окĭаприссем**—1905 ҫулăн Окĭапĕрĕн 17-мĕшĕнђе кăларнă маңихвес майлă пуршуаллă политтиккă парттийĕ, халĕ пĕтсе ларнă.

**Оклат**—Шалу; шалу пысăккĕшĕ.

**Оклавлени**—Кĕнекен пайĕсене йĕркипе ҫырса тухса, хăш пайĕ хăш вырăнтан пуҫланнине кăтартни.

**Окрăк**—Пысăк район, темиҫе кĕпĕрне.

**Охвитсиаллă**—лат.—Ĕҫлĕ, служпă ĕҫĕсем тăрăх, ĕҫ йаđĕпе.

**Опăск**—Тытăм уђрешгеннисем хушнипе шанђăксăр ҫын йапалисене тĕрĕслесе пăхса тухни, усрама (тытма) йураман йапаласене шырани.

**Опесаттĕлнă**—Ҫав-ҫавах, кирек мĕнле пулсан та.

**Оппеккă**—Сыхă. Çитĕнмен тăлăхсене пăхса ӳстерме, вĕсен пурлăхне сыхлама саккун тăрăх пĕр-пĕр çывăх çынна хушни.

**Опператси**—лат.—1) Пĕр-пĕр ђире тухтăрсем емелсĕмсĕр (ӳте касса, йун йухтарса, шăм-шака тӳрлетсе лартса т. ы.) тӳрлетни. 2) Çарсен вăрçăри ĕçĕсем; 3) тĕрлĕ уђрештенисен ĕçĕсем, примерпа: сутуилӳ, хинанс, кретитлă т.ы. опператсисем.

**Оппĕрă**—ит.—Театтăрта мусăккăпа пĕрле йурласа выђамалли проиcветени.

**Оппий, оппиум**—лат. Пулса çитмен мăкăњ пуçĕн типĕтнĕ сĕткенĕ: питĕ вăйлă çывратакан наркăмăш, тĕрлĕ емелсем тунă çĕре кайат.

**Оппоçитси**—лат.—1)Хирĕç тăни. 2) парламĕнтра—правиттĕлствăна хирĕç пыракан парттисемпе ушкăнсем.

**Оппоçитсионер**—Оппоçитсинђе тăракан партти ђленĕ; хирĕç тăракан.

**Оппортунис**—Таврари условисене пăхса, вĕсемпе хăй шухăшĕсене килĕштерсе ĕçлеме тăрăшакан, пĕрмай пĕр çулпа пыма пултарайман, принтсипсĕр çын.

**Оппортунисăм**—лат.—Политтиккă ĕçĕсенђе тĕреклĕ принтсипсемсĕр, таврари условисене пăхăнса ĕçлес çистемă; вăл çистемăпа тĕреклĕ прокраммă çук, кирлĕ вăхăтра тăшмансене хирĕç тăма хăйайман парттисем ĕçлеççĕ, пример—меншевиксен парттийĕ.

**Оптиккă**—крек.—Хиçиккăн çутă йавленисемпе вĕсен саккунĕсене астăвакан пайĕ.

**Оптимис**—лат.—Пур çĕрте те лайăххине анђах куракан, кућанма-хуйхăрма пĕлмен çын.

**Оптимисăм**—лат.—1) Пур çĕрте те, пĕтĕм тĕнђипе лайăх йенĕсене анђах астуса пыни; 2) пеççимисăмпа хире-хирĕç тăракан ăнлану.

**Опђĕствă**—Пысăк ушкăн. Етем опђĕстви—пур çĕр çинђе пурăнакан çынсен ушкăнĕ.

**Опстановкă**—1) Пӳртри. пӳлĕмри йапаласем (сĕтелсем, тенкелсем, шкапсем т. ы.). 2) Тăвас ĕçĕн условисем, ĕçе ђăрмантарса, йе малалла йарса тăракан сăлтавсем.

**Опçерваттори**—лат.—Астрономи тĕлĕшĕнђен тĕпђенсе сăнаса пыма тунă уђрештени.

**Оплăç**—Мĕнле те пулин паллăсемпе ытти çĕрсенђен уйрăм тăракан çĕр, район. Ђ ă в а ш  О п л ă ç ĕ—ђăвашсем пурăнакан ахтономиллĕ атминистраттивлă йетинитсă, 1920-мĕш çулта ĕлĕкхи Хусанпа Ђĕмпĕр кĕпĕрнисен уйесĕсенђен пулнă. Тĕп хули—Шупашкар, халăхĕ мĕн пурĕ 752.000 (1923 ç.).

**Опликатси**—лат.—Патшалăх, йе пĕр-пĕр кампанђи укçа кивçен илмешкĕн кăларакан, прођђăн тăрăх услам паракан парăм хуђĕ.

**Опйавлени**—1) Пĕлтерни; 2) хаçатсем, кĕнекесем, шурпалсем çине мĕн çинђен те пулин пĕлтерсе çапни.

**Опйектă**—лат.—Хăй ĕçлекен, шухăшлакан йапала мар, хăй çинђен шухăшлас, ĕçлес йапала, сăмахран авăн çапас ĕçе илсен, кĕлтесем авăн çапас ĕçĕн опйектăсем пулаççĕ.

**Опйективлă**—Никам инттересĕсене пăхмасăр.

**Ответ**—1) Хирĕç калани; 2) Пĕр-пĕр ĕçе йепле туни çинђен аслисем умĕнђе отђот парасси (кунтан: о т в е т л ă—отђот паракан, отђот параймасан айăплă пулаканĕ). 3) Сатађђăсенђе—ыраса тупас йапала (ђисла, сăмах т. ы.).

**Осон**—крек.—Виçаттăмлă йӳçамăшĕ (кислорот), кăвак тĕслĕ, питĕ нумай йапалапа хутшăнма пултаракан кас.

**Оликархи**—крек.—Пĕтĕм влаç нумай мар ђаплă çемйе алинђе тăракан тытăм йĕрки.

**Ораттăр**—лат.—1) Лайăх, ăста, хитре калаçма пĕлекен çын, 2) пĕр-пĕр пухура сăмах калакан.

**Оранкуттан**—малай сăм.—Пысăк, çын майлă упăте: Аçире Суматрăпа Порнео утравсем çинђе пурăнаҫ.

**Орикинал**—лат.—Пĕр-пĕр происветенин пирвайхи, тĕп екçемпљарĕ.

**Орканисатси**—лат.—Пĕрлешӳ, ушкăн, партти; 2) мĕнĕнте пулин пайĕсене йĕркелени, майлаштарни.

**Орканисăм**—лат.—Ђĕрĕ ђун.

**Оркăн**—лат.—1) Орканисăмăн пĕр паллă ĕç туса тăракан пайĕ, сăмахран, çыннăн ӳпкисем, йăвăç-курăкăн çулçисем—сывламалли оркăнсем. 2) Паллă ĕç туса тăмалли оруҫисем, уђрештенисем, хаçат-шурналсем.

**Оркестăр**—крек.—Темиçе тĕрлĕ мусăк инструменђĕсемпе пĕрле выљамашкăн пĕрлешнĕ çынсем.

**Орхвокрахви**—крек.—Тĕрĕс çырасси.

**Орпиттă**—лат.—1) Пĕлĕт çинђи çутă йапаласен çулĕ. 2) Куç лупашки.

**Ортĕн**—лат.—Ђаплă ĕççемшĕн паракан паллă; метал.

**Ортĕр**—хран.—Пĕр-пĕр уђрештени хăйпе пăхăнса тăракана кама та пулин мĕн те пулин пама хушша çырнă хут; йапала илмелли приккас.

**Оватси**—лат.—Питĕ кăмăла кайнине халăх ушкăнĕпе пĕлтерни, кăтартни.

## Респуплёкри Ђăваш Кёнеки Кăларакан Уйрăмăн Шупашкарта Ађапăђа Кёнеки-сем ђăвашла тухрёçё.

1. Кайăкçă Йемел—М. Сибиряка.
2. Макар тёлёкё—Короленко.
3. Кăвак Май—М. Сибиряка.
   Шăпђăк Ђурри—Андерсена.
4. Пёђёк паттăрсем—М. П. Петрова.
   Çўревçё шапа—В. Гаршина
5. Çеçпёл (З йлă халлап)
6. Хуйхă—А. Чехова.
   Нăрă Вађукё—его же.
7. Тăватă кун...—В. Гаршина.
8. Пёр мушик пёђђен икё кёнерала тăрантарса усрани çинђен—С. Щедрина
   Ăслă ырашпётри—его же.
9. Хăравçă Пађђа, Хула тулашёнђе, Тёттёмлёх пётерет } А. Чехова
10. Упа çинђен.
11. Шартлама Сивё—Короленко.
12. Выçлăх çулсем—Ђёкеç Ç.

---

С требованиями обращаться по адресу: гор. Чебоксары ЧАО. Госиздат.

---

Книжка набрана учениками школы Фабзавуча типографии Чувашгосиздата. под наблюдением метранпажа В. П. Кульнова.